

# ЯЛАВ

№ 9 СЕНТЯБРЬ 1954



# ШКУЛА

*Ф. Лукин* музыки *А. Алга* сăвви




Хаваслăн, савăнăçлăн иртрĕ
Вăрмансенче, хирте çулла.
Сисмерĕмĕр—сентябрь çитрĕ,
Пире вăл йыхăрать шкула.

Пире чĕнет вăл: килĕр, килĕр!
Шкул аслă, класĕсем таса.
Кунта кĕрсе нумай ăс илĕр,
Вĕренĕр пурте тăрăшса.

Туслаштăр ăспала ăсталăх,
Вăл кирлĕ хулана, яла...
Тăван çĕршыв, юратнă халăх
Çавна сунать пире ялан.

ЖУРНАЛ ХУПЛАШКИН ПЕРРЕМĔШ СТРАНИЦИНЧЕ: Шупашкарти 4-мĕш номерлĕ вăтам шкулти Чăваш АССР шкулĕн тава тивĕçлĕ учительници Зоя Васильевна Петрова.

М. Егоров фотоÿкерчĕкĕ.

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ ЭКЗЕМПЛЯР



# ХАЛĂХ УНИВЕРСИТЕЧĔ

## ПЫСĂК УЯВ

Августăн пĕрремĕшĕнче Мускавра пысăк уяв пуçланчĕ: Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставки уçăлчĕ. Вăл пĕр куна çеç пыракан уяв мар, выставкăра кашни кун уяв, кашни кун унта çав тери халăх нумай. Тен, вĕçĕ те пулмасть пулĕ ку уявăн. Миçе хут кайса килмерĕм выставкăна, кашни каймассерен кăмăл уяври пек çĕкленет, выставкăран тухса каяс килмест.

Выставка курма кайнă чухнех, çул çинчех, чĕре темле халиччен курманнине курас пек хăвăрт тапма пуçлать. Автобус е троллейбус выставкăна каякан урамсене кĕрсенех, уяв пуçланнăн туйăнать: çуртсене пурне те çĕнĕрен сăрланă, вĕсем тап-таса. Хунар юписем çинче хĕрлĕ ялавсем вĕлкĕшеççĕ, кашнин çинче— выставка эмблемисем; троллейбуссем çÿреме урам урлă карнă тимĕр пралуксем çинче çул тăршшĕпех ылттăн ярапаллă хĕрлĕ пуставсем çилпе хумханса тăраççĕ, кашни çине тăвата саспалли çырнă: «ВСХВ». Выставка енне урам тулли автобуссем, троллейбуссем, таксисем, тĕрлĕ автомобильсем чупаççĕ. Машинăсем çинче лăк тулли çын.

Автобус çинче ларса пыракансем яланхи пек хыттăн калаçмаççĕ, пĕр-пĕринпе пăшăлтатса, пĕрмай малалла пăхаççĕ. Машина светофор умĕнче чарăнсан, пăшăрханма пуçлаççĕ: автобус яланхинчен хăвăртрах чупать пулсан та, ерипен кайнăн туйăнать. Хăвăртрах çитес килет-çке!

Акă выставкăн Тĕп павильонĕ тăрринчи ылттăн шпиль курăнса кайрĕ, кăшт кайсан, иккĕмĕш хучĕ те курăнчĕ. Автобус аллейăна кĕрсе кайрĕ те, сулахая пăрăнса, хуллен чарăнчĕ. Акă, выставка умĕнчи анлă площадьпе выставкăн Тĕп хапхи. Çынсем, автобусран тухсан, пĕр самант чарăнса тăраççĕ. Пуçласа Мускава килнисене çеç мар, ĕмĕр Мускавра пурăннă çынсене те тĕлĕнтерет ку картина.

Выставкăн Тĕп хапхи—темиçе хушăллă чул арка, ун тăрринче тракториспа колхозница скульптурисем ылттăн тулă кĕлти çĕклесе тăраççĕ. Арка умĕнче икĕ енче тем çÿлĕш çинçе те шапшурă чугун юпасем çинче Совет Союзĕн анлă ялавĕсем вăраххăн хумханаççĕ, вĕсен çумĕнче, выставкăн хÿми тăршшĕпех,—сулахайра та, сылтăмра та,—кăшт çинçерех те лутрарах юпасем çинче Совет Союзне кĕрекен вунултă республика ялавĕсем вĕлкĕшеççĕ. Çак ялавсем чуна çĕклесех яраççĕ.

Площадьре темиçе пин халăх. Хĕвел хĕртнине, çумăр çунине пăхмасăр, билет илме черет тăрса тухнă. Мускав çыннисемсĕр пуçне, выставкăна кашни кун колхозсенчен, совхозсенчен, МТС-сенчен вунултшар-вунсакăршар пин экскурсант курма пырать. Ку сахал, тата ют çĕршывсенчен мĕн чухлĕ çын килет! Выставка уçăлнăранпа çур уйăх хушшинче 45 государствăран 155 делегаци килнĕ. 20 кун хушшинче выставка курма 1 500 000 çын пынă.

## ПУРНĂÇ ИЛЕМĔ

Выставка вăрăм та сарлака Фонтан аллейинчен пуçланать. Аллея варрипе икĕ йĕрке тÿп-тÿрĕ пĕрĕхекен фонтансем кĕмĕл пек йăлтăртатса тăраççĕ. Фонтансем тавра аллея тăршшĕпех чечексем лартса тухнă. Сулахайра та, сылтăмра та тип-тикĕс каснă акаци майлă лутра йывăççем, вунă-вунпилĕк çулхи улмуççисем. Çашнин çинче—хĕреле пуçланă панулмисем. Асфальт сарнă çатма пек яка аллейăсен хĕррипе—пулса çитнĕ тулă тĕсĕпе сăрланă çÿлĕ хунар юписем. Çашни юпа çинче—шурă абажурсем. Аякран вĕсем тулли пучахлă сарă тулă пек курăнаççĕ.

Аллея вĕçĕнче—выставкăн икĕ хутне те çÿлĕ колоннăсемпе çавăрнă Тĕп павильонĕ. Ун çÿлĕш 97 метр, çавăнпа вăл инçетренех курăнать. Павильон умĕнче икĕ скульптура: пĕр енче—В. И. Ленин, тепĕр енче—И. В. Сталин. Выставка курма килнĕ çынсем чи малтан Тĕп павильона кĕреççĕ. Унăн темĕн çÿлĕш залĕсенче Совет Союзĕн историйĕпе паллаштаракан картинăсем, скульптурăсем, барельефсем, диаграммăсем. Тĕп павильонра пирĕн çĕршыври халăхсен социализмла пурнăçшăн кĕрешни, вĕсем халĕ çĕнĕ хăватпа коммунизм патне пыни курăнать.

Тĕп павильонран тухсан, выставкăна пуçласа килекенсем çеç мар, темиçе хут пулнисем те, павильон пусмин картлашкисем çинче чарăнса, нумайччен ытараймасăр пăхса тăраççĕ. Чăнах та, куç алчăрасах каять: юмахра çеç пулма пултарать кун пек илем. Çук, тĕрĕс мар: темле ăста халапçă та çав тĕрлĕ илемлĕ юмах ярса парас çук. Ирĕкре пурăнакан этем—çĕршыв хуçи—пуян Совет Союзĕнчи ĕçчен те талантлă халăхсем анчах халиччен çĕр çинче пулман çакнашкал ытарма çук илем тума пултарнă. Ку—Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин варри—Колхозсен площачĕ.

Вунă гектар ытла йышăнать çак ытарайми площадь. Унăн пĕр хĕрринче, Тĕп павильона хирĕç, 600 тăваткал метр йышăнакан «Халăхсен туслăхĕ» ятлă фонтан. Ку фонтан çинчен сăмахпа каласа пама та хĕн, тĕслĕ кино çеç ун илемне кăтартма пултарĕ.

Сакăр кĕтеслĕ гранитпа пÿлнĕ кÿлĕ варринче çил арманĕ пысăкăш ылттăн пучах ларать. Пучах тавра пирĕн Тăван çĕршыври вунултă союзлă республикăсен ылттăн хĕрĕсем ташлаççĕ. Вĕсем çине пучахран тÿпенелле сирпĕнсе тăракан 1800 шыв пайăрки ÿкет. Нумай шывпа çăвăнакан ылттăн хĕрсем куçа йăмăхтараççĕ. Çук, ку фонтана пăхса тăранаймастăн! Ун тавра ялан лăк тулли халăх. Ватăраххисем фонтан тавра çÿлерех те çÿлерех хăпаракан картлашкасем çинчи саксем çинче лараççĕ, çамрăксемпе ачасем фонтан тавра çÿреççĕ. Пĕр енчен пăхса тăраççĕ те, тепĕр енне кайса пăхаççĕ, çаплах пăхса тăранаймаççĕ.

Фонтан шывĕн пайăркисем витĕр союзлă республикăсен, облаçсен, крайсен павильонĕсем курăнаççĕ. Кашни павильон—ытарма çук дворец, пĕринчен тепри илемлĕ, кашнин хăйĕн илемĕ. Акă сулахайра Казах республикин тÿпеттей еврĕлĕ кĕленче куполлă павильонĕ йăлтăртатса ларать, ăна хирĕç, сылтăмра, Узбек республикин темиçе çинçе те çÿлĕ колоннăллă павильонĕ. Павильонăн икĕ енче сарлака пĕвесем урлă шыв тапса тăрать. Тĕп павильона тĕлме-тĕл, хĕвеланăç енче, Украина, ăна хирĕç, сулахайра,—Белорусси павильонĕсем. Колхозсен площадĕнче пурĕ 29 павильон.

«Халăхсен туслăхĕ» фонтанăн хĕвеланăçнелле татах вунултă фонтан. Вĕсен вĕçĕнче, Украина павильонĕ умĕнче, «Чул чечек» ятлă Урал тăвĕнчи хаклă чулсенчен купаласа тунă тепĕр пысăк фонтан. Ун тавра та ялан халăх нумай. Шыв пайăркисем витĕр курăнакан симĕс те кăвак, хĕрлĕ те сенкер чулсем çине пăхса тăнă чух Урал писателĕ Бажов çырнă

*Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!*

# ЯЛАВ

№ 9 (105)
СЕНТЯБРЬ
1954

ЧĂВАШ СОВЕТ ПИСАТЕЛĔСЕН СОЮЗĔ УЙĂХРА ПĔРРЕ КĂЛАРАКАН
ИЛЕМЛĔ ЛИТЕРАТУРĂПА ОБЩЕСТВĂЛЛА-ПОЛИТИКĂЛЛА ЖУРНАЛ

хитре юмахсем аса килеççĕ. Мĕнле-мĕнле мул çук çав пирĕн Тăван çĕршывăн!

Выставкăн иккĕмĕш илемлĕ архитектура центрĕ — сакăр кĕтеслĕ Механизаци площачĕ. Ун варринче—гранитпа пўлнĕ çавраха пысăк кўлĕ. Анчах кунта фонтан тавраш҆ĕ çук. Лăпкă çанталăкра вăл темĕн пысăкăш тĕкĕр пек тип-тикĕс çуталса выртать. Унăн шывĕ çинче кўлĕ тавра ларса тухнă «Çĕрĕç», «Выльăх ĕрчетес ĕç», «Тĕштырă», «Совхозсем» ятлă павильонсемпе выставкăри чи пысăк çурт — «Ялхуçалăхĕнчи механизаципе электрификаци» павильонĕн сăнĕсем курăнаççĕ.

Икĕ площадьри татă вĕсем хушшинчи урамри павильонсемсĕр пуçне, выставкăра татах темĕн чухлĕ павильон. Пурĕ унта 76 павильон: союзлă республикăсен — 16, зонăсен павильонĕсемпе автономиллĕ республикăсен—12, тĕрлĕ отраслĕсен павильонĕсен—47. Павильонсемсĕр пуçне, татах 291 çурт: театрсем, киносем, столовăйсемпе ресторансем, кĕнеке тата ытти тавар сутакан магазинсем, выставка администрацийĕн çурчĕсем т. ыт. те. Пурне те вĕсене, совет çыннисем юратса, савăнса пăхма, илемлĕ тунă. 500 архитектор, 300 инженер-конструктор, 450 инженер-строитель, 4200 художник, скульптор, график тата ытти оформительсем ĕçленĕ выставка тунă çĕрте. Вĕсен ĕçĕсене СССР Архитектура академийĕпе Художество академийĕн юри организациленĕ совечĕсем ертсе пынă. Çавăнпа та ĕнтĕ выставка территорийĕнчи пысăк павильонсемпе çуртсем анчах мар, кашни пĕчĕк çурт, кашни киоск хăйĕн илемĕпе чĕрене хумхантарать, чуна савăнтарать.

## СОВЕТ СОЮЗĔ ТĂРĂХ ÇУРАН

Выставкăна тул енчен пăхнă чух пире Совет Союзĕнчи архитекторсемпе строительсен, скульпторсен ăсталăхĕ тĕлĕнтерет: вĕсем этем пурнăçне мĕнле илемлетме пултараççĕ иккен. Выставкăри экспонатсене пăхса çўренĕ чух Тăван çĕршыври ялхуçалăхĕнче ĕçлекенсем — колхозниксемпе колхозницăсем, бригадирсем, колхоз председателĕсем, агрономсем, зоотехниксем, совхозсенчи работниксем, ялхуçалăхĕнче ĕçлекен ученăйсем, ялхуçалăхне механизацилекенсем тĕлĕнтереççĕ. Мĕнле çимĕç кăна акса ўстермеççĕ вĕсем!

Ăçта-ăçта çитсе курмастăн выставкăра çўренĕ чух: РСФСР-ти автономиллĕ республикăсенче, вĕçĕ-хĕррисĕр Çĕпĕрте, виçĕ пин километр тăсăлакан Уралта, Çурçĕр Кавказра, Кубаньре, Атăлпа Кама, Лăпкă Дон тавраш҆ĕсенче, Центрти облаçсенче, Казахстан çеçенхирĕсенче, шурă тăрăллă Кавказ тăвĕсен айлăмĕсенче, Балтика тинĕсĕпе Хура тинĕс, Çурçĕрти Пăрлă океанпа Лăпкă океан хĕррисенче, Карел-Финн вăрманĕсенче, Молдавинчи иçĕм çырлипе панулми сачĕсенче, Таджикистанпа Узбекистанри çĕр мамăк хирĕсенче, Белоруссинче, Украинăри ылттăн тулă хумханакан, сахăр кăшманĕ ўсекен хирсенче пулатăн. Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви ертсе пынипе çĕкленнĕ Тăван çĕршывăн ялхуçалăхĕ ал тупанĕ çинчи пек курăнать. Чăнах та, выставкăра чух Совет Союзĕ тăрăх çуран çўренĕ пекех туйăнать. Кунта кашни союзлă, кашни автономиллĕ республика, кашни облаçпа кашни край хăйсен çĕрĕ çинче мĕн акса ўстерме пултарнă, çавна йăлтах кăтартнă. Кашни павильонра, совет çыннисен ĕçченлĕхĕ, ăсталăхĕ, Тăван çĕршывăн пуянлăхне ўстернĕçемĕн ўстерме тăрăшни, вĕсен патриотла пысăк туйăмĕ палăрать. Выставкăна 3 911 колхоз, 1 306 совхоз, 419 МТС тата специализациленĕ станцисем, 534 наукăпа тĕпчев станцийĕсемпе опыт тăвакан учрежденисем, 134 вĕренў заведенийĕ, 2 302 шкул, çамрăк натуралистсен станцийĕсемпе кружокĕсем, 2 027 тĕрлĕ учрежденисемпе организацисем хутшăннă; ялхуçалăхĕнчи малта пыракансемпе организаторсем выставкăра 154 916 çын. Вĕсем çинчен кĕскен каласа парас пулсан та, хулăн кĕнеке çырма тивет, тĕплĕн калас тесен, темиçе том кĕнеке çырма кирлĕ. Пурăна-киле çыраççĕ те пулĕ-ха. Çырма та тивĕç, мĕншĕн тесен выставкăра кăтартнă ялхуçалăх çитĕнĕвĕсем çинчен кашни колхозникăн, кашни бригадирпа колхоз председателĕн, агрономăн, зоотехникăн, кашни МТС, совхоз работникĕн пĕлмелле. Малта пыракан колхозсемпе совхозсен, МТС-сен çитĕнĕвĕсем кая юлса пыракансене мала кайма пулăшĕç. Çавăнпа та ĕнтĕ выставкăна кашни кун колхозсенчен, совхозсенчен, МТС-сенчен экскурсантсем çав тери нумай пыраççĕ. Ялхуçалăхĕнче малта пыракансем — председательсем, бригадирсем, агрономсем, дояркăсем, выльăх-чĕрлĕх пăхакансем — кашни кун выставкăра хăйсен опычĕсем çинчен экскурсантсене докладсем туса пaраççĕ, экскурсантсемпе канашлусем тăва-тăва ирттереççĕ. Акă август уйăхĕн малтанхи кунĕсенче пирĕн республикăри Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Социализмла Ĕç Геройĕ С. К. Коротков хăйсен колхозĕнче пĕр гектартан 35,6 центнер тулă мĕнле пухса илни çинчен экскурсантсене доклад туса пачĕ.

Выставкăра ялхуçалăх культурисене акса ўстернĕ уйсем те нумай. 260 тĕрлĕ культура ўсет çав уйсенче. Пахча çимĕç культурисенех илер. Унта 359 сортлă 63 культура. Миçе сорт сухан, чĕкĕнтĕр, çĕрулми, купăста, помидор тата ытти пахча çимĕç çук унта. Çавăнтах пахча çимĕçсене лартмалли, пухса кĕмелли машинăсем те пур. Экскурсоводсем выставка курма пынă çынсене кашни культурăна мĕнле акса тумалли çинчен тĕплĕн ăнлантарса параççĕ.

Тырпул акнă уйсенче мĕн чухлĕ культура ўсет. Мĕнле сорт тулă, сĕлĕ, урпа, ыраш, кантăр, йĕтĕн, пăрса, ясмăк, хуратул, вир çук унта! Экспонатлăх акнă культурăсем 25,2 гектар йышăнаççĕ.



Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкинчи Чăваш республикин стенчĕ патĕнче.

Р. Велинжанин фотоўкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Акă, выльăх-чĕрлĕх «хули». Вăл 40 гектар йышăнать, унта 69 павильон. Çав павильонсенче 700 пуç ытла мăйракаллă шултра выльăх, 850 пуçа яхăн сурăхпа качака, 320 пуç сысна, 130 лаша, 3 000 ытла чăх, хур, кăркка, кăвакал. Çавăнтах çу завочĕсем, комбикорм тăвакан заводсем ĕçлеççĕ.

Выставкăна нумайăшĕ тĕлĕнмелле сад, теççĕ. Вăл тĕрĕс те пулĕ. Пурĕ выставка 207 гектар йышăнать, вĕсенчен 101 гектарне тĕрлĕ йывăçсем йышăннă. Павильонсем тавраш҆не 40 пин тĕп, вĕсенчен 5 500 тĕп çимĕç йывăçĕсем, 450 пин лутра йывăç, 400 пин темиçе çул ўсекен чечек, 5 миллиона яхăн пĕр çул ўсекен чечексем лартса ўстернĕ. Сад тенĕрен, Мичурин садне асăнмасăр хăварма çук. Вăл 7 гектар ытла йышăнать. Унта 15 пин ытла панулмипе çырла йывăçĕсем: 176 сорт улмуççи, 32 сорт груша, 48 сорт слива, 46 сорт чие, 20 сорт черешня. Персик, абрикос, апельсин, лимон тата ытти çимĕç йывăçĕсем мĕн чухлĕ! Çак сад варринче çутçанталăка улăштарса çĕнетекен И. В. Мичуринăн скульптури таçтанах курăнса ларать. Сада курма пыракансем Иван Владимировичăн меслечĕсемпе, сад тухăçлăхне ўстермелли майсемпе паллашаççĕ.

## ПИРĔН ÇĔРШЫВРИ ЯЛХУÇАЛĂХ ТЕХНИКИ

Паллах ĕнтĕ, пирĕн социализмла ялхуçалăхĕ революцичченхи техникăна çак таран çĕкленме пултарайман. Пирĕн çĕршыври ялхуçалăх техникине «Ялхуçалăхĕнчи механизаципе электрификаци» павильонĕнче кăтартнă. Мĕнле-мĕнле машина çук çав павильонта! Унăн 26 залĕнче, 12 площадкинче тата павильон тавраш҆ĕнче тракторсем 15 тĕрлĕ (маркăллă), сухалакан, çĕре кăпкалатакан машинăсем 156 тĕрлĕ, тырă акакан, пахча çимĕç лартакан машинăсем 219 тĕрлĕ, тырпулпа пахча çимĕç пухса кĕртмелли машинăсем 204 тĕрлĕ тата ытти машинăсем те темĕн чухлех. Пурĕ выставкăра 1 200 машина курма пулать. Вĕсем пурте Тăван çĕршывăн уйĕсенче ĕçлеççĕ, совет çыннисен ĕçне çăмăллатаççĕ. Аслă В. И. Ленин пирĕн çĕршывра 100 пин трактор пуласса ĕмĕтленнĕ, хальхи вăхăтра Совет Союзĕнче миллион ытла трактор, 270 пин тĕштырă комбайнĕ тата ытти ялхуçалăх машинисем те пинĕ пинĕпе шутланаççĕ.

«Ялхуçалăхĕнчи механизаципе электрификаци» павильонĕнчен тухсан, ĕлĕкхи аса килчĕ. Октябрьти революциччен вунă çул маларах пирĕн ялти пуянсем тырă выракан, авăн çапакан машинăсене туянма пуçларĕç, анчах вĕсем çинче ют çĕршыври фирмăсен ячĕсем — «Деринг», «Мак-кормик»—пулнă. Хамăр çĕршывра тунă машинăсенчен пĕр касăллă, икĕ касăллă плугсем çеç курăнкалатчĕç. Халĕ пирĕн заводсем мĕнле-мĕнле машинăсем тумаççĕ ши ялхуçалăхĕ валли! Çав машинăсене пăхнă чух Коммунистсен партийĕ Тăван çĕршыва тĕрĕс çулпа ертсе пыни калама çук лайăх курăнса тăрать: хăватлă социализмла индустри тунипе кăна ялхуçалăхне улăштарса, социализм çулĕне яма май пулнă, Совет Союзĕнчи ялхуçалăхне чи лайăх техника панипе анчах колхозсем çапла çĕкленсе кайма пултарнă, рабочи класпа колхоз хресченĕсен çирĕп союзĕ пи-

Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставки. Ялхуçалăхĕнчи механизаципе электрификаци павильонĕнче.

В. Егоров фотоўкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).



рён çёршывра коммунизм строительствине малалла та малалла илсе пырать.

## ХАЛĂХ УНИВЕРСИТЕЧĚ

Выставка уçăлнă кун «Правда» хаçат хăйěн умстатьинче Совет Союзěнчи талантлă колхоз организаторěсен ячěсемпе пěрле пирěн республикăри Вăрнар районěнчи Сталин ячěпе хисепленекен колхоз председателěн С. К. Коротковăн ятне асăнчě. Ку—пирěншěн пысăк чыс. Коротков юлташ ертсе пыракан колхоз выставкăра, чăнах та, паллă вырăн йышăнать. Унăн стенчěсем выставкăн икě павильонěнче: пěри республика залěнче, тепри—«Тěштырă» павильонěнче. Экскурси ушкăнěсем пěри те Сталин ячěпе хисепленекен колхоз стенчěсем умěнче чарăнса тăмасăр иртмеççě, пурте колхоз çитěнěвěсемпе интереслеççě, пурне те гектар пуçне 35,6 центнер тулă туса илни тěлěнтерет. Гектартан 20—25 центнер тулă илнě колхозсем выставкăра нумай, анчах 35 центнер илнě колхозсем сайрарах.

Сталин ячěпе хисепленекен колхозсăр пуçне, Чăваш республикинчен тата 5 колхоз выставкăра пулма тивěç илнě: Елчěк районěнчи Ворошилов ячěпе хисепленекен колхоз, Муркаш районěнчи Сталин ячěпе хисепленекен колхоз, Чкаловски районěнчи «Гвардеец» колхоз, Етěрне районěнчи Буденный ячěпе хисепленекен колхоз. Ку колхозсен стенчěсем пурте республика залěнче. Красноармейски районěнчи Мичурин ячěпе хисепленекен колхозăн стенчě «Шелководство» павильонěнче. Ку колхоз пурçăн хурчě ěрчетнипе мала тухнă.

Кунсăр пуçне, выставкăра пулма Çěрпўри селекци станцийě тивěçлě пулнă. Унăн стенчě те республика залěнче, экспоначěсем «Выльăх-чěрлěх» павильонěсенче.

Чăваш республикин залě Мари республикипе тата Арзамас, Горький, Киров облаçěсемпе пěр павильонта. Выставкăна пыракансем унта кěмесěр каймаççě.

Выставкăра пулма тивěç илнě колхозсемпе совхозсем, МТС-сем социализмла ялхуçалăхěн вăйне, малашлăхне кăтартаççě, çěршывра ялхуçалăх продукчěсем нумайрах та нумай туса илмелли çула кăтартса параççě.

**И. МАКСИМОВ-КОШКИНСКИЙ.**

Павел ВАСИЛЬЕВ

## *Икě портрет*

Юр шывланнă вăхăтра,
Ăшă çуркунне,
Качча курчě хаçатра
Хěрěн портретне.

Пěлтермен хěр каччине
(Мěншěн-ши вара?)
Алтая каяссине
Иртнě çырура.

Каччă пулнă бригадир
Колхозра—ялта.
Халь хастарлă командир—
Яланах малта.

«Мěн-ши, мěн-ши парнелес
Тусăма паян?
Тăрăшса вěренмелле—
Тăрăшăп ялан».

...Танк çинчен вăл васкаса
Аннăччě кăна.
Алă пачě, йăл! кулса,
Генерал ăна:

— Тěл перетěр тупăран,
Пит аван, аван.
Ан тапрантăр сăх тăшман
Вăрçăпа нихçан.

Полк ялавě çумěнче
Ўкерсе сăнне
Ярса пачě вăл инçе,—
Чун савни патне.

Пěр сăмахсăр-мěнсěрех,
Пěлě хěр йăлтах:
Вăл мухтавлă чикěре,—
Шанчăклă салтак.

Иккěш те вěсем маттур,
Пěр тěллев вěсен.
Çěнě пурнăç вăйě пур
Çамрăк чěресен.

## *Шинель*

Астăватăн пулě, савнă тусăм,
Кěрхи çиллě, уçă каççенче
Савăнса кěтеттěмěрччě шуçăм
Килессе юман каска çинче.
Эпě эс çўçеннине сисеттěм.
Самантрах пиншакăма хывса:
«Савнă тус, ан шăн,—тесе
чěркеттěм,—
Кăшт ларсамччě ěнтě ăшăнса».
Халь путать шыва ман йывăр атă,
Çил туллать шинелěн аркине.
Умăрра—мăн шурлăх. Эп упратăп
Савăнсах çěршывăн канăçне.
Кěсъере выртать хитре сăну сан,
Вăй парать мана вăл яланах.
Çак сив каç та, чунăм, савнă
тусăм,
Шинельпе чěркес килет сана.
Анчах эп, савни, пострa тăратăп.
Ан тив, пултăр ман çирех шинель.
Пурпěр эсě кулленех туятăн
Шинель панă пурнăç ăшшине.

Василий МОИСЕЕВ

* * *

Вăхăт шăвать васкавлă, хăвăрт,
Кунсем иртеççě сисěнми.
Питсем çинче йěрсем пулаççě
Çуса, шăлса та каяйми.

Пулин—васкавлă ирттěр вăхăт—
Яш кăмăл пурпěр иксěлми.

Юрий ПЕТРОВ

## *Çăлкуç*

Эпě куртăм пěр çăлкуçě
Кўршě ялăн çырминче.
Ěçрěм те—чуна йăлт уçрě,
Çěннěн туйăнчě тěнче.

Кěмěл шывě—ун илемě—
Сут хěвеллě, тăп-тăрах.
Майěпен, вăйланнăçемěн,
Вăйланса юхса тăрать.

— Чěрě вăй,—шутлатăп,—пур та,
Иксěлмест вăл... Ěмěрех
Çăлкуç пек хăватлăх пултăр
Манăн çамрăк чěрере.

Георгий ОРЛОВ

* * *

Тумлам йăлт! çиçрě вут çинче.
Унтан каллех, каллех... Вара
Вылярě çиçěм мал енче.
Сив çумăр çитрě сăрт-вара.

Кăвар хуралчě те... Çапах,
Эп нўрě хўшěрен тухсан,
Хуллен хускатрăм та çаппа—
Çěкленчě çулăм мăй\ таран.

Хаярлансах хура тўпе
Шыв сапрě вăрахчен ăна,
Çил печě туратпа, çўппе...—
Вут вăйě хутшăнчě кăна.

Мухтап сўнми вут-кăвара.
Ялан вăл кирлě хамăра.



## МЕДСЕСТРА ХИРЕ ТУХАТЬ

Колхоз хирěсенче ялхуçалăх ěçěсем вěçленсе пыраççě. Халь, çанталăк уяр тăнă чухне, колхозниксем хирти юлашки ěçсене хăвăртрах тирпейлеме тăрăшаççě, пěр минут та сая ярасшăн мар вěсем.

«Сталинец» колхозри медицина сестри Екатерина Сергеева та, çак хěрў тапхăрта, ялта ларма пултараймасть. Вăл, кирлě эмелсем илет те, колхозниксем ěçленě çěре, хире васкать. Сестра йěтем çине те, хире те, колхоз фермисене те çитсе курать, çынсене малтанхи пулăшу парать.

Ўкерчěкре: Красноармейски районěнчи «Сталинец» колхозри медицина сестри Екатерина Сергеева А. Федорова колхозницăна хирте малтанхи пулăшу парать.

**А. Костин** фотоўкерчěкě.



*Пӗтӗм Союзри ялхуҫалӑх выставкин участникӗсем патӗнче*

# КОЛХОЗРИ КУНСЕМ

Иван ГРИГОРЬЕВ

А. Припалов фотоӳкерчӗкӗсем.

... Йӑлтӑркка ҫӗнӗ «Москвич» хирти ҫулпа ҫӑмӑллӑн ярӑнать. Степан Яковлевич вагонран тухсанах машинӑна хӑй тытса пыма кӑмӑл турӗ. Мускаврa пӗр эрне ытларах ҫеҫ пурӑнчӗ пулин те, вӑл тӑван колхозӑр, ҫывӑх ҫынсемсӗр ҫав тери тунсӑхларӗ. Хӑнара лайӑх, килте тата авантарах тенӗ пек, вӑл хӑвӑртрах килне васкарӗ. Председатель ялхуҫалӑх выставкине курса тӑранаймарӗ пулин те, ялта хӗрӳ ӗҫсем пынӑ вӑхӑтра унӑн колхозран пӗр самант та аякра пулас килмерӗ. Ҫанталӑк лайӑх тӑнӑ чухне ҫуртыррисене хӑвӑртрах пухса кӗмелле, фермӑсене хӗле хатӗрлемелле, силос хывмалла, строительствӑра та чӑрмав сиксе тухма пултарать. Сахал-им колхозра кулленхи ӗҫсем? Унӑн заместителӗпе парторганизаци секретарӗ шанчӑклӑ ҫынсем пулин те, тумалли ӗҫсем пӗр самант та асран тухмаҫҫӗ. Руль умне ларсан, Степан Яковлевичӑн ҫул ҫинче ӗшенни те иртсе кайрӗ, тӳрех колхоза ҫитнӗн туйӑнчӗ.

Степан Яковлевичпа пӗрле ялхуҫалӑх выставкинчен татах иккӗн—комсомолец Сергей Фадеевпа Леонид Егорович Тюменӗв—таврӑнаҫҫӗ. Вӗсем те, председатель пекех, хӑвӑртрах ӗҫе ҫитме васкаҫҫӗ-тӗр?..

... Вунсакӑр ҫул каялла, колхоз председательне суйласан, Степан Яковлевич ялхуҫалӑх выставкинче пуласси ҫинчен шухӑшламан та. Ун чухне кӑна-пӗр икӗ-виҫӗ ҫул каялла та вӑл колхозри ӗҫсемпе ытлашши мухтанма пултарайман. Хӑмла лартса ӳстерес тӗлӗшпе кӑна колхоз районра малта пынӑ. Анчах пӗр хӑмла ӗрчетнипе ҫеҫ колхоза тӗреклетме ҫуккине Степан Яковлевич ун чухнех лайӑх ӑнланнӑ. Пӗчӗк колхозӑн вӑй-хал ҫитмен.

Аллӑ пӗрремӗш ҫулта Урхас Кушка ялсоветӗнчи «Звезда», «Урожай», «Заря», «Коминтерн» тата «Ҫуталла» колхозсене пӗр артеле пӗрлештерсен, Степан Яковлевич пуринчен малтан ӗҫ дисциплинине ҫирӗплетме тӑрӑшнӑ. Дисциплинӑна ҫирӗплетмесӗр колхозри ӗҫе кирлӗ пек йӗркелеме май ҫуккине вӑл лайӑх ӑнланнӑ. Пуринчен малтан ӗҫке ярӑннӑ ҫынсене ертсе пырас ӗҫрен хӑтарнӑ, кахалсемпе ӗҫре чӑрмантаракансене те хӗрхенсе тӑман. Колхоз пысӑк артеле пӗрлешсен, ӗҫ вӑйӗ те сахал мар кирлӗ пулнӑ. Малтанах Степан Яковлевич колхоз фермисене йӗркене кӗртме тӑрӑшнӑ. Выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫе майлаштарса ямасӑр колхоз пуянлӑхне ӳстерме йывӑр пулнине председатель лайӑх пӗлсе тӑнӑ.

«Звезда» колхоз юлашки ҫулсенче пысӑк ӳсӗмсем туни колхозӑн тупӑшӗсенчен те лайӑх курӑнать. 1952 ҫулта колхоз ҫур миллиона яхӑн тупӑш илнӗ пулсан, пӗлтӗр вара 1 миллион та 170 пин тенкӗ ытларах тупӑш илнӗ, кӑҫал миллион та 352 пин тенкӗ ытларах илме палӑртнӑ. Ҫаксем пӗтӗмпех ӗнтӗ нумай енлӗ колхоз хуҫалӑхне тӗрӗс йӗркелесе пынинчен, колхозниксем тӑрӑшса



ӗҫлениччен килнӗ. Колхоз хуҫалӑхӗ тӗрекленсен — колхозниксен пурнӑҫӗ те лайӑхланать. Тулӑх пурнӑҫпа пурӑнакан колхозниксем артель хуҫалӑхне малалла тӗреклетес тесе ырми-канми ӗҫлеҫҫӗ.

...Шухӑшсем малтан мала васкаҫҫӗ. Вӗсене хӑваласа ҫитме те ҫук. Ялхуҫалӑх выставкинче пӗр ют ҫӗршыв ҫыннипе тӗл пулни те аса килет. Степан Яковлевичпа пӗрле Сергей Фадеев та, Леонид Егорович Тюменӗв та пурччӗ. Чӑваш республикин стенчӗсем патӗнче тӑнӑ чухне ют ҫӗршывран килнӗ пӗр ҫынпа калаҫмалла пулчӗ.

— Калӑр-ха, ҫакӑн пек выставка-хула туни мӗн усӑ парать-ха сире? Килсе куракансенчен укҫа пухнипе унӑн хакне кӑлармa пулать-и?—тесе ыйтрӗ вӑл, хӑйӗн пӗчӗкҫеҫ блокночӗ ҫине темӗн ҫырма хатӗрленсе. Ҫак сӑмахсем колхозниксене шалтах тӗлӗнтерсе ячӗҫ.

— Эпир кунта ҫӗнӗлле, наука кӑтартнӑ пек ӗҫлеме вӗренетпӗр,—терӗҫ ӑна колхозниксем.— Выставкӑри экспонатсем—пирӗн ӳсӗмсем. Совет правительствипе Коммунистсен партийӗ ертсе пынипе совет хресченӗсем ҫакна хӑйсен аллипе тунӑ ӗнтӗ.

Анчах ялхуҫалӑх выставкинче «Звезда» колхоз хресченӗсен пуян та телейлӗ пурнӑҫне те уҫҫӑн кӑтартса панине ӑнланчӗ-ши ют ҫӗршыв ҫынни? Курасчӗ унӑн кунти колхозниксене! Хальь ялта чӗнтӗрсӗр чӳрече кураймӑн, хура пӳртсем ҫинчен тахҫанах маннӑ ӗнтӗ. Акӑ, Гурий Леонидович Леонидов ҫемйинех илер. Колхоза кӗриччен, пӗр ҫирӗм виҫӗ—ҫирӗм тӑватӑ ҫул каялла, унӑн ҫемйи выҫӑллӑ-тутӑллӑ пурӑннӑ. Ят ҫӗрӗ Леонидова кирлӗ чухлӗ тырӑ та, пахча ҫимӗҫ те параймaн. Пӗлтӗр Леонидов ҫемйи колхозра ӗҫлесе пилӗк тоннӑна яхӑн тӗштырӑ, виҫӗ тонна ытла ҫӗрулми тата ытти пахча ҫимӗҫсем те нумай илнӗ. Кунсӑр пуҫне, тӑватӑ пин тенке яхӑн колхозран укҫа тухнӑ. Ун пек колхозниксем ялта вуншарӑн шутланаҫҫӗ. Вӗсем пурте хӑйсем тӑрӑшса ӗҫленипе телейлӗ пурнӑҫ турӗҫ. Хальь колхозра 24 ҫын ҫӗнӗ ҫуртсем лартаҫҫӗ. Вӗсене колхоз йывӑҫ турттарса пачӗ, ытти ӗҫсем тума та пулӑшрӗ. Иртнӗ ҫулта партин сентябрьти Пленумӗ хыҫҫӑн колхоз чылай ҫӗнӗ ӳсӗмсем турӗ. Парти чӗннипе яла ялхуҫалӑх специалисчӗсем килчӗҫ. Хальь колхозра агроном, ветеринари фельдшерӗ пур. Колхозра агроном вӑйлӑ тырпулшӑн кӗрешес ӗҫре чи кирлӗ ҫын...

Степан Яковлевич яла таврӑнсан, килне те кӗрсе тӑмарӗ, тӳрех колхоз правленине васкарӗ. Ӑна колхозниксем чечек ҫыххисемпе клуб умӗнче кӗтсе илчӗҫ. (Ҫӳлти ӳкерчӗк).

Мускавран таврӑнсан Сергей Фадеевпа Леонид Егорович та килте ларма пултараймарӗҫ. Вӗсем иккӗшӗ те тепӗр кунне ирирех хире, колхозниксем ӗҫленӗ ҫӗре васкарӗҫ. Колхоз кӗр тыррисене тахҫанах вырса пӗтернӗ ӗнтӗ, кӗлтесене те капана хывнӑ. Хальь колхозниксем ҫуртыррисене вырӑҫҫӗ. Машинӑпа кӗме май ҫук участоксенче колхозниксем ҫурлапа пухса кӗртеҫҫӗ. Йӗтем ҫинче те хӗрӳ ӗҫ пырать.

Колхозра ҫамрӑксем пур ӗҫре те малта пыраҫҫӗ. Хирте-и вӗсем е строительствӑра, выльӑх-чӗрлӗх фермисенче-и е сад пахчисенче, пур ҫӗрте те комсомолецсемпе ҫамрӑксен вӑйне курма пулать. Тырӑ вырнӑ ҫӗрте Людмила Степановна комсомолка кулленхи нормӑна яланах ирттӗрсе тултарать. Ун тантӑшӗсем Тоня Прокопьевӑпа Нина Иванова, Люба Гурьевӑпа Василиса Андреева та унран юлмаҫҫӗ.

Леонид Егоровичпа Сергей Фадеев тырӑ вырнӑ ҫӗре тухсан, колхозниксем вӗсене савӑнӑҫлӑн сырса илчӗҫ те пӗр ушкӑна пуҫхӑнса ларчӗҫ. (Варринчи ӳкерчӗк.) Вӗсем пӗрне-пӗри пӳлсех Мускав ҫинчен, выставка ҫинчен, унти экспонатсем ҫинчен ыйтма пуҫларӗҫ. Леонид Егорович колхозниҫсене выставкӑра хӑй курнине тӗплӗн каласа пачӗ, ӑна Сергей те пулӑшрӗ: унсӑрӑн пӗччен пурне каласа та пӗтереймӗн.

Бригадир ялхуҫалӑх выставкине кайма тивӗҫлӗ пулнӑшӑн колхозниксем чунтан савӑнчӗҫ, хӑйсем те унпа пӗрле Мускавра пулнӑн туйрӗҫ. Чӑнах та вӗсем хӑйсем те бригадӑра вӑй хурса ӗҫленӗ, тӑрӑшнӑ, ҫавна пулах ӗнтӗ Тюменӗв бригади халиччен пулман ҫӗнӗ ӳсӗмсем турӗ. Вунпилӗк гектар ҫинчен кашни гектартан 226 центнер ҫӗрулми, вунултшар центнер ыраш пухса илнӗ. Мӗнле майпа тунӑ-ха ҫак ҫитӗнӳсене иккӗмӗш бригадӑри колхозниксем? Паллах, ҫӗрӗҫ системине лайӑх пӗлнипе, пусӑ ҫаврӑнӑшӗпе тӗрӗс усӑ курнипе. Колхозниксем хӗлӗн-ҫӑвӗн вӑйлӑ тырпулшӑн кӗрешнӗ. Хӗлле хире кӑларма имҫамсем хатӗрленӗ, ҫулла вара тырпула куҫ шӑрҫи пек сыхласа ӳстернӗ. Кӑҫал ҫӗрулмине тӑваткал тӗммӗн лартса хӑварнӑ.

Уй-хирте кӑна мар, пахча ҫимӗҫсемпе сад ӗрчетес ӗҫре те «Звезда» колхоз юлашки ҫулсенче пысӑк ҫитӗнӳсем турӗ. Колхоз сачӗ вӑрҫӑ хыҫҫӑн кӑна тупӑш пама пуҫларӗ. Вунӑ гектар ҫинчи сада хӗрӗх пӗрремӗш ҫулхи хӗл чылаях сиен кӳнӗ. Вӑрҫӑ вӑхӑтӗн-



че, сада пӑхакан пулманнипе, улмуҫҫисемпе ытти йывӑҫсем чылай хӑрнӑ. Хӗрӗх пиллӗкмӗш ҫулта ҫартан таврӑннӑ сад ӑсти Георгий Виноградов тӑрӑшса ӗҫе тытӑннӑ. Кӑҫал Виноградов татах икӗ гектар ытларах улмуҫҫисемпе слива йывӑҫӗсем лартса хӑварчӗ. Колхоз садӗнче улма сорчӗсем аллӑран та иртеҫҫӗ, вӗсем пурте—Мичурин сорчӗсем. Кунтах кӑнтӑртан Чӑваш ҫӗршывне куҫса килнӗ виноград та ҫитӗнет.





Садра ӗҫлесси, хӑшпӗрисем шухӑшланӑ пек, ҫӑмӑл ӗҫ мар. Кӑҫал 720 тӗп ытла тӗрлӗрен улмуҫҫисемпе чие, слива йывӑҫӗсем лартса хӑварнӑччӗ, анчах кӗтмен ҫӗртен Виноградов ӗҫӗнче пӗр пӑтӑрмах сиксе тухрӗ. Ҫуркунне ҫамрӑк йывӑҫсем лайӑххӑн чӗрӗлнӗччӗ, анчах ҫулла улмуҫҫисенчен пӗр пайӗ типме пуҫларӗ. Георгий Георгиевич, пӗрле ӗҫлекен Валентина Егоровӑпа Юлия Егорова пулӑшнипе, ҫамрӑк улмуҫҫисене ҫӑлса хӑварма васкарӗ. Ҫамрӑк Валентина нумаях пулмасть Патӑрьелӗнчи ялхуҫалӑх шкулӗнчен вӗренсе тухнӑ. Унӑн пӗлӳ пур, Георгий Георгиевичӑн опыт пысӑк. Виҫӗ ӗҫчен садра чӑн-чӑн тӗпчев «институчӗ» туса хунӑ. Вӗсем кунта тӗрлӗрен опытсем туса ирттереҫҫӗ, ҫӗнӗ сортсем ҫитӗнтереҫҫӗ. Ҫамрӑк йывӑҫсем мӗншӗн чирлени те кайрантарах паллӑ пулчӗ: вӗсем шӑрӑхра нӳр ҫитменнипе аптӑранӑ пулнӑ.

Колхоз садне кӗрсен, калла тухас та килмест. Кунта ҫав тери илемлӗ. Кӑҫал лартнӑ улмуҫҫисен хушшинчи ҫӗре ахаль вырттарасран сад ӑстисем кукуруза акса хӑварма сӗнчӗҫ. Ҫапла тунипе вӗсем вылькӑх валли силос ытларах хатӗрлеме пулӑшрӗҫ, ҫамрӑк йывӑҫсене те хӗвелтен сыхласа хӑварчӗҫ.

Георгий Виноградов ӗҫне колхозниксем сӑнасах тӑраҫҫӗ. Акӑ ун патне колхозри ревизи комиссийӗн председателӗ Майоровпа ялсовет председателӗ Васильев пырса кӗреҫҫӗ. Сад ӑсти вӗсене ӑшшӑн кӗтсе илчӗ. Килнӗ хӑнасене вӑл кӑҫал пӗрремӗш хут ҫимӗҫ панӑ улмуҫҫирен панулмисем татса пачӗ. (4-мӗш страницӑри аялти ӳкерчӗк.)

— Сахалтан та ҫур кило туртать,—терӗ Васильев, панулмие алли ҫинче виҫсе пӑхса.—Эпӗ ӑна асӑнмалӑх киле илсе каям-ха, тен, ӑна килес ҫулччен усрама май килӗ...

— Тути те тутлӑ,—терӗ Майоров, улмине активсе.—Ҫакӑн пек улмасем ытларах пулсан, килес ҫулсенче выставкӑна кайма та намӑс мар. Хамӑр тӑрӑшса ӗҫлесен, садран ҫӗршер пин тупӑш илме тытӑнатпӑр.

Колхозра халь хӗрӳ ӗҫсем пыраҫҫӗ. Августӑн малтанхи кунӗсем пулсан та, ҫанталӑк кӑштах ҫумӑрлӑрах тӑни колхозниксене ӗҫлеме чӑрмантарать. Ҫапах та вӗсем кашни минутпа усӑ курма тӑрӑшаҫҫӗ. Уй-хирти ҫуртырисене пухса кӗртнӗ вӑхӑтрах колхоз ҫӗнӗрен 200 ӗне вырнаҫмалӑх вите тӑвать, пӑру вити тума тытӑннӑ. Ферма ҫурчӗсене кунта пӗренерен кӑна мар, шлакпа бетонран тӑваҫҫӗ. Кунсӑр пуҫне, автомашинӑсем лартмалли гараж, силос башнисем тума палӑртнӑ. Пӗр башнине туса пӗтереҫҫӗ те ӗнтӗ. (Ҫӳлти ӳкерчӗк.)

«Звезда» колхозра ӗҫлӗ кун кӗшӗм ҫутипех пуҫланать. Таврара ирхи тӗтре те сирӗлеймен-ха, хӗвел те пӗлӗт хыҫӗнчен тухайман. Урамсенче ир-ирех шӑв-шав пуҫланчӗ. Ваттисем кӗтӳ хӑвалаҫҫӗ. Акӑ пӗр хӗр, икӗ витрине шӑнкӑртаттарса, шыв ӑсма анать. Кӳлӗре хур-хӑвакалсен сасси, таҫта машинӑсем кӗрлени илтӗнет. Ҫамрӑксем е хире, е йӗтем ҫине ӗҫе васкаҫҫӗ. Урампа пӗр грузовик кӗрлесе иртрӗ те строительство участокӗнче чарӑнчӗ. Тулли машина патне пӑру вити тунӑ ҫӗрте ӗҫлекенсем чупса пычӗҫ.

— Атьӑр, ачасем, машинӑна хӑвӑртрах пушатар,—терӗ шофер, машина борчӗсене уҫса.—Манӑн паян ӗҫ нумай. (Варринчи ӳкерчӗк.)

Строительство валли колхоз хӗлле йывӑҫ та сахал мар турттарса хатӗрленӗ. Пӑру вити тума кӑна икҫӗр хӗрӗх кубла метр йывӑҫ кӳрсе килнӗ. Халь Тӗрлемесрен шлак турттараҫҫӗ.

Ӗне вити тунӑ ҫӗрте те строительсем тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ. Колхозниксем хӗле кӗриччен ӗнесене ӑшӑ витене тӑратасшӑн.

Силос башнин шал енче икӗ штукатурщик ӗҫлеҫҫӗ. (Аялти ӳкерчӗк.) Колхозра штукатурщиксем ҫитмен пирки квалификациллӗ специалистсене хуларан чӗнсе илнӗ. Штукатурщик Пантелеймон Гаврилович Гаврилов ӗҫе яланах тӗплӗ тӑвать. Вӑл, ҫирӗм ҫул каялла штукатурщик ӗҫне вӗренсе тухса, нумай стройкӑсенче ӗҫленӗ.

— Штукатурщик ӗҫӗ пирӗн пурнӑҫра číслӑ ӗҫсенчен пӗри,—час-часах вӗрентсе калать Пантелеймон Гаврилович хӑйпе пӗрле ӗҫлекен ҫамрӑка.—Ӗлӗк пирӗн ҫине алӑпа ҫеҫ сулнӑ, татӑк ҫӑкӑршӑн та пирӗн аттесем кунӗ-кунӗпе асапланнӑ. Халӗ акӑ колхозсенче те пирӗн специальность кирлӗ пулчӗ...

Выльӑх-чӗрлӗх фермисем Урхас Кушка ялӗ хӗррипче вырнаҫнӑ. Ҫулла ӗнесене Атӑл леш енчи лагере ӑсатаҫҫӗ. Кунта халь сыснасем кӑна юлнӑ. Свинарка Римма Александрова пиллӗкмӗш ҫул сысна фермипче ӗҫлет. Иртнӗ ҫулта вӑл 77 ҫура пӑхса ӳстернӗ, кӑҫал та унтан кая мар... Ветеринари фельдшерӗ Алексей Соловьев ферма работникӗсене ӗҫре нумай пулӑшать.

«Звезда» колхоз хӑмла ӗрчетсе районӗпе кӑна мар, республикипех чапа тухнӑ. Пӗтӗм Союзри ялхуҫалӑх выставкинче «Звезда» колхоз ӳстернӗ хӑмла пурне те тӗлӗнтерет.

Сергей Фадеев ача чухнех ашшӗнчен хӑмла лартса тума вӗреннӗ. Иртнӗ ҫул вӑл хӑмла звенине ертсе пыма пуҫланӑ. Колхозниксем пӗлтӗр вунпӗр гектар ҫинчен кашни гектартан вунвиҫшер центнер ытла хӑмла туса илнӗ. Колхоз агрономӗ Апполинария Романовна звенона яланах пулӑшать. Сергей Мускавран таврӑнсан, агроном хӑмла плантацине ҫитсе тӗреслерӗ. (Ҫӳлти, сылтӑмри ӳкерчӗк.) Хӑмла парка ӳсет, кӑҫал гектартан сахалтан та вунтӑватӑ центнертан кая мар хӑмла илме пулать.

Апполинария Романовна иртнӗ ҫулта парти членнипе ку колхоза ӗҫлеме килнӗ. Малтанхи вӑхӑтра, паллах, йывӑрлӑхсем пулнӑ, ҫынсене те палласах ҫитмен, хӑшпӗр бригадирсем ӑна итлесшӗнех те пулман. «Канцелярист, мӗн пӗлет вӑл»,—тенӗ усҫӑнах хӑшпӗр колхозниксем. Вӗсем хушшинче виҫҫӗмӗш бригада бригадирӗ Охотин та пулнӑ. Охотин шӑп ҫуракине хатӗрленнӗ вӑхӑтра ӗҫре чӑрмантарма пуҫланӑ. Ӗҫсе ҫӳренӗ, бригадӑна эрнипех пырса курман. Пӗлтӗр ӑна пулах юр ҫусан ҫӗрулми кӑларнӑ, хӗле кӗрсен авӑн ҫапнӑ. Ферма заведующине Ильина та ӗҫрен кӑларма тивнӗ. Колхозниксем малтанах Романовӑна кӑмӑлласах кайман, кӑра та чӑкӑлтӑш ҫын тесе шутланӑ, анчах ӗҫ юсанса пынине кура вӗсен шухӑшӗ улшӑннӑ, коммунистсем агронома ӗҫре пулӑшса пынӑ, кӑҫалхи март уйӑхӗнче ӑна парторганизаци секретарьне суйланӑ.



Яла каҫ сӗмӗ хупӑрлать. Колхозниксем хиртен юрӑ юрласа таврӑнаҫҫӗ. Часах урамсенче унта та кунта ҫамрӑксен юррисем илтӗнме пуҫлаҫҫӗ. Юрра юратаҫҫӗ кунта, юрӑ вӗсене ӗҫлеме те, канма та пулӑшать. Ӗҫрен пушаннӑ колхозниксем таса тумтир улӑштарса тӑхӑнаҫҫӗ те клуба васкаҫҫӗ. Унта паян художествӑллӑ пултарулӑх кружокӗ спектакль лартса парать. Чылайӑшӗсем вулав ҫуртӗнче ҫӗнӗ кӗнекесем, хаҫат-журнал вулаҫҫӗ. Клуба кӗнӗ ҫӗрте пысӑк саспаллисемпе «Эпир мӗн тума палӑртнӑ» текен витрина ҫакӑнса тӑрать. Унта колхоз ҫитес ҫулсенче тумалли ӗҫсене палӑртнӑ. Колхозри художник пайтах ӗҫленӗ кураӑнать. Унтах фото-хаҫат. Хаҫата кӑларма ветеринари фельдшерӗ Алексей Соловьев пулӑшать.

Степан Яковлевич Яковлев колхозниксен тулӑх пурнӑҫне курать те чунтан савӑнать. Анчах умра ӗҫсем нумай-ха, малта, тен, йывӑрлӑхсем те сахал мар пулӗҫ. Анчах вӑл йывӑрлӑхсенчен хӑраса тӑмасть. Вунсакӑр ҫул хушшинче вӑл колхоза ертсе пыма вӗреннӗ ӗнтӗ, кӑҫал выставкӑра пулни ӑна ҫӗнӗ ӗҫсен программине уҫса пачӗ.

Урамра машинӑсем кӗрлесе иртеҫҫӗ. Йӗтем ҫинчен электромоторпа авӑн ҫапни илтӗнет.

Ялти ӗҫчен ҫынсем ӗҫлеҫҫӗ те канаҫҫӗ. Кашни утӑмрах вӗсен тулли савӑнӑҫне туятӑн.

*Октябрьски районӗ.*



# Йăлăмри юрă



*Калав*

Аркадий ЭСХЕЛЬ

Закир Фасхутдинов тăрăхласа кулма юратать. Пайтах çыннăн чĕрине ыраттарнă ĕнтĕ вăл хăйĕн йĕплĕ чĕлхипе. Тепĕр чухне вăл тата сăмах та шарламасть-ха: пырса тăрать, калăпăр, ĕçре юлхавлăрах çаврăнкалакан пĕр-пĕр хĕрача патне, аллисене хыçалалла тытать, тăрать вара çавăн пек нимĕн чĕнмесĕр. Шултра та йĕпкĕн хура çÿçĕ хăйĕн, çил тустарнă аслăк çинчи улăм пек, аялалла усăнать, хура куçĕсем çÿç айĕнчен чеен-чеен çиçеççĕ. Шуйттан кăварĕ вылять-и, тен, унăн куçĕнче! Çав кăвара никам та тÿссе тăраймасть. Юлхаввăн çаврăнкалаканни, калăпăр, Закира малтанах асăрхамасть-ха,—тахăш вăхăтра килсе тăнă вăл,—пурпĕрех ун куçĕн йĕплĕ кăварне теплерен çурăмĕпе туйса илет. Пĕтĕм шăмшакĕ пĕçерсе каять вара çав хĕрĕн, пĕçерсе каять те... хăйхи хĕр вăртах каялла çаврăнса пăхать. Паллă ĕнтĕ, кунта пике куçĕ Закир куçĕпе тĕл пулсан, пĕтрĕ пурнăç! Хĕрĕн пичĕ, малтанхи юр айне лекнĕ кĕтмел çырли пек, пăчăр хĕрелет. Чăн та, хĕрĕ, хăюллăрах пулсан, Закира аллинчи кĕреçипе хăмсарать е торф муклашкипе пеме тăрать. Хăюсăртараххи вара пуçне чикет те васкаса ĕçлеме тытăнать. Çавнашкал ĕнтĕ Закирăн куçĕ, анчах чĕлхи вара...

Зоя Хуралова Закирăн йăлисене питĕ лайăх пĕлет. Çак вичкĕн куçлă тутар йĕкĕчĕ ыттисене тăрăхланă чухне Зоя шăнкăрав пек сассине янăратсах кулать. Закир килĕштерет ăна, кăмăллать. Çапах та мĕн пулса тухрĕ-ха паян?

Йăлтах кĕтмен çĕртен килсе тухрĕ ку инкек-синкек. Зоя халĕ, пĕччен чухне, кăнтăрла мĕн пулса иртнине тавçăрса илме, хăйĕн шухăшĕпе кăмăлне лăплантарма тăрăшать. Анчах шухăш, шурлăхпа пыракан çын пĕр тĕмерен тепĕр тĕме çине сике-сике ÿкнĕ пекех, пĕр япаларан тепĕр япала патне ним тĕлли-паллисĕр куçса тăрать.

Ах, Закир, Закир! Эсĕ ку вăхăтра кашни кăçах кантăкран шăкăр-шăкăр килсе шаккаканччĕ. Кĕçĕр... Кĕçĕр, паллах, килместĕн. Тепĕр тесен, кирлĕ те мар! Тупăннă, йĕплĕ чĕлхе! Зоя чăп-чăмăр тутине пĕчĕк ачалла мăкăртать те, халĕ хăй умĕнче тăрас пек туйăнакан Закира витлесе, чĕлхине кăларса кăтартать. Унтан хăй тĕллĕнех кулса илет. Минтер çине выртса макăрасчĕ пĕреххут, куççулĕ тухмасть. Мĕнле-ха капла? Кантăкран вăл ĕçре писĕхнĕ тимĕр пек çиреп, анчах хĕршĕн мамăк пек çемçе пÿрнисемпе шăкăр-шăкăр килсе шаккаканччĕ.

— Закир—Закир тени пулать ку сигнал,—тетчĕ вăл хăй кантăкран çавăн пек систернине.

Ĕнтĕ электроплитка çинчи чейник те вĕреме кĕчĕ. Вăхăт кĕр енне сулăннипе пÿлĕме кас ĕнтрĕкĕ те çапрĕ. Зойăн нимĕн те тăвас килмест. Яланхи йăлапа тенĕ пек кăна вăл, пылчăкпа вараланса пĕтнĕ комбинезонне хывса пăрахса, çăвăнса тасалчĕ те сенкер пурçăн платье тăхăнчĕ, çÿçне тепĕр хут сÿтсе çивĕтлерĕ. Ку вăл — яланхи йăлапа кăна... Кĕçĕр Зоя ниçта та кайма шутламасть... Шутламасть... Калама çăмăл!.. Авă, чей вĕресе тухрĕ. Зойăн ăшĕнче те тем вĕрет, пăтранать, çунтарать. Закир чей ĕçме юратаканччĕ. Кантăкран вăл шăкăр-шăкăр сасă паратчĕ те, Зоя, чÿрече патне пырса, йăл кулатчĕ, унтан пуçне сĕлтетчĕ:—Кĕрсем-и...

Кĕрет вара Закир, хура куçĕсем хăйĕн вут пек çунса тăраççĕ, чĕринче пĕр вăхăтрах пин-пин савăнăç ялкăшать, тейĕн.

— Салям, Зуя-джанăм,—хĕре икĕ хулĕнчен тытса, куçран тÿррĕн пăхса саламлать вара вăл кашниччĕ.

Кăнтăрти районтан килнĕ тутар йĕкĕчĕ вырăсла та, чăвашла та питĕ таса калаçать, анчах Зоя ятне çеç вăл темшĕн кăшт пăсать.

— Зуя мар, Зоя! Зоя!—тет вара чăваш хĕрĕ, тутар йĕкĕтне сăмсинчен пÿрнепе тĕрте-тĕрте. Лешĕ ахăлтатсах кулать, кун пек чухне унăн икĕ рет шурă шăлĕ уйрăмах илемлĕн курăнать, куçĕсем тата хаваслăнрах çунма тытăнаççĕ.

— Мĕн тăвам-ха ĕнтĕ, чĕлхем çав тери мăка пулсан?—тет вăл, пăшăрханнă пек, юриех сăн-сăпатне тĕксĕмлетсе.—Каçар, анчах мана сан яту питĕ килĕшет.—Хăй вара, хĕр ятне тĕрĕс калама тăрăшса, çине тăрсах:—Зо-оя! Зо-оя! Зоечка! Зо-оя-джан!—теме тытăнать. Закир кун пек чухне пĕрре те кулмасть.

Зоя ăна пысăк шурă куркапа чей тултарса парать. Пĕр шарламасăр чей ĕçме пикенет вара Закир. Сахăрне вăл куркана ямасть, чĕлхе вĕçне хурать те, чей сыпнă май тутипе чăп та чăп тутарать. Хă-ăш сывласа илет вăл ассăн, пĕр курка ĕçсе ярсан, унтан хĕре куçран тинкерсе пăхать. Зоя ăна тепĕр курка тултарса пама васкать, лешĕ куркине алтупанĕпе хуплать.

— Чим-ха, Зо-оя,—тет вăл, хĕрĕн ятне кăкăртан çавăн пекех ассăн сывласа кăларса,—манăн ятăм Закир. Çапла, пирĕн ятăмăрсем иксĕмĕрĕн те пĕр пек саспаллирен пуçланаççĕ: Зоя — Закир. Ман хушаматăм — Фасхутдинов, санăн — Хуралова. Алфавитра вĕсем те юнашар.

— Э-э,—тет Зоя, ку тĕле çитсен, йĕкĕте пÿрнипе юнаса.—Эсĕ чее иккен. Сан хушамату алфавитра маларах тăрать. Ĕçре те эс ав пуринчен мала тухасшăн.

— Вăл юрĕ-ха,—Закир Зойăна аллинчен тытать те хуллен чăмăртать.—Докладчиксем каларĕш, тĕп ыйту унта мар-ха, алфавитра та мар. Тĕп ыйту — тĕнчери лару-тăрăва çăмăллатасси,—Закирăн куçĕсем хăйхи чеен йăлкăшса илеççĕ.—Тĕнчере пĕччен пурăнма йывăр... Вăт, çав лару-тăрăва мĕнле те пулин çăмăллатмалла...

Зойăн сăнĕ хĕрелет, кăвак куçĕсем тĕксĕмленеççĕ, кăкăрне вара ăшă-ăшă ырлăх тулать. Хăй нимĕн те чĕнмест, тин пиçсе çитнĕ чие пек тутисем йă-ăл кулаççĕ. Чылайччен илĕртсе тăрать вара çак кулă. Закир та урăх сăмах чĕнмест.

...Инҫетри йӑлӑм вӑрманӗнче пӗр каччӑ куҫ хывни ҫинчен Зоя ӗнтӗ колхозри амӑшне те ҫырса янӑччӗ. Каччи тутар йӗкӗчӗ пулнине ҫеҫ каламанччӗ ҫав ҫырура, тата шӑллӗне—Бориса ӑна-кӑна нимӗн те пӗлтерме хушманччӗ. «Мана лайӑх ӗҫленӗшӗн уйрӑм пӳлӗм парӗҫ,—тесе ҫырнӑччӗ Зоя хӑйӗн ҫырӑвӗнче.—Халӗ ӗнтӗ эпӗ тӑвӑр общежитире тӗркӗшсе пурӑнмастӑп. Хамӑн хваттер. Укҫа тӗлӗшӗпе аптрамастӑп, ҫителӗклех ӗҫлесе илетӗп, кунсӑр пуҫне, пирӗн торф предприятине уйӑхсерен тенӗ пекех премисем параҫҫӗ, пире те самаях тивет. Ҫак уйӑхри укҫаран ҫӗнӗ ботти туянтӑм, сенкер пурҫӑнтан хулари пек платье ҫӗлетрӗм. Анчах мана леш хам куҫ хывнӑ каччӑ: «Эсӗ чӑвашла тумлансан, ытларах килӗшетӗн»,—тет. Э-э тата, ҫырма маннӑ, кунти хӗрсем пурте хӑлха унки ҫакса ҫӳреҫҫӗ. Эпӗ те 152 тенкӗ парсах ылттӑн алка илтӗм. Укҫа ытлашши пӗтерет тесе ан ятла. Ҫак ҫырупа пӗрлех сирӗн пата 200 тенкӗ куҫартӑм. Илсен, ҫырса пӗлтерӗр. Кӗҫех пирӗн торф сезонӗ пӗтет. Тен, ун чухне иккӗн пырӑпӑр. Вӗсен ялӗ те пирӗн ялтан инҫех мар. Мӗн тери лайӑх ҫын вӑл! Ун чухне хӑвах курӑн. Чӑн та, ҫынтан кӑшт тӑрӑхласа кулма юрататъ. Ну, вӑл нимех те мар! Эпир хамӑртан култармӑпӑр. Бориса пысӑк салам кала, анчах ҫырӑва ан вулаттар!..»

Ҫак ҫырӑва Зоя, кӗҫӗр ҫырнӑ пекех, тата тепӗр хут, малтан пуҫласа вӗҫне ҫитиччен, аса илсе тухрӗ. «Иккӗн пырӑпӑр... Вӗсен ялӗ пирӗн ялтан инҫех мар... Мӗн тери лайӑх ҫын вӑл... хӑвах курӑн...»

Ак паян кӑтартрӗ!.. Лайӑх ҫын!..

Кӑнтӑрла мӗн пулса иртни Зоя куҫӗ умӗнчен ниепле те кая пӗлмест. Вӑл паян чи пысӑк норма тӑвасшӑнччӗ. Ҫавӑнпа ӗҫе кӑвак ҫутӑллах тухрӗ. Фрезер тракторӗпе кaҫхи сменӑра ӗҫлекен Сима, те ӗҫе вӗренсех ҫитейменнипе, те хӑй ҫавӑн пек тӳрккесрех пулнипе, нормӑна аран-аран ҫеҫ тултарса пырать. Тӗрӗссипе, Зоя хӑй те сезон пуҫламӑшӗнче Симӑран малтах пулман-ха. Темшӗн-ҫке ӗнтӗ. Торф предприятийӗнче хӗрсене кӑҫалчченх кӗреҫерен пуҫне ытлашши нимех те шанса паман.

— Сирӗн тус — кӗреҫе,—тенӗ вӗсене.

Шучӗ енчен рабочисем хушшинче хӗрсем ытларах пулнӑ. Ҫапах та тракторсемпе каччӑсем ӗҫленӗ, транспортерсемпе вагонсене тиемелли кpансем умӗнче каччӑсем тӑнӑ, ансӑр чугун ҫул ҫинчи поездсене каччӑсем ҫӳретнӗ, шурлӑхра канав алтакан машинӑсем ҫинче те каччӑсем ларнӑ. Чӑн та, хӗрсенчен бригадирсем чылай-ха. Анчах вӗсене те Закир пек йӗплӗ чӗлхесем «кӗреҫеллӗ ҫар» командирӗсем теҫҫӗ.

Кӑҫалхи сезон пуҫланас умӗн торф предприятине ҫӗнӗ механизмсем нумай илсе килчӗҫ. Ячӗсем те вӗсен шултра саспаллисемпе ҫырӑнакан ятсем—«СКС-2», «УКБ-4». Хӑйсене курсан вара хӑрасах ӳкмелле. Ӑҫта вӗсене хӗрсен ҫепӗҫ аллине шанса пама? Вӗсем чӑннипех те торф кӑлармалли комбайнсем. Стилочнӑй машина текенни, калӑпӑр, пылчӑк пек торфа хӑех ӑса-ӑса илсе, кирпӗчӗн-кирпӗчӗн ҫапса кӑларать те типме ҫӗр ҫине сарса пырать. «УКБ-4» текенни вара, ҫав кирпӗчсене пуҫтара-пуҫтара, шаршансем туса хӑварать. Тӗлӗнмелле машинӑсем! Ун еврӗлисем, паллах, тӗнчере те урӑх ҫук!

Кӑҫалччен фрезер тракторӗсемпе ӗҫленӗ каччӑсем хайхи тӳрех ҫӗнӗ машинӑсем ҫине тапса сикрӗҫ. Пӑх та кур вӗсене! Вӗсем хӗрсенчен ытларах пултараҫҫӗ иккен! Закир та хӑйӗн тракторне Зоя аллине парса хӑварчӗ.

— Ну, Зоя, ку машинӑпа эпӗ икӗ ҫул ӗҫлерӗм. Чаплӑ агрегат. Эс те лайӑх ӗҫлессе шанатӑп,—терӗ вӑл, хура куҫӗсене чеен ялкӑштарса.

Трактор ӗҫне хӗрсем хӗлле вӗреннӗччӗ. Зоя машинӑна Закир аллинчен пӗр шикленмесӗрех йышӑнчӗ.

— Юрӗ, Закир, санран япӑхах ӗҫлемӗпӗр-ха,—терӗ вӑл.

Чӑн та, шурлӑха кӗре-кӗре ларса, пӗрре кӑна мар макӑрнӑ Зоя. Анчах унӑн куҫҫульне халиччен никам та курман. Куҫне шурӑ тутӑрпа хупланӑ та шӑлне ҫыртнӑ. Ҫумӑрлӑ ҫанталӑксенче мӑй таран пылчӑкра ашса суптӑрканӑ каччӑсем каҫсерен столовӑйне кӗреҫҫӗ те чӗрене «ӑшӑтмалӑх» ҫӗр аллӑ грамм ӳпӗнтереҫҫӗ. Хӗрсен унашкал йӑла ҫук. Закир та кун пеккине юратмасть.

— Комсомолец чӗри ахалех вӗри,—тет вӑл пӗр кулмасӑр.—Эрех юна шӗветет, вара ытларах чирлеме пулать.

Маттур йӗкӗт ҫав вӑл Закир! Ҫартан таврӑнсанах вӑл торфа ӗҫлеме килчӗ. Ҫавӑн чухнех ӑна Зоя куҫ хыврӗ... Унӑн тин ҫеҫ касса кӑларнӑ торф пек ҫуталса тӑракан хура ҫӳҫӗ, тем тӗрлӗ вут-кӑваррӑн ялкӑшакан куҫӗ, шурӑ ахах пек курӑнакан икӗ рет шурӑ шӑлӗ... Эх, мӗн каласси пур ӗнтӗ ҫавӑн пек йӗкӗт пирки! Анчах мӗн пулса тӑчӗ-ха паян? Мӗн пулса тӑчӗ?..

Ҫапла, Зоя паян кӑвак ҫутӑллах участока тухнӑччӗ. Ҫанталӑк тӗтреллӗччӗ. Пӗр енчен, вӑл каҫхи сменӑра ӗҫленӗ Симӑна пулӑшасшӑнччӗ, тепӗр енчен, трактора тӗплӗн пӑхса тухса, тасатмаллине тасатса, хытармалли гайкӑсене хытарса, икӗ нормӑран кая мар торф кӑларасшӑнччӗ. Закир, авӑ, хӑйӗн стилочнӑй машинипе кашни рейсра 1700—1800-шер торф кирпӗчӗ ҫапа-ҫапа кӑларса, пӗр тикӗссӗн сарса тухать. Мӗн чухлӗ ӗҫ тӑвать вӑл кунсерен! Ҫук, Зойӑн та Закиртан юлас килмест. Вӗсем ӗҫлекен багерсем пӗр-пӗринчен инҫе те мар. Зоя та хытӑ сӑнать Закира, лешӗ те хӗре куҫран вӗҫертмест. Савнисем хушшинче нимле хут ҫине ҫырса палӑртма ҫук хӗрӳллӗ ӑмӑрту пырать. Юратнӑ чӗресен ӑмӑртӑвӗ... Профсоюз пӗлмест-ха ку ӑмӑрту ҫинчен, сисмест. Пӗрле ӗҫлекен юлташӗсем кӑна тӗшмӗртеҫҫӗ,—тӗшмӗртеҫҫӗ те... халлехе шарламаҫҫӗ. Сезон пӗтсен, туй пуласса ҫеҫ кӗтеҫҫӗ.

Акӑ сана хайхи туй!.. Закир хӑй каларӗш, тӗнчери пӗтӗм лару-тӑру пӑсӑлса кайрӗ.

Симӑна киле ӑсатсан, трактора лайӑх пӑхса тухсан, тӳрлетмеллине тӳрлетсен, Зоя чиперех ӗҫе тытӑннӑччӗ. Ирхи сӑра тӗтре те сирӗлнӗччӗ, ҫанталӑк кӗр енне сулӑннӑ пулин те, хӗвел хӗртсех пӑхма тытӑннӑччӗ.

Зоя ҫапла кӑнтӑрлачченех чиперех ӗҫлерӗ. Унӑн тракторӗ фрезисене хӑвалтӑн ҫаврӑттарса, пайтах торф кӑларчӗ. Пушӑ вагонсене шалтӑртаттарса, инҫетри участока торф тиеме каякан Петя-машинист, Зоя тӗлне ҫитсен, саламласа пӑравусне хыттӑн кӑшкӑртрӗ. Тата тем хӑй те кӑшкӑрчӗ пулас вӑл, Зоя унӑн сассине илтеймерӗ. Лешӗ кепкине хывса сӗлтнӗ май хӗр-тракторист ӑна сӑмса тутри варкӑштарса ответ пачӗ.

Кӑнтӑрла тӗлӗнче Зоя хӑйпе чиксе килнӗ ҫӑмартапа помидора трактор ҫинчен анмасӑрах ҫырткаларӗ те ҫӗнӗрен ӗҫлеме пикенчӗ. Кӗҫех унӑн, пӗр путӑк вырӑнта хывнӑ эстакада урлӑ каҫса, малалла иртмелле пулчӗ. Ытти тракторсем те иртсе ҫӳренӗ ку вырӑнтан, тӑватӑмкун Закир та хӑйӗн стилочнӑй машинипе каҫса кайнӑ,—ун чухне нимле инкек те пулманччӗ. Виҫӗмкун талӑкӗпех ҫумӑр ҫурӗ ҫав. Тата эстакади те ҫӗршӗннӗ пулас?! Шӑпах ун урлӑ каҫса ҫитнӗ чухне Зойӑн тракторӗ ҫемҫен лӑчӑ-ӑр анса ларчӗ те сӑмсипе ҫӑра пылчӑк ӑшне тӑранчӗ.

Зоя чӗри кӑртах турӗ, вӑл трактор гусениципе юнашар ҫаврӑнса выртнӑ хуҫӑк пӗрене ҫине сиксе анчӗ. Ҫук, кунта пӗр секунд та чарӑнса тӑма юрамасть! Аван-ха, трактор моторне сӳнтермен. Зоя трактор ҫине йӑпӑр-япӑр улӑхрӗ те машинӑна малалла ямалли рычага вӑйлӑн хирчӗ. Кӗрнеклӗ машина пӗтӗм улӑпла хапипе малалла ывтӑнам пек турӗ, тискеррӗн кӗрлесе илчӗ, унтан, сунаса ернӗ ҫын пек ачхулатса, чыхӑнса ларчӗ.

Зоя халь-халех макӑрса ярас патне ҫитрӗ, унтан пичӗ тӑрӑх шӑпӑртатса юхан тарне комбинезон ҫаннипе шӑлса илчӗ те йӗри-тавра ҫаврӑнса пӑхрӗ. Лере Закир хӑйӗн машинипе, тӗнчере ним пулман пекех, пӗр тикӗссӗн ӗҫлет. Авӑ типӗ торф куписем патӗнче Петя-машинистӑн вӑрӑм составӗ тӑрать, ӑна тиесе те пӗтереҫҫӗ пуль ӗнтӗ. Мӗн тумалла-ха? Ҫывӑхра ҫынсем те ҫук. Торф участокӗсем кӑна таҫтан-таҫтан тӳп-тӳрем улӑх пек сарӑлса выртаҫҫӗ. Ҫавӑ ҫав, механизмсем нумайланнӑранпа торф участокӗсенче ҫынсем пӑчпач ҫеҫ курӑнакан пулчӗҫ.

Ним тума аптранӑ Зоя трактор хыҫнелле пӑхрӗ. Ара, эстакадӑна леш вӗҫӗнчен, трактор иртсе килнӗ ҫӗртен, сӳтме пулать-ҫке! Унти пӗренесене илмелле те гусеницӑсем айне хире-хире чикмелле. Тӗрӗссипе, трактор умне ҫӗнӗрен эстакада хывмалла.

Халтан кайнӑ хӗре пӗр самантрах «чун кӗчӗ». Вӑл эстакадӑн тепӗр вӗҫӗнчен малтанхи пӗренене илчӗ те ӑна трактор гусеници айне хирсе хучӗ. Вара пӗрене хыҫҫӑн пӗрене куҫарса, трактор умне ҫул сарма пикенчӗ. Ҫитет те пуль?..—Зоя трактора хута ячӗ, анчах гусеница айне хирсе хунӑ чи малтанхи пӗрене яшт ҫӗкленчӗ те тӳрех машинӑна пырса ҫапрӗ. Пӗтрӗ пуҫ! Мотора ҫӗмӗрчӗ пулсан?.. Юрать-ха, капота ҫеҫ имретнӗ.

Зоя машинӑна татах та татах вырӑнтан хускатма тӑрӑшать. Урса кайнӑ тискер кайӑк пек мӗкӗрет трактор, анчах пӗр шит те малалла туртӑнаймасть. Ҫак вӑхӑтра, пӗтӗм тӗн-

чене манса тăрмашакан хĕр сисмен те, унăн тракторĕ патне Закир килсе тăнă иккен. Петя-машинист та, эстакада çинче тем иннек пулнине кура, хăйĕн тиевлĕ поездне чарса лартнă.

Тем самантра Зоя трактор кабининчен аяккалла çавăрăнса пăхрĕ. Юнашарах Закир тăнине курах кайрĕ вăл. Петя-машинист та пăравусĕнчен пуçне кăларса пăхать. Нихăшĕ те нимĕн те чĕнмест. Вĕсене курсан, Зойăн чĕри сасартăк вут хыпнă пек пĕçерсе кайрĕ. Пĕтĕм вăйран газ пачĕ Зоя. Мотор хаяррăн кĕрлесе илчĕ те лап сÿнчĕ.

Эх, çав Закирăн йĕплĕ куçĕсем! Çитменнине, вăл ним шарламасăр тăнă пулсан, пыра та пырĕччĕ. Вăл, шурă шăлĕсене кăтартса, йăл кулчĕ те:

— Мĕнле-ха ăна, чăваш туйĕсенче çапла юрлаççĕ-и-ха?—тесе ыйтрĕ, унтан хăйĕн уçă та витĕмлĕ сассипе юрласа ячĕ.—Тухать-и те тухмасть-и, тухать-и те тухмасть-и? Эпир киле каятпăр, эпир киле каятпăр...

Ку çеç те мар-ха, Петя-машинист Закир юррине çавăнтах ярса илчĕ:

Ай, кинĕм-пукане,<br>
Пĕчĕк Зойăм-пукане,<br>
Епле пула пĕлнĕ-ши?<br>
Епле пула пĕлнĕ-ши?

Тулса çитнĕ витрене пĕр тумлам шыв пек пулчĕ ку. Çук, ăçтан тÿсĕн-ха ку мăшкăла? Зоя хăй те сисмерĕ, тем вăхăтра сиксе анчĕ вăл трактор çинчен, темле майпа пылчăклă торф чăмакки ярса тытрĕ... Çатлатнă сасă çеç илтĕнсе юлчĕ унăн хăлхине.

Анчах, мĕн шуйттанĕ? Закир çаплах кулать. Питĕнчи пылчăка çанăпа сăтăрнăçемĕн унăн шăлĕсем шуррăнрах курăнаççĕ. Вăл хайхи çапла шăлăнса тасалчĕ те Зоя патнелле ним пулман пекех утса пычĕ. Петя-машинист, ахăлтатса кулса ярса, вăраххăн гудок пачĕ,—сывă пулăр та чипер юлăр!—тенĕ пек.

— Зо-оя-джан,—терĕ Закир, аллине хĕр хулпуççи çине лăпкăн хурса,—эсĕ пылчăкпа перкелешсе выляма та пĕлетĕн-çке. Шутламанччĕ.

Зоя чĕнмест... Вăл пуçне трактор моторĕ çине хунă та унăн хулпуççийĕсем кăна сиккелеççĕ. Çакна кура, каччă та шÿт тума пăрахрĕ.

...Халĕ те ăнланмасть Зоя: мĕнле пулса тухрĕ çав пăтăрмах? Мĕнле пулса тухрĕ?..

Ним пулман пекех, Закир ăна трактора лачакаран кăларма пулăшрĕ. Анчах вĕсем, тем вăхăт пĕрле тăрмашса та, пĕр-пĕрне сăмах чĕнмерĕç. Зойăн тракторĕ «хырăмĕпе» эстакада çвайĕнчен çакланнă пулнă-мĕн. Çавна та чи малтан Закир асăрхарĕ. Вăл, улăп пек вăйлăскер, машинăна вăрăм пĕренепе хирсе çĕклерĕ. Тухрĕ машина, лачакаран чиперех тухрĕ. Çапах та, Закир, хăйĕн тĕксĕмленнĕ куçĕсемпе Зойăна тÿрех куçран тинкерсе пăхса:

— Кун пек чух çынна тав тăваççĕ,—тесен те, Зоя ăна хирĕç пĕр сăмах та чĕнмерĕ.

— Юрать,—терĕ вара Закир, унтан пуçне чикрĕ те хăйĕн стилочнăй машинни патнелле утрĕ.

Çапла сÿнчĕ-ши ĕнтĕ икĕ чĕрери вĕри кăвар? Чим, мĕн ку?.. Кантăкран шăкăр-шăкăр шакканă пек илтĕнчĕ. Пуçне икĕ аллипе тытса, сĕтел умĕнче чавсаланса ларакан Зоя вăртах чÿрече еннелле çаврăнчĕ. Тулта тĕттĕмленнĕ. Çапах та... Зоя лайăххах курчĕ: кантăк умĕнче Закир тăрать. Кăрт туса илчĕ хĕр чĕри. Вăл кĕçех—Закир!—тесе кăшкăрса яратчĕ, анчах вăрт-варт ура çине сиксе тăчĕ те чÿречe каррине пĕрех карса лартрĕ. Хăй çавăнтах тата шикленсе те ÿкрĕ:

— Мĕн тăватăп-ха эпĕ, айван? Мĕн тăватăп?

Читлĕхре тунсăхласа çитнĕ кайăк пек, вăл тулалла вăркăнчĕ. Тулта никам та çук. Пăрахса кайнă Закир, пăрахса кайнă! Вăл вара каялла çаврăнса кĕчĕ те, пÿлĕмне питĕрсе, татах урамалла тухрĕ.

Ĕнтĕ унăн, çĕре выртса, пĕчĕк ача пек ÿлес килет. Ниçталла пăхмасăр, урăх никама асăрхамасăр, ик куç тулли тулса килнĕ куççульне шăлмасăр, Зоя вăраххăн вăрманалла, Атăл хĕрринелле утрĕ. Каç пулнипе мар, чĕри пăшăрханнипе, пуçĕнчи шухăшсем тĕтреленнипе, уншăн халĕ пĕтĕм çут тĕнче тĕттĕмленсе ларнă пек туйăнчĕ.

Çапах та йăлăмра ырă. Кĕрхи сулхăн сывлăш пăчлан- са çитнĕ кăкăра ерипен те пылаккăн уçăлтарать. Çулсăр-мĕнсĕрех поселокран тухса, çулсăр-мĕнсĕрех вăрман витĕр пырса, Зоя çÿлĕ сăртлăха çитсе тăчĕ. Лере, Атăлăн сылтăм енче, каçхи хула ялкăшса ларать. Тĕлĕнмелле! Çак самантра Зойăна хăйĕн тăван хулине малтанхи хут курнă пекех туйăнса кайрĕ. Тĕлĕнмелле, чăн та тĕлĕнмелле! Хула çине вăл халиччен нихçан та паянхи пек пăхман. Хăнăхнă. Хула ĕмĕр-ĕмĕр çавнашкал пулнă пек курăннă.

Анчах ăçтан çавнашкал пултăр-ха! Авă лере пир-авăр комбиначĕ тем пысăкăш карап пек ялкăшать. Карап терĕ! Чăн-чăн тинĕс карапне Зоя халиччен курман та-ха. Илемлĕ, юмахри пек илемлĕ хула. Унăн çути аякранах хĕр пичĕ çине ÿкет. Хĕр шухăшлать. Кăнтăрлахи мĕнпур кÿренÿсем каçхи сулхăн варкăшпа вĕçсе кайрĕç ĕнтĕ. Пуçра ырă-ырă шухăшсем. Чăн та тĕлĕнмелле! Таçтан-таçтан ялкăшса курăнакан пир-авăр комбинатĕнче те Зоя пек чăваш хĕрĕсемех ĕçлеççĕ. Вĕсем тин кăна ялтан килнĕ-ха. Зоя ĕнтĕ кунта нумайранпа ĕçлет. Пилĕк çул вăл торфри «кĕреçе çарĕнче» пулнă. Халĕ трактористка-фрезеристка... Çапла, фрезеристка... Зойăн чĕри сасартăк татах ыратса каять. Пĕтĕм шăмшакĕ пĕçерсе килнипе вăл пуçĕнчи тутрине те хулпуççи çинелле туртса антарать. Ах, Закир, Закир! Мĕн туса хутăм эпĕ? Аннене мĕн çырса ямалла халь ĕнтĕ?

Таçта радио кĕрлени илтĕнет. Канмалли çурт территорийĕнче пулас?!. Чим, мĕскер ку? Чăвашла юрлаççĕ мар-и? Çапла, чăваш халăх юррисем. Ăçтан параççĕ-ха ку концерта? Зоя аллинчи сехечĕ çине пăхса илет. Тĕлĕнмелле, хула çутипе сехет йĕпписем те питĕ лайăх курăнаççĕ. Сакăр сехет те çитмен иккен,—тĕттĕм пулнă. Акă кĕрхи кунсене те кĕтсе илтĕмĕр. Кĕçех сезон пĕтет. Сезон пĕтсен... Ха, мĕскер япала ку? Радио «Тухать-и те тухмасть-и» юрра шăрантарать. Хăйне хăй ĕненмесĕр, Зоя хăйĕн чĕрери мĕнпур тимлĕхĕпе итле пуçларĕ. Ăсран кайман-ши эпĕ? Çук, чăнах та çав юррах юрлаççĕ.

Тавай пире япала,<br>
Тавай пире япала,<br>
Трантас кашти авниччен,<br>
Трантас кашти авниччен...

Пĕтĕм аслă йăлăм çийĕн янăрать авалхи чăваш юрри, чĕрене витерет, чуна хускатать.

Çак тĕлĕнмелле япала тĕлĕкре пулса иртмест-ши тесе те шухăшларĕ Зоя. Çук, тĕлĕкре мар. Акă вăл Атăл енчен сулхăн çил вĕрнине те лайăх туять, кĕрхи шултра çăлтăрсем хулари çутăсемпе ăмăртмалла ялкăшнине те курать. Пулаççĕ те иккен этем пурнăçĕнче çакăн пек тĕлĕнмелле самантсем!

— Тухать-и те тухмасть-и?—такампа тавлашнă пек, сасăпах каларĕ Зоя.—Кăтартăпăр-ха эпир епле тухассипе тухмассине!

Çак сăмахсемпе вăл каялла вăрт çаврăнчĕ те... Закира тĕлех пулчĕ.

— Закир?

— Эпĕ...

— Епле-ха эс?..

— Çаплах... Эс Атăл хĕрринелле утнине куртăм та—сан хыçранах... Пăшăрханнă çын тепĕр чух кукăр çулпа каять...

— Э, Закир, Закир! Ăçталла утăп-ши эп?—Зоя, урăх тÿссе тăраймасăр, пуçĕпе йĕкĕтĕн сарлака кăкăрĕ çумне пăчăртанчĕ. Закир хăйĕн сулмаклă аллипе хĕр çурăмĕ çине çемçен кăна хучĕ. Иккĕшне те вĕсене ăшшăн-ăшшăн туйăнса кайрĕ...

Унтан Закир хăй çумĕнчи хĕре икĕ хулĕнчен тытрĕ те питне хула еннелле çавăрчĕ. Нумайччен-нумайччен пăхса тăчĕ вăл çапла Зойăна,—пуçĕ çаврăнма тытăнниччен пăхрĕ.

— Санăн ылттăн алкусем хула çутипе ялкăшаççĕ, куçăнта та—хула çути,—терĕ вăл шăппăн.—Чухлатăн-и, Зоя-джанăм, çав çутта эпир парса тăратпăр. Эпир—торфяниксем! Вăт мĕскер! А эс калаçатăн...

Каччă аллинчи хĕр чеен кăна йă-ăл кулчĕ.

— «Тухать-и те тухмасть-и» юрра тек юрламăн-и?—ыйтрĕ вăл çавăн пекех шăппăн.

— Мĕншĕн юрлас мар? Сезон пĕтсен акă мĕнпур йăлăма янăратсах юрлатпăр-ха!..

Çапла çеç пулчĕ каччă сăмахĕ.

# САЛАМПИ

*Повесть**

Александр АРТЕМЬЕВ

## КĔРХИ ШАНАСЕМ

1948 ҫул. Кĕркунне...

Вăрçă иртнĕренпе виçĕ ҫул ҫитрĕ. Çĕршыв каллех вăй илчĕ, пурнăç лайăхланса кайрĕ.

Анна Ивановна хваттерĕнче те лару-тăру улшăнчĕ. Карчăк пÿрте тĕпренех юсаттарчĕ, ҫĕрнĕ чÿрече янахĕсем вырăнне ҫĕнĕ янахсем ларттарчĕ, кăвакарнă хăвăл пĕренесене кăларса, ҫирĕп пĕренесем хуртарчĕ, шултăрканă мачча хăмисене, урай хăмисене хĕстерчĕ, кăмакине пăсса купалаттарчĕ— текех ĕнтĕ мачча та кăвакарас ҫук, пÿрт те тарлас ҫук, чÿрече янахĕнче те шыв кÿлленсе тăрас ҫук, урайĕнчен те сивĕ ҫапас ҫук, кăмакаран та тĕтĕм тухас ҫук. Пÿрт каллех — таса, ăшă, илемлĕ. Малти пÿлĕм аслăланчĕ: тем чухлĕ вырăн йышăнакан пысăк арчана коридора кăларчĕç, ун вырăнне пĕчĕк койка лартрĕç (мăн арчи ҫинче малтан икĕ Нина ҫывăратчĕç). Пысăк Нина вĕренсе тухса кайнăранпа хваттерте Саламписе Пĕчĕк Нина ҫеç юлчĕç, карчăк урăххисене хваттере ярас темерĕ. Хăй вăл кухньăна пурăнма куçрĕ, койкине те унтах вырнаçтарчĕ. Халĕ ĕнтĕ унăн май килчĕ: магазинсенче тем тĕрлĕ ĕçме-ҫиме те пур, пасарта апат-ҫимĕç вăрçă вăхăтĕнчи пек хаклă мар— ҫавăнпа та ҫĕнĕ плита пĕр таттисĕр ҫунма пуçларĕ.

Анна Ивановна патĕнче каçсерен пухăнма юратнă ҫамрăксенчен чылайăшĕ хулара ҫук ĕнтĕ; вĕсен пурнăçĕнче те улшăнусем пулкаларĕç. Пысăк Нинăпа Казакова, институт пĕтерсе тухнă хыççăн, иккĕшне икĕ района зоотехник ĕçне ячĕç. Савнисене ку ытлашши кÿрентермерĕ. «Уйрăм пурăнса пăхар эппин пĕрер ҫулталăк: тутлă-и, йÿçĕ-и? Ку пирĕншĕн пысăк экзамен пулать. Пĕр-пĕринсĕрех пурăнма лайăх пулсан—пĕрне-пĕри савман; пĕр-пĕринсĕр пурăнма май ҫук пулсан — хытă юрататпăр», терĕ шÿтлесе Казаков. Семен Саланов хăйсен ялĕнчи садра ÿсĕмлĕн ĕҫлет, ун ҫинчен хаçатсенче ырласа ҫыра пуçларĕç. Анатолий Алмазов консерваторире вĕренет, унăн хăшпĕр юррисене концертсенче юрлаçҫĕ. Муза Любимова, пединститутра вĕренме пăрахса, музыка училищине куçрĕ, артистка пулса пысăк хуласем тăрăх ҫÿреме шут тытрĕ, «пĕр-пĕр Калайкассинче учительте пăчăхса пурăнассăм ҫук», терĕ. Леон Вирьялов учительтен тухса вĕренме килчĕ; вăл университет пĕтерейпен иккен, ҫавăнпа ăна малтанхи енĕпех, ялхуҫалăх институтне вĕренме кĕрет пулĕ тетчĕç, анчах вăл пединститута, литература факультетне, килсе кĕчĕ. Саламписе Пĕчĕк Нина виççĕмĕш курсра вĕренеççĕ.

Икĕ ҫул хушшинче Саламписе пурнăçĕнче нимех те пулса иртмерĕ темелле. Институтра пĕрмай вĕренÿ, ĕç, каникулсенче яла таврăнсан — каллех ĕç, вĕренÿ. Паллах, киносене, театрсене, тĕрлĕрен вечерсене ҫÿренĕ, кроссене, воскресниксене хутшăннă, колхозра халăхпа пĕрлех савăннă та, ĕçленĕ те. Çапах пĕтĕм пурнăҫа тепĕр майлă ҫаварса яракан е ĕмĕр асра юлакан ĕçсем пулса иртменччĕ. Кăҫал кĕркунне, кĕске вăхăтрах, студентка пурнăçĕнче шăпах ҫав ĕçсем пĕрин хыççăн тепри пулса иртрĕç.

Театр тесен, мĕнле хĕр чунĕ лăпкă пултăр? Студентсем театра тунтикун каç каяççĕ: вăл кун ятарласах вĕсемшĕн йÿнĕ билетсем сутаççĕ. Кăнтăрлах культорг билетсем илсе хурать те, каçхине вара студентсем ушкăнăн-ушкăнăн шавласа театра пырса тулаççĕ. Кайран пĕр-пĕр спектакль пирки вĕсем эрнипех калаçаççĕ, тавлашаççĕ, харпăр хăй шухăшне тÿрре кăларма тăрăшаççĕ. Театра каймалли кун вĕсемшĕн праçник пекех, уйрăмах вăл янкăсрах студенткăсене нумай чăрмав кÿрет: мĕнле платье тăхăнасси, ҫÿçе мĕнле тураса илемлетесси — йăлтах вĕсене пăлхантарать.

Саламписе «кăвакарчăн куçĕ» чечеклĕ вăрăм платье тăхăнчĕ, ҫырă ҫивĕтне пуçĕ тавра икĕ хутчен чĕркесе, «кăшăлласа» ҫыхрĕ.

— Мĕнле каччă савăнĕ-ши сана юратса!—терĕ ытараймасăр Анна Ивановна.— Воспăти, мĕнешкел хитре! Эпĕ те хĕр чухне санран хÿхĕм пулман пулĕ... Килĕшет сана, Саламписе, кăвак чечеклĕ платье: куçусем ҫине платье тĕсĕ ÿксе пушшех илемлетет.

Саламписе тĕкĕр ҫине пăхса илчĕ те кăмăллăн йăлкăшса кулчĕ. Вăл куçхаршисене хуратасшăнччĕ, анчах карчăкран вăтансах хуратмарĕ, «каплипе те пырĕ-ске, нихçан та хуратса ҫÿремен», терĕ, хăй ăшĕнче савăнса. Вара, Нина килессе кĕтсе, вулама ларчĕ; карчăк, ăна чăрмантарас мар тесе, кухньăна тем пĕçерме тухрĕ.

Пĕчĕк Нинăпа Вирьялов пĕрле килсе кĕчĕç. Каччă Саламписе ҫине пăхрĕ те тĕлĕнсе хытнă пек пулчĕ. «Ытараймастăп! Ытараймастăп сана, хитре пикеçĕм!» терĕç унăн куçĕсем. Хăй ним чĕнмесĕр хĕр умне пырса, ăна ташлама чĕннĕ пек, пуçне артистла илемлĕн тайрĕ, аллине меллĕн тăсса пачĕ.

«Ытараймастăп сана, ку ҫи-пуçупа эсĕ никамран та илемлĕ!» терĕç каллех унăн куçĕсем. Саламписе ҫавна ăнланчĕ те, хăйне ҫапла юратнăшăн та, каччă ун умĕнче сăпайлă пулнăшăн та савăнса кайрĕ. «Ларăр, Вирьялов», тесшĕнччĕ вăл, анчах ҫак самантра хушаматран чĕнсе кÿрентерес килмерĕ, ятран чĕнме кăштах именчĕ, ҫавăнпа:

— Ларăр тархасшăн,— терĕ. Аллинчи кĕнекине хупса, шкапа хучĕ.

Вирьялов кăвак шлепкине алăрах тытрĕ, пăтаран ҫакмарĕ, хăмăр макинтош аркисене кăштах ҫĕклерĕ, ларас вырăна, унта тем таса мар япала пур пек, асăрханса пăхса илчĕ те васкамасăр ларчĕ, хура бостон костюмĕ ҫинчи куҫа курăнман ҫÿппе вĕрсе, шăлса ывăтрĕ. Ытти чухне Саламписе ҫакна йăлтах сивленĕ пулĕччĕ-и, тен. Анчах кĕçĕр ăна — питĕ савăк, питĕ лайăх; унăн никампа та, нимшĕн те хирĕçес килмест, никама та, нимшĕн те тиркес килмест. «Курăр, эпĕ епле илемлĕ, ҫапах сăнăмпа мухтанмастăп, ҫынна та тиркеместĕп, мана та эсир ан тиркĕр; эпĕ таса та ҫамрăк, хаваслă та телейлĕ; эпĕ хам пултарнă таран сире те телейлĕ тăваттăм», тет унăн йăлкăшса тăракан сăн-пичĕ. Çак самантра хĕр хăйне кам мĕнле юратни ҫинчен те, камăн юратăвĕ мĕнпе вĕçленесси ҫинчен те шутласшăн пулмарĕ, каярахпа хăй ÿкĕнсе, «юрату—тăван анне мар, амаçури вăл», тесе каласса та пĕлмерĕ.

Театра вăл питĕ ырă кăмăлпа тухса кайрĕ.

— Ма яшка ҫимесĕр кайрăр? Ма ҫимесĕрех кайрăр!—тесе юлчĕ кухньăра Анна Ивановна. Çамрăксем тарават карчăка илтесшĕн те пулмарĕç. Апат шухăшĕ-и халь?

Театрта Вирьялов хăйне чăн-чăн кавалер пекех тыткаларĕ. Вăл гардеробра Саламписе Нина пальтисене хывса ҫакма пулăшрĕ, хĕрсене чи малти рете ҫавăтса пырса лартрĕ, концерт программи тупса пачĕ.

Кĕçĕр театрта — ҫамрăк талантсен вечерĕ.

Театрти ҫамрăк артистсем тĕрлĕрен пьеса сыпăкĕсене выляççĕ, ҫамрăк поэтсем хăйсен сăввисене вулаççĕ, ҫамрăк музыкантсем, юрăççсем хăйсен пултарулăхне кăтартаççĕ. Программăра Муза Любимова ячĕ те пур, вăл икĕ юрă юрласа парать. Пĕри — Алмазов юрри...

Саламписе чĕри театрта яланах кăкăр тулли сикнĕн туйăнатчĕ, анчах кĕçĕр вăл пушшех, театрта пĕрремĕш хут пулнă пекех, пăлханать. Ăна кĕçĕр ҫак йăлтăртатакан люстрăсем те, партерти, ложăсенчи, балконсем ҫинчи студентсем те — йăлтах, йăлтах хаваслăн, мăнаçлăн курăнаççĕ. Малалла, чаршав уçăлсанах, сцена ҫинче темле асамлă тĕнче курăнса каяссăн туйăнать. Тем самантра Саламписе Лев Толстойăн «Война и мир» романĕнчи Наташа Ростова пĕрремĕш хут бала лексен мĕнле пăлханнине аса илчĕ те телейлĕн кулса ячĕ. Хăйне хăй вăл ирĕксĕрех Наташăпа танлаштарчĕ.

---

* *Малалли. Пуçламăшĕ 5 –8 №-че.*

— Мĕн аса илтĕр?—тесе ыйтрĕ хĕрĕн кашни хусканăвне асăрхаса ларакан Вирьялов.

— Нимех те мар, ахаль çеç култăм, питĕ савăк мана.

Вирьялов кăшт çеç сисĕнмелле унăн хулĕ çумне сĕвенчĕ, — тăвăр пирки Саламппи шуçса лармарĕ. Каччă ăна урăхла ăнланчĕ пулас.

Малтанхи отделенире тĕрлĕрен спектакльсен уйрăм сыпăкĕсене вылярĕç. Саламппи питĕ тимлĕ пăхса ларчĕ, халăхпа пĕрле кулчĕ те, хурланчĕ те. Вирьялов сцена çине пăхнинчен ытларах Саламппие сăнаса ларчĕ. Антракт вăхăтĕнче вăл хĕре хулĕнчен ачашшăн çавăтса, вестибюле илсе тухрĕ, çынсем хăй çине пăхнине сиссе киленчĕ, паллакансене мăнаçлăн пуç тайса çеç саламларĕ, сăмах хушмарĕ. Хĕре ку хытах ӑментерчĕ пулин те, вăл ăна-кăна систересшĕн пулмарĕ.

— Пăчă мана,—терĕ хĕр, каччă хулĕнчен вĕçерĕнес тесе.

— Тула тухса уçăлмăпăр-и, иккĕмĕш отделени часах пуçланмасть-ха. Халĕ Атăл хĕрринче питĕ илемлĕ, тен, кăштах уçăлса çӳрĕпĕр,— терĕ Вирьялов.

Саламппи килĕшрĕ. Вĕсем иккĕшех Атăл хĕррине тухрĕç.

Аслă шыв театрпа юнашарах юхса выртать. Хĕрпе каччă чăнкă çыран хĕрринчи пĕр лаштра тирек айне пырса тăчĕç. Вирьялов йывăç карлăк çине таянчĕ те, тем шухăша кайса, тĕттĕм Атăл çинелле пăхса тăчĕ, унтан йывăррăн сывласа илчĕ.

— Çак тополь тураттинчен ĕлĕк пĕр поэт çакăнса вилнĕ,— терĕ.

Саламппи ăна илтмерĕ пулас, вăл хăйĕннех тем шухăшларĕ, тĕрĕссипе каласан, унăн кĕçĕр нимле салхуллă ĕç çинчен те асăнас килмерĕ, чĕринчи ырă туйăмĕсене нимле йывăр хыпарпа та сирсе ярас килмерĕ. Атăл çинчен кĕрхи уçă çил вĕрсен, вăл кăштах çӳçеннĕ пек пулчĕ; Вирьялов унăн хусканăвне сисрĕ те çавăнтах макинтошĕпе хĕре ачашшăн хупларĕ. Саламппи шарламарĕ, вăл, Атăл леш енче курăнакан çутăсем çинелле тинкерсе пăхса, тем шухăшлать.

— Саламппи,— терĕ каччă хуллен.

— Калăр, Леон, итлетĕп. Вулăр пĕр-пĕр лайăх сăвă... кĕрхи Атăл çинчен... çамрăклăх çинчен... телей çинчен... юрату çинчен...

— Саламппи... Савниçĕм... Ĕмĕрлĕх юрататăп... ĕмĕрлĕх!..

Каччă тĕттĕмре хĕр аллине шыраса тупрĕ те ăна ĕмсе ярас пек чуптурĕ. Саламппи тинех хăйĕн тутлă ыйхинчен хăраса вăраннă пек пулчĕ, аллине карт! çеç туртса илчĕ те пальто кĕсйине чикрĕ, витнĕ макинтоша хулпуççийĕпе сирсе ячĕ.

— Атя, кайăпăр... сулхăн кунта...

— Пĕр сăмах çеç, Саламппи!—терĕ Леон йăлăннă сасăпа, унтан такăнатакăна каларĕ:—Пулăр ман мăшăр... сире пĕрре курсах... ĕмĕр манми... пулăр манăн!..

Саламппи вăрт çеç çаврăнчĕ те театр еннелле утрĕ. Пĕр самантра ун пуçне тĕрлĕ шухăш çавăрчĕ, хĕр тем тĕслĕ шутласа илме те ĕлкĕрчĕ, анчах пĕр шухăшĕ те пуçра тытăнса юлмарĕ, уçăмлă пулмарĕ. Вирьялов пек хӳхĕм каччă хăйпе мăшăрланма ыйтни темле хĕре те пăлхантарса ямалла ĕнтĕ. Саламппишĕн ку кĕтмен япала та марччĕ. Леон тахçантанпах хăй юратнине систерме тăрăшатчĕ, анчах паян вăл кун çинчен тӳрĕ каларĕ, хăй мăшăрланма шутлани çинчен те пĕлтерчĕ. Çавăнпа Саламппи малтанлăха ним калама аптраса ӳкрĕ.

— Ан пăшăрханăр, мана чĕресĕр тесе ан шутлăр... Эпĕ сире кăшт çеç пĕлетĕп. Кăмăллă эсир, сăпайлă, культурăллă... Тен, ман йышши хĕр сире юрăхсăр та пулĕ... Çапах сире сăмах пама пултараймастăп халĕ. Тăхтас пулать манăн вĕренсе пĕтериччен ун çинчен калаçма,— терĕ хĕр, ним чĕнмесĕр пыракан Вирьялова кăшт йăпатас шутпа. Кайран вара хăй çапла каланишĕн питĕ ӳкĕнчĕ...

— Каçарăр, если кӳрентертĕм пулсан,— терĕ Вирьялов театр умĕнче.— Эпĕ хама кĕçĕртен самый телейсĕр çын тесе шутлатăп. Каçарăр мана... пардон!

Саламппи кăшт çеç кулса ямарĕ. Çак тахçан килĕшнĕ «пардон», каччă «нумай вĕреннине систерекен», вăл «пысăк культурăллине» кăтартакан сăмах (Саламппи те, Музăпа пĕрле, çапла шутлатчĕ) халĕ ăна питĕ кулăшла пек, мĕскĕн пек туйăнса кайрĕ.

Хывăнмалли пӳлĕмре Вирьялов, ним пулман пекех, Саламппи пальтине хывса çакма пулăшрĕ. Концерт пуçланнă пирки зала кĕмелли алăка хупнă, çавăнпа каччă хĕре, каллех хултан меллĕн тытса, иккĕмĕш хута илсе хăпарчĕ. Балкон çине тухмалли алăка та питĕрнĕ-мĕн, çурма тĕттĕм залăн пĕр кĕтесĕнче, буфетри сĕтел хушшинче, иккĕн çеç сăра ĕçсе ларaççĕ, буфетчица та концерт итлеме зала кĕнĕ пулмалла.

Буфетра лараканскенчен пĕри, жилеткăллă сарă костюмли, сасартăк пуçне çĕклерĕ те:

— Вирьял! Лео Вирьял!—тесе кăшкăрса ячĕ, çавăнтах сиксе тăрса, лутраскер, Саламппипе Вирьялов патне лапăстатрĕ, вĕсене алă парса тăмасăр, сĕтел умне çавăтса пычĕ те:

— Паллашăр, ку — профессор Чушков,— терĕ. Кăна вăл те шӳтлесе, те чăнласах каларĕ —Саламппи ăнлансах илеймерĕ, вăл халиччен кун пек профессор пуррине пĕлместчĕ.

Вирьялов артистла илемлĕ пуç тайрĕ, кулкаласа алă тăсрĕ.

«Профессор» тени, хăнчăр куçлă самăр этем, хĕрĕхелле çывхарнăскер, Саламппи çине сăра кĕленчисем урлă лӳперрĕн пăхрĕ те, ларнă çĕртен тăмасăр, хĕре мăнкăмăллăн алă пачĕ.

— Саламппи,— терĕ Вирьялов, хĕр ятне çепĕççĕн пĕлтерсе.

— М-да,— терĕ Чушков, сăмсапа нĕрлесе,— м-да, интереснăй ят. Бальзакăн «Саламппи» ятлă роман пурччĕ пулас.

— Флоберăн,— йăпăлтатса пĕлтерчĕ Вирьялов,— Флоберăн... «Саламбо», эпĕ ăна тахçан вуланăччĕ.

— Эсĕ гений, Лео!—кăшкăрса ячĕ лутри.—Ларăр, мĕн тăратăр! Лео, кала, укçа пур-и?



# Çамрăк ăстаçăсем

**Пĕр-пĕр хитре япалана курсан, камăн чунĕ савăнмĕ!.. Вĕсем пирĕн пурнăçа илем кӳреççĕ.**

**Сăмахран, кашни çын килĕнче тĕл пулакан куллен кирлĕ япаласенех илер: сĕтел-пукан, шкапсем, этажеркăсем... Паллах, çав япаласене паха йывăçран тунă пулсан—пит аван, анчах вĕсене илемлĕ сăрсемпе сăрласа тата касса эрешлесен, пушшех кăмăла каять.**

**Ăсталăхсăр нимĕнле япала та тума çук. Илемлĕрех, хитререх тăвас тесен, ăсталăх тата ытларах кирлĕ; ăсталăха—ачаран вĕренмелле.**

**Пирĕн çамрăксене ал ĕç ăсталăхне вĕрентес тĕлĕшпе Канаш хулинчи Пионерсен çурчĕ паха пуçару турĕ. Кунта драма, хор тата авиамоделистсен кружокĕсемпе фотокружок кăна мар, хĕрачасем валли—тĕрĕ тĕрлеме, арçын ачасем валли—йывăçран тунă япаласене илемлĕ касса эрешлеме вĕрентекен кружоксем те пур.**

**«Пултаруллă алăсем» кружока 12—14 çулхи арçын ачасем çӳреççĕ. Вĕсем кунта циркульпе, линейкăпа, тĕрлĕрен кăткăс инструментсемпе ĕçлеме, ӳкерчĕксемпе чертежсем тума, йывăçа эрешлес ăсталăха вĕренеççĕ. (Çӳлти ӳкерчĕкре: йывăçран тунă япаласене касса эрешлекен ачасем—Лебедев Лева, Финогеев Юра, Архипов Толя хăйсен çĕнĕ ĕçĕсен пахалăхне сӳтсе яваççĕ.)**

**Ачасем хăйсен ĕçне юратса тăваççĕ, вĕсем кружокра кăна мар, килте те ăсталама тăрăшаççĕ, вĕренӳре яланах малта пыраççĕ. Кăçалхи вĕренӳ çулĕнче «Пултаруллă алăсем» кружока ачасем нумай çырăнчĕç, вĕсен хушшинче аслăрах классенче вĕренекенсем те сахал мар.**

**Аялти ӳкерчĕкре: «Пултаруллă алăсем» кружокри çамрăк ачасем касса илемлетнĕ япаласем.**

Ӳкерчĕксене Канашри Пионерсен çуртĕнчи фотокружок членĕсем тунă.



Вирьялов, хёртен именсе, лутрине шаппан тем каларё,— укça çук, терё пулас.

— Бездарь!—кашкарса такрё ана çавантах лешё, хай куçё çине усанса анна сара варам çÿçне ласт! çеç каялла шалса хучё.— Мускаври литература институтне те кёреймерён, каларам сана, мён çырнине хама катарт малтан, тесе. Йалтах хам туса параттамччё, пичетлеме те пулатчё, халь, ак, саввусене стена хаçатёнче те пичетлемеççё. Мана катартман пулсан та, ака профессора катартмалла пулна.

Чушков, килёшсе, манкамаллан пуç тайрё.

— Каçарар, Саламии, сире паллаштараймарам, ку—Ласкин,—терё Вирьялов, майсар самаха сирсе яма тарашса.

Ласкинё хай камне-мённе каласа тамарё, аллине Чушков пекех манкамаллан тасрё те:

— Пиллёкмёш номёре пахар,—терё.

Саламии ним те анланмарё, тёлёнсе кана ларчё. Аçта, камсем хушшине килсе лекмелле пулчё капла? Тарса каяс—лайах мар, тата ниçта каймалли те çук, антрактчен кётсе ларасах пулать. Ана вайпа тенё пекех Леонпа Ласкин хушшине лартрёç те сара тултарса пачёç. Ласкинё Саламии урлах кашкарса калаçать, сурчакне сирпётет. Вёсем литературапа искусство çинчен тавлашма пуçларёç. Чушковё нумаях калаçмасть, хушаран çеç, самсапа нёрлесе, пёр-ик самах манкамаллан хушса хуркалать. Хайсем калаçна тарах, пёри пьесасем, критикалла статьясем çырма шутлать иккен, тепри «научнай трудсем» çырма шухашлать. Хальхи литературапа искусствана вёсем питё сивлесе калаçаççё.

— Эсё — чаваш литература критикин малтанхи саркайакё,— терё Чушков Ласкина, аллинчи стаканне шалт çаварса хурса.

— Пиллёкмёш номёре пахар,—терё Ласкин, Саламии енне çавранса. Ку ёнтё: «унта пахсанах, эсир эпё чаваш литература критикин малтанхи саркайакё иккенне ёненёр», тенине пёлтерчё пулас.

— Профессор,— терё хай, Чушков аллине чуптуса.— Эсё — гений!

«Аçта лекрём эпё? Камсем кусем? Тен, юри вёсем ман умра çапла шÿтлеççё-и е ытла ÿсёр-и?» шутларё Саламии. Пуринчен ытла ана Вирьялов хайне çак çынсем умёнче именчёклён, йапалтатна пекрех тыткалани, вёсен сарине ёçни питё кÿрентерчё. Хёр халь-халь тарса каяс тенё вахатра зала сасартак, кётмен çёртен... Алмазовпа Саланов килсе кёчёç. Вёсем балкон çине тухмалли алака туртса пахрёç те буфет умне пычёç. Иккёшё те хура костюмпа, галстукпа, иккёшё те темле пёр евёрлёрех. Саламии, вёсене курсан, пёр саванчё, пёр ниçта кайса кёреймй ватанчё.

— Анатоль! Алмазов! — кашкарса ячё Ласкин, каччасене асархасан, çавантах вёсене сётел умне илсе пычё.

Салампие çак çынсем хушшинче курсан, лешсем иккёшё те тёлёнчёç, анчах хайсен туйамне палартмарёç,—вёсем питё тёлённине Саламии чунёпе сисрё.

— Паллашар, ку—Чушков... Профессор, парах эсё сара ланккама! Карланку кёрёк çанни мар пуль-çке санан! Ака—Алмазов! Гений!—терё Ласкин.— Ак ку... Кам пулатан эсё, паллаймарам. Çёнё гений-и?

Анатолий кулкаласа çеç Чушков аллине тытрё те пукан илсе Саламии çумне ларчё.

— Саланов, простой садовод,—терё Çемен, Ласкина ирёксёр ала парса; унан сасси каштах чётренине, сулахай питçамартинче темле тымар туртkalанса илнине Саламии тÿрех асархарё.

— Хавар кам пулатар? Каçарар, эпё те паллаймарам...

— Пиллёкмёш номёре пахар,—терё çеç Ласкин, хушаматне каламасар.

Саланов шалне çыртрё те хёр çумне тепёр енчен ларчё. Вирьялова вал ним каламасар, ирёксёртереххён ала тытрё.

— Эсир, Сема, Шупашкара мён ёçпе?—ыйтрё унран Саламии, хайне хай аван мар пек туйса.

— Ялхуçалах министерствине, хам ёçпе,—терё Саланов, хёр еннелле тайаларах.—Сад ёçёпе... Театра килсе курас терём те кая юлтам ака. Анатолий ятарласах чённёччё...

Килнё каччасене сара тултарса пачёç, анчах кусем иккёшё те ёçмерёç. Кёçех пурте каллех литература, искусство çинчен калаçма пуçларёç. Ласкинпа Чушков чаваш литературипе искусствине питё тиркесе, йёрённё пекрех шултран калаçса ларчёç. Алмазовпа Саланов чёрре кёрсех вёсене хирёç тавлашрёç. Вирьялов е чёнмесёртерех, е чёнсен те лешсем майларах калама тарашрё. Салампие ку питё тарахтарчё, анчах пуринчен ытла ана Саланов хёрсе кайсах тавлашни тёлёнтерчё; çак палла садовод, хайён ёçёшён пётём чунне параканскер, нихçан та литературапа е искусствапа çав териех интересленмен пуль, тесе шутланаччё хёр. Ласкин самах майён Çеçпёл саввисене, Павлов юррисене тиркесен, Саланов пёр хуша шапланса ларчё, унан, палханнипе, сулахай танлавёнчи темле шанар каллех калт-калт! туртанма пуçларё.

— Тамана кантарла курайманшан хёвел айапла мар,—тесе хучё вал юлашкинчен, ура çине тарса. Алмазов та тачё. Çак самантра вёсем иккёшё те Салампие чан-чан тÿрё чунла, пултаруллă, харсар яшсем пек туйанчёç.

Тавлашу тарана кёрсе каятчё-и, тен, кётмен çёртен зала темле хёç пек çÿхе питлё, вёшле хёрарам ытканса кёчё. Вал сётел умне ваштвашт утса пычё те самах вёççён çапаçса ларакан Ласкина енчен-енне шарт-шарт! çупса ячё, унтан «профессор» енне çавранса:

— Сётёрёнчёк! Услап! Чушка! Сысна!—тесе хартса такрё. Каччасем çине шура куçпа пахрё те:

— Мёнле намас мар сире ана ёçтерме!—терё. Хай çавантах Ласкина сётёрсе тухса кайрё. Халё çеç пётём таван искусствана «тепёр майла çаварса яма хатёр критик», «пёрремёш саркайак», ним шарламасар ун хыççан лапаçтатса чупса пычё.

Чушкован мухмарё таçта тухса вёçрё тейён, вал кан-кан пахкаласа илчё те:

— Ват—«сик-сик, тыллам»!—тесе хучё.—Хёрарам мар вал, тимёр тыла! Мёнле чатса пуранать унпа Ласкин? Лешё кашни кун ана çапла сÿс тыллана пек тыллать.

— Кам пулчё вара вал, арамё-и?— ыйтрё унран Алмазов.

— Домашни милици,—терё Чушков, самсапа нёрлесе.—Сире те часах ас вёрентме тытанё-ха вал.

— Мёнле майпа?

— Упашки пичет çурчё таврашёнче çапкаланна пирки ку та унран юласлан мар. Пур собранинче те тухса калаçать, пурне те тиркеме пахать, хай азбуки те путлё чухлимасть. Эсир музыкант вёт? Ак часах сирён произведенисем пирки те: «Ним те анланмалла мар, эпё темиçе хут итлесен те анланимарам», теме тытанать ака.

— Сунас ернё çын чечек шаршине пёлмест,—терё Алмазов.

— Çапах вал чечек курсан, ана татса пахатех,—хирёçлерё Чушков.

— Мён салтавпа?

— Укçа чул кастарать, теççё.

— Эсир Ласкинпа тусла-çке, мёнлеха ун çинчен япах шутлатар?—тёртсе каларё Алмазов.—Тепёр тесен, мана пурпёрех. Сыв пулар!

Саланов, Алмазов, Саламии аяккалла пайанса утрёç, Вирьялов, хёр тÿрех кам майла çавранса ÿкнине сиссе, хайён «профессорёпе» ларса юлчё. Çав вахатрах концертан иккёмёш пайё вёçленчё—зала халах тухса тулчё.

— Мёнле типсем пулчёç кусем? Эсё, Анатолий, каштах паллатан пулас?— ыйтрё Саланов.

— Пёр-иккё куркаланаччё. Чушковё чаваш чёлхине çёнетмелли майсем шырать пулас, çаванпа ана кулса «профессор», теççё. Хай ку ята чанласах йышанать. Вал аçта ёçленине пёлместёп, ниçта та ёçлемест пулас. Ласкинё камне пёлме тата хёнтерех, уйрам професси çук унан. Те усламçа вал, те, хай каларёш, «таван искусствана тепёр майла çаварса ярасшан çунакан этем»? Халлёхе пуш парапман çеç çапать пулас-ха.

— Мёншён вал пёрмай «пиллёкмёш номёре пахар», тет?—чатаймасар ыйтрё Саламии.

Алмазов кулса ячё.

— Тахçан таçта, темле хаçатра-и, журналта-и, «пиллёкмёш номёрте», пёр виçё йёрке пичетленё пулас вал, çаванпа пёрмай мухтанать.

— Эпё ун йышшисенчен темрен йёрённё пек йёрёнетёп,—терё Саланов тарахса.—Тёл пулкаларам ун йышшисене хам ёçёмре, сахал мар тарахтарчёç. Хайсем вёсем чатма çук ман кахалсем, çаванпа çакнашкал пасалса каяççё. Çын ёçё, çитёнёвё вёсене савантармасть, вёчёхтерет кана. Хайсен вёчёхне ниçта чикеймесёр, çуралса каяс пек тарахса çÿреççё вёсем, çаванпа пур ыра, çута япалана, тамана пекех, чёререн курайманççё. Асту, Алмазов, сан çулу çине те тарёç-ха вёсем!

Алмазовăн куç шăрçисем пысăкланса, хуралса кайрĕç, халĕ вĕсем кăвар пек çунаççĕ.

— Пĕлетĕп, Сема,—терĕ вăл хуллен, кашни сăмаха шухăшласа каласа.— Çапах та вĕсем, ман шутпа, кĕрхи шăнасем кăна. Хăйсем пĕтес умĕн май килнĕ таран çыртса юлма тăрăшаççĕ, пурпĕрех, мĕскĕнсен, пĕтмеллех пулать. Нумай тарăхтарĕç-ха, пĕлетĕп, çапах эпир хамăр ĕçпе çĕнтеретпĕр, Сема! Кĕçĕр, ак, вĕсем пирĕншĕн хăрушă мар, вĕсем мĕскĕн те, йĕрĕнчĕк те. Анчах тепĕр чух вĕсем хăйсене питĕ нумай пĕлекен çынсем пек, пысăк культурăллă çынсем пек тыткаласа, хăшпĕр çынсене ĕнентерсех пăрахаççĕ. Вĕсен кашни самантрах темиçе цитата хатĕр, вăл сана собранисенче чăн-чăн ăслă çын пек хирет, «ăс парать»... Эпĕ пĕрре те иккĕленместĕп кун пирки: кĕрхи шăнасем пекех пĕтеççĕ вĕсем, курăн.

— Вирьялов вĕсемпе туслă-ши?— именсе ыйтрĕ Саламп и.

— Пĕр урапа çинчех вĕсем. Левене эпĕ мĕн ачаран пĕлетĕп,—терĕ Саланов, хĕре кусран пăхса.

Саламп и урăх нимĕн те каламарĕ. Кĕçĕрхи çак тĕлпулусем унăн нумай иккĕленӳллĕ шухăшĕсене сирсе ячĕç, тĕрĕслĕхе яр-уççăн кăтартрĕç. «Кĕрхи шăнасемпе» тĕл пулни ăна хăйĕн çывăх юлташĕсем çине тепĕр енчен пăхма, вĕсене урăх енчен курма май панĕ, вуншар хут тĕл пулса калаçса та асăрхайманнине кĕçĕр вăл питĕ лайăх сăнама пултарчĕ. Леон сăнарĕ хĕр чĕринче йăва çавăрма ĕлкĕрейменччĕ, ун тавра ярăçнăччĕ кăна. Халĕ ĕнтĕ вăл тĕтре пекех сирĕлсе çухалчĕ. Çак самантра ӳкĕннĕ те ĕнтĕ Саламп и хăй пăсăр тухнăшăн!..

Концертра Саламп и Салановпа ларчĕ, хăйĕн малтанхи вырăнне кайса лармарĕ.

— Музучилище студентки Муза Любимова «Юрату юрри» юрласа парать,—пĕлтерчĕ концерта ертсе пыраканĕ.—Юрă сăмахĕсем халăхăн, кĕввине çамрăк композитор Анатолий Алмазов йĕркеленĕ. Рояльпе автор калать.

Зал сасартăках шăпланчĕ.

Муза халăх умне пысăк театрсенчи артисткăсем пекех тухрĕ: ун çийĕнче урайĕнчен сĕтĕрнекен вăрăм платье, шурă илемлĕ хулĕсем çара, сулахай аллинче ылттăн браслет-сехет, кăкри çинче темле хаклă чул пĕчĕк çăлтăр евĕр йăлтăртатать. Куçхаршисене вăл ытлашширех хуратнă пулас, тутине хĕретнĕ, питне шуратнă, сарă çӳçне эрешлесе туранă. Сцена çине тухма хăнăхнăскер, вăл хăйĕн çинçе йăрăс пĕвĕпе кăшт çеç авăнса, илĕртӳллĕ куллипе ялкăшса, çăмăллăн пуç тайрĕ те аллисене кăкăр умне тытса тăчĕ. Унпа пĕрлех сцена çине Алмазов тухрĕ. Вăл васкаса рояль умне пырса ларчĕ те нотăсен альбомне уçса хучĕ. Студентсем вĕсене чылайччен алă çупса саламларĕç, Саламп ипе Саланов пуринчен нумайрах çупса ларчĕç. Зал шăплансан, Алмазов рояль каласа ячĕ, пĕр çавра каларĕ те Муза еннелле пуçне сулчĕ. Муза сывлăмлă йĕтĕн çеçки пек йăлтăртататакан куçĕсемпе çӳлелле пăхса илчĕ, вара хăйĕн асамлă хитре сассипе юрлама пуçларĕ. Саламп и хăй сисмесĕрех Саланов хулĕнчен ярса тытрĕ: Муза ун юррине юрлать.

Çӳл тӳпере çăлтăр вылять,
Сан куçу пек йăлтăртатса;
Чул хушшипе тăр шыв юхать,
Сан куллу пек шăнкăртатса.

Ялти кунсем те, утă çинчи каçсем те, çамрăксен уявĕсем те—йăлтах Саламп и куçĕ умне тухса тăчĕç. Ăçта, кам чĕринчен чи малтан шăранса тухнă-ши çак кĕвĕ, çак сăмахсем? Мĕнле хĕр тунсăхласа, савнине кĕтсе юрланă пуль чи малтан çак юрра:

Сывлăм ӳкет садсем çине,
Каç сулхăнĕ çапать çĕре.
Ăçта-ши эс çак каçхине?
Сана кĕтсе çунать чĕре.

Мĕншĕн савнийĕ тусĕ патне пырайман-ши? Çын сăмахĕпе сивĕтнĕ-ши ăна е вăл хăй телейсĕр хĕре пăрахнă? Акă мĕнле тунсăхласа, юратса кĕтет хĕр, анчах...

Çăлтăр сӳнет çӳл тӳпере,
Пуриншĕн те килет ыр кун.
Сӳнми çунать пĕр ман чĕре,
Саншăн çунать ман çамрăк чун.

Саламп и хăй театрта ларнине манса кайрĕ, вăл халĕ çав тунсăхласа савнине кĕтекен хĕр вырăнĕнче, таçти ялта, сывлăмлă садра, улăх хĕрринче... Темшĕн ăна яланах çак юрăра хăйĕн юратăвĕ пирки каланăн туйăнатчĕ, пĕррехинче вăл ăна Алмазова юрласа панĕ те, лешĕ çавăнтах сăввине те, кĕввине те çырса илчĕ. Акă халĕ çав çĕнелнĕ, хăватланнă, çавах тĕшшипе малтанхи пекех юлнă юрă темиçе çĕр çын чунне тыткăна илчĕ...

Юрă вĕçленсен, залра тăвăл тухса кайрĕ тейĕн, пурте шавласа, кăшкăрса алă çупма тытăнчĕç, Муза тепре юрлама тухсан тин шăпланчĕç.

Концерт пĕтиччен Саламп и çак юрă тыткăнĕнчен хăтăлаймарĕ. Театртан вăл тусĕсемпе пĕрле тухрĕ, Пĕчĕк Нина таçта кайса çухалчĕ.

— Саламлатăп, Анатолий! Тĕлĕнтертĕн те, савăнтартăн та, хурлантартăн та!—терĕ Саланов, тусĕн аллине чăмăртаса.

— Тавтапуç, Сема! Пĕлетĕн-и, çак юрра ĕнтĕ пĕтерсе хурасшăн пулчĕç. Ласкинсемпе Чушковсем.

— Кĕрхи шăнасем!—терĕ йĕрĕнсе Саланов.—Ан та асăн çакнашкал ырă самантра ун пек сĕлĕхсем çинчен! Авă, илтетĕн-и, студенткăсем сан юрруна юрлама та пуçларĕç.

Алмазовпа Саламп и Саланова гостиницăна кĕртсе хăварчĕç те урам тăрăх тăвалла утрĕç. Вĕтĕ çумăр пĕрĕхме пуçларĕ, анчах телейлĕ мăшăр ниме те пăхмарĕ. Вĕсем Саламп и хваттерĕ тĕлĕнчен темиçе хут та иртрĕç, хĕр çапах киле кĕме васкамарĕ. Вĕсем тем çинчен те, тем çинчен те савăнса, ĕмĕтленсе калаçрĕç, юрату пирки кăна шарламарĕç. Саламп и çак каçхине Тольăн малашнехи пурнăçне те, унăн килес чапне те, пысăк шăпине те лайăх курса тăчĕ, анчах хăй ун пурнăçĕнче мĕнле вырăн йышăнасси çинчен шутлама пĕлмерĕ, пултараймарĕ те. Вăл хăйне Толя юратнине питĕ аван пĕлсе тăрать-çке! Тата мĕн кирлĕ! Çапах хушăран канăçсăр чĕрĕ сăмах кĕтет. Саламп и хăйне юратнине сисме кăна мар, ун çинчен илтме те хăнăхнă ĕнтĕ: ун патне студентсем çырусем те çыркалаççĕ, ăна кинотеатрсене те чĕнеççĕ, ун умĕнче темпе те ырă пулма тăрăшаççĕ. Анчах Алмазов çеç хăй юратни çинчен каламасть. Виçĕ çул çитрĕ ĕнтĕ иккĕшĕ паллашнăранпа, виçĕ çул хушши Саламп и Алмазова сăнарĕ, ăна пуринчен ытларах хисеплеме, юратма тытăнчĕ. Алмазов та ăна ытти хĕрсенчен уйăрни сисĕнет, çапах вăл, ыттисем пек, хăйĕн юратăвĕ çинчен каламасть. Мĕншĕн хĕрĕн çав юрату сăмахне илтесех килет-ши? Сăмах вăл ултавлă пулма та пултарать-çке? Туйăм кăна, чĕрере çунса тăракан туйăм çеç тĕрĕс! Саламп и тем тĕрлĕ шухăшлать пулин те, çав пысăк туйăм ăна иккĕленме памасть. Алмазовшăн вăл пĕтĕм çамрăк ĕмĕрне, пурнăçне те хĕрхенсе тăрас çук, ăна пур йывăрлăхра та хăй пултарнă таран пулăшĕччĕ, юратĕччĕ...

Çумăр хытах çума пуçласан, вĕсем урамри ватă йăмра айĕнче чарăнчĕç те, пĕр сăмах чĕнмесĕр, алла-аллăн тытса, хире-хирĕç пăхса тăчĕç. Каччă куçĕнче Саламп и хăйĕн телейне курма тăрăшрĕ. Çак самантра вăл хăйне урăх нимĕн те кирлĕ маррине, хăйĕн пĕтĕм чун-чĕререн юратас килнине çеç туйрĕ. Алмазов ăна ыталарĕ те ним каламасăр чуптурĕ. Халиччен пĕлмен савăнăçа, пысăк телее йышăнма хĕр чĕри сасартăках пысăкланса кайрĕ, кăкăр тулли талпăнса сикме пуçларĕ...

(*Малалли пулать.*)

## *Тавах, анне*

Валентин УРДАШ

**Тавах, анне, çуратнăшăн,**
**Ура тапса сиктернĕшĕн,**
**Лăпканăшăн, юратнăшăн,**
**Чĕкеç чĕлхи пилленĕшĕн.**

**Тавах, анне, çуратнăшăн,**
**Ятла-ятла вĕрентнĕшĕн,**
**Ятланăшăн, юратнăшăн,**
**Шăпчăк юрри пилленĕшĕн.**

**Тавах, анне, çуратнăшăн,**
**Салху чухне шелленĕшĕн,**
**Шелленĕшĕн, юратнăшăн,**
**Чечек сăнне пилленĕшĕн.**

**Тавах, анне, çуратнăшăн,**
**Мăшăр çунат ӳстернĕшĕн,**
**Çуратнăшăн, юратнăшăн,**
**Сӳнми телей пилленĕшĕн.**

Тул çутăлнă кăна-ха. Ирхи хĕвел пайăркисем чÿречерен сăрхăнса кĕме пуçларĕç. Тулта каçса кайсах автансем авăтаççĕ. Çанталăк ырă пуласси сисĕнет.

Пĕчĕк Володя, вырăн çинчен тăрса, будильнике пырса пăхрĕ. Ултă сехет те çитмен-çке, анчах ачан пачах çывăрасси килмест. Шухăшĕсемпе вăл паçăрах таçта та çитнĕ ĕнтĕ.

— Анне, аннеçĕм, сехет кая юлман-и пирĕн?—тултан кĕрекен амăшĕ патне чупса пычĕ Володя.

— Сехечĕ мĕн тума кирлĕ сана?—тĕлĕнчĕ амăшĕ.—Ма ирех тăтăн?

— Эпĕ паян шкула каятăп вĕт... Çывăрас килмест манăн.

Амăшĕ çакна илтсен нимех те шарламарĕ, ачин савăнăçне татасшăн пулмарĕ. Вăл тутлă ыйхăпа çывăракан аслă ывăлĕпе вăталăх хĕрачине пăхса илчĕ те, кăмăлĕ тулнипе, хăй те йăл кулчĕ. Акă ĕнтĕ кĕçĕнни те шкула каясшăн, çичĕ çулта çеç пулин те, аслисенчен юласшăн мар. Учительница ĕнер кăна килсе кайрĕ, çичĕ çултисене кăçал вĕренме илейместпĕр, терĕ. Темле-çке. Ача ытла пĕчĕкçĕ вĕт... Çичче çеç кайнă та, ним тума та аптрамалла. Володя шкула каясшăн çунса çеç çÿрет.

Çапах та амăшĕ ывăлĕн кăмăлне пăсасшăн пулмарĕ.

— Халь вырт-ха, ачам, вăхăт çитсен хамах тăратăп,— ачин сÿс пек çемçе çÿçне шăлса якатрĕ вăл.—Ав пиччусем те çывăраççĕ... Кая юлмăн.

— Ыйăх килмест манăн,—терĕ Володя, сĕтел ещĕкне уçса.—Эпĕ гербарисене хатĕрлесе хурам-ха. Пичче пытарман-и ăна?..

Гербарие асăнсан, амăшĕ каллех ăшĕнче кулса илчĕ, ачасен çуллахи калаçăвĕ те аса килчĕ. Пĕррехинче, пĕр-икĕ уйăх каялла, учительница вĕсем патне килсе кайнăччĕ, ун чухне Володя та шкула каясси пирки калаçкалама пуçланăччĕ.

— Гербари тумасăр сана шкула кĕртмеççĕ,—терĕ вара Миша, шăллĕнчен тăрăхласа.—Малтан гербари тума вĕренмелле...

— Мĕн вăл гербари?

— Гербари мĕнне те пĕлместĕн-и?—ыйтрĕ Миша.—Э-э, апла пулсан, шкул çинчен ан та шутла...

— Пĕчĕк ачапа çапла калаçаççĕ-и?—чарчĕ амăшĕ, Володя кăмăлсăрланнине тÿрех асăрхаса.—Эсĕ малтан ăнлантарса пар.

Миша ирĕксĕртереххĕн кулса илчĕ те Володьăна тем калама пуçларĕ. Гербари тума тĕрлĕ курăксемпе хурт-кăпшанкăсене типĕтеççĕ те хут листисем çине çыпăçтараççĕ-мĕн. Вĕреннĕ чухне вăл яланах кирлĕ пулать, кĕнекере çырнине лайăххах ăнланма пулăшать.

Çак кунтан Володя гербари тăвас тесе пайтах çунса çÿрерĕ. Ĕнер колхоз садне амăшĕпе пырсан, аслашшĕ ăна тĕрлĕрен хурт-кăпшанкăсемпе лĕпĕшсем тыта-тыта пачĕ. Лĕпĕшсене вăл консервăн кĕленче банки ăшне ячĕ, çиелтен хутпа витсе, çыхса лартрĕ.

# ГЕРБАРИ

*Калав*

Алексей ИВАНОВ

Ачашăн чи тĕлĕнмелли те савăнмалли калта пулчĕ. Вăрманта аслашшĕ пĕчĕк калта тытрĕ.

— Мĕн тăватăн-ха эсĕ кусемпе, ачам?—хăйĕн çăра сухалĕ витĕр чĕреххĕн те ăшшăн кулса ыйтрĕ аслашшĕ.—Шкула каяс тетĕн-им?.. Апла эсĕ пысăк çын халь, Володя мар, Владимир Леончă темелле пуль?..

— Владимир Леончă,—мăнаçлăн каларĕ Володя.—Эпĕ те пысăк ĕнтĕ.

— Калтине эсĕ учительницăна чĕрĕллех пар, вара вĕсем унта ăна пысăк банка ăшне хупаççĕ те...

— Выçса вилмĕ-и вăл...

— Шкулта ăна спиртлаççĕ. Çавăн пек шĕвек пур вĕсен, вара калта эсĕ шкултан вĕренсе тухиччен усранать...—хăй пĕлнĕ пек ăнлантарчĕ аслашшĕ.—Вĕреннĕ чухне тем те кирлĕ пулать...

Килне таврăнсан та Володя мĕн çывăрса кайиччене калтана пыра-пыра пăхрĕ, банкăна çăкăр тĕпренчĕкĕсем пăрахса пачĕ, анчах лешĕ çăкăра тĕкĕнмерĕ те.

...Володя шкула пиччĕшĕсемпе пĕрле кайрĕ. Миша çиччĕмĕш класра вĕренет ĕнтĕ, аппăшĕ кăçал пиллĕкмĕшне каять.

— Сана пурпĕрех шкула илмеççĕ, пĕчĕккĕ эсĕ,—хăйсемпе пĕрле илесшĕн пулман пек каларĕ аппăшĕ. Анчах Володя гербарисемпе банкисене пуçтарчĕ те урама тухса чупрĕ.

— Эсĕ ху пĕчĕккĕ,—терĕ вăл.—Мана асатте пысăк çын терĕ, Владимир Леончă эпĕ.

...Часах коридорсенче шăнкăрав сасси янăраса кайрĕ. Пĕрремĕш класа килнисене учительница класа ертсе кĕчĕ, вăл çав тери кăмăллă калаçни Володьăна питĕ килĕшрĕ. Учительница ачасене ятпа та хушаматпа чĕнсе тухрĕ, паллашрĕ, анчах Володя ыттисен хушшинче хăй ятне илтеймерĕ. Учительница, Володя пăшăрханма пуçланине кура, ун патне пычĕ, юриех пĕлмĕш пулнă пек:

— Эсĕ кам ачи пулатăн-ха?—тесе ыйтрĕ.

— Владимир Леончă эпĕ,—терĕ Володя хăюллăн.

— Миçе çулта эсĕ?

Хальхинче Володя хирĕç чĕнмерĕ, Амăшĕ «çиччĕрисене шкула илмеççĕ» тенине аса илчĕ. Ун чухне Володя никама та ĕненесшĕн пулманччĕ.

— Эсĕ мĕн илсе килнĕ вара? Мĕн банкисем кусем?—пĕлесшĕн пулчĕ учительница, папка хушшинчи курăксене курсан.

— Гербари.

— Гербари? — тĕлĕнчĕ учительница.— Ăçтан пухрăн вĕсене?—çаплах кăмăллăн ыйтрĕ вăл. — Гербари тума кам вĕрентрĕ?

— Миша вĕрентрĕ, — терĕ Володя, ытларах та ытларах вăтанса.— Калтине... мĕн... мĕн... Эпĕ вăрмантан...—хăй мĕн калассине пĕлмесĕр мăкăртатрĕ ача, темшĕн шикленме пуçласа.

— Вăрманта пĕччене пултăн-и? Хăрамарăн-и?

— Вăрманта... эпĕ пĕччен... çук, пĕччен мар...—чăннипех каласшăнччĕ вăл, анчах ачасем çине çаврăнса пăхрĕ те, лешсем кулас пек ларнине кура, хĕрелсе кайрĕ. Володя çухалса кайнă пек пулчĕ, унăн тутисем чĕтреме пуçларĕç. Вăл куç хупанкисене антарчĕ те хăюллăнрах мăкăртатма пуçларĕ.— Мĕн... Калтине... асаттепе пĕрле...—терĕ вăл, хăюлăхне пухса. Кайран икĕ кĕленче банкине те учительница умнерех шутарса лартрĕ.

— Маттур ача эсĕ,—мухтарĕ учительница.— Пултаратăн...

Çав вăхăтрах Володя пĕр банкин хупăлчине уçрĕ те, унтан лĕпĕшсем вĕçсе тухса кайрĕç. Володя хăранипе калта хупнă банкăна та кăшт çеç çĕре ÿкеретчĕ. Учительница, ачана хавхалантарас пек, йăл кулчĕ те ăна çурăмĕнчен çупăрларĕ:

— Ларах, Володя, эсĕ те ыттисемпе пĕрлех вĕренĕн,—терĕ.

## *Пирĕн учитель*

Николай ЕВСТАФЬЕВ

Илĕртет канмашкăн лăпкă ыйăх,
Шăп вуникĕ хут çапать сехет.
Чÿрече чаршавĕсене уйăх
Кĕмĕл тĕслĕ çутăпа тĕрлет.

Ывăнма пĕлми, канма мансах-çке
Тĕрĕслет учитель тетрадьсем.
Пусĕнчен пĕрерĕн уртăнаççĕ
Кăвакарнă çÿç пайăркисем.

Йăнăшсем тупсан, пăртак пире, тен,
Ÿпкелет те пулĕ ăшĕнче,—
Ахаль мар çулсеренех ĕретĕн
Йĕр выртать ун куçĕ айĕнче.

Килĕнче ун лăпкă та типтерлĕ,
Тетрадьсем уçни çеç илтĕнет.
Миçе çын вăл вĕрентсе ÿстерне!—
Кашнинех-çке панă хăй чунне.

Талăк хыççăн талăк вăхăт иртĕ...
Вĕренсе тухсан та çак шкултан,
Асăнăпăр ăшшăн — каç та, ир те —
Хамăрăн учителе ялан.

# ЛАЙĂХ КАНТĂМĂР—



Ăшă çу кунěсем майěпен-майěпенех иртеççě. Пионерсен лагерěнчи пурнăç та, походсемпе экскурсисем те вěçленчěç. Ачасен умěнче çěнě вěренў çулě, çутă та аслă классем, çěнě учебниксем, çěнě юлташсемпе çěнě учительсем!

Çуллахи каникул пирěн шкул ачисене нумай çěнě ěçсемпе паллаштарчě. Вěренекенсем пионер лагерěсенче пурăнчěç, экскурсисемпе походсене çўрерěç. Нумайăшě Мускава та çитсе курчěç, ялхуçалăх выставкине кайма тивěçлě пулчěç.

...Августăн юлашки хěвеллě кунěсем тăраççě. Шупашкарти пионерсем, çěнě вěренў çулě пуçланиччен, юлашки походсемпе çамрăк туристсен слетне irttерме хатěрленеççě.

Илемлě пирěн тăван çěршыв, илемлě унăн хулисемпе ялěсем, юханшывěсем анлă та таса, ешěл вăрманěсем вěçě-хěррисěр тăсăлаççě. Яштака хырсемпе ытама кěми чăрăшсем, çěршер çулхи юмансемпе çинçе хурăнсем, вăштăр ăшă çил вěрнипе кăшăл-кăшăл кашласа, вăрман сукмакěпе утакан ачасене сывлăх суннăн туйăнаççě. Кукăр-макăр вăрман сукмакě похода тухнисене шалтан-шала илсе кěрет, ачасем умне вăрманăн çěнěрен те çěнě, халиччен курман илемě тухса тăрать. (Çўлти ўкерчěк).

Анчах Людмила Родзавилкăпа Альберт Федоров пачах урăх похода кайма хатěрленеççě. Вěсем иккěшě те пионерсен çуртěнчи мотокружокра вěренеççě. Кěçех вěсем Атăлăн сулахай çыранě тăрăх мотопохода тухса каймалла, унччен мотоцикла тěплěн тěрěслени ытлашши пулмасть. (Аялти ўкерчěк).

Атăл леш енне каçсанах, çамрăк туристсем темиçе пая пайланчěç. Кашниех поход вăхăтěнче мěн тумаллине лайăх пěлет.

Туристсем хăйсем валли йывăр та интереслě маршрут суйласа илчěç. I-мěш номерлě вăтам шкулта вěренекен хěрачасен чылаях вăрăм та йывăр çул пулчě. Вěсем Атăл леш енчи перевоз пристанě патěнчен затон хěррипе кукăрмакăр сукмаксем тăрăх утрěç, кайран вăрман тăрăх кўлě хěррипе пычěç. Çул çинче сахал мар чăрмавсем тěл пулчěç, вěсем анчах Зина Чехавскăйпа ун юлташěсене çырма-çатра та, çула урлă выртакан пысăк йывăççем те чарса тăмарěç. (Çўлти ўкерчěк.)



Инçе çулта йывăç сулхăнěнче апатланниничен ырри мěн пурши? Арçын ачасен ушкăнěпе пěрлешсен, килтен илсе тухнă çимěç-



сен пěр пайне хěрачасен тепěр куна хăварма лекрě. Çамрăк пулăçсем Акăш кўлли хěрринче вěсем валли те пулă тытма ěлкěрнě. Уçă сывлăшра пулă яшки питě тутлă, анчах вěри чей ěçмесěр пурпěрех чун канмасть. (Варринчи ўкерчěк).



Кăнтăр апачě хыççăн та ачасемшěн интереслě ěçсем пěтмерěç. Инесса Миронова шахмат фигурисене майлаштарса лартрě те, чылайăшě выляма кăмăл турěç. Паллах, «шуррисем» малтан çўреççě. Çамрăк шахматистка темиçе хут çўренě хыççăн «тăшман» фигурисене йывăр килчě. Кунта лайăх шухăшлама тивет, унсăрăн «мат» пулма пултарать. (Аялти ўкерчěк).

Вěсенчен инçе те мар икě хěрача йывăç сулхăнне вырнаçнă та хăйсем паян мěн-мěн курни çинчен поход дневникне тăрăшсах çыраççě. Халь ěнтě çул çинче тупнă хитре чечексене катанпир çине тěрлеме те юрать. (15-мěш страницăри варринчи ўкерчěк).

...Туристсен слечěсем иртсе кайрěç ěнтě. Сентябрěн пěрремěшě, тахçантанпах кěтнě телейлě кун çитрě. Пуçласа шкула каякансемпе юлашки çул шкул сакки çинче ларакансем кăна мар, учительсемпе ачасен тăванěсем те çак куна чăтаймасăр кěтрěç. Хулара та, ялта та, рабочисен поселокěсемпе халăх пурăнакан ытти вырăнсенче те вěренў çулě пуçланнă кун савăнăçлă уяв пулса тăчě. Епле савăнмăн-ха ун пек чухне—тăван ывăл е хěрача пурнăç çулě çине тухать.



# ЛАЙĂХ ВĔРЕНЕР!



Ыран вĕренӳ çулĕ тенĕ чухне Ишлей районĕнчи Хыркасси шкулĕнчен кунĕпех ачасем татăлма пĕлмерĕç. Зоя Ивановна учительницăн самантлăха та пушă вăхăт пулмарĕ. Вăл хăй те кунта çамрăк учительницăсенчен пĕри: кăçалхипе иккĕмĕш çул çеç ĕçлет-ха. Октябрьски районĕнче çуралса ӳснĕ хĕр, Шупашкарти педагогика институтĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн, Хыркасси шкулĕнче вĕрентме пуçларĕ. Учительницăна шăнкăрав пуличченех ачасем сырса илчĕç, 7-мĕш класра вĕренекен Августина Хрисанова вĕренӳ çулĕ пуçланнă ятпа хитре чечек çыххи тыттарчĕ. (Аялти ӳкерчĕк).

Явăшри çичĕ çул вĕренмелли шкулта та çĕнĕ вĕренӳ çулне лайăх кĕтсе илчĕç. Пĕрремĕш класа каякан ачасем сентябрĕн пĕрремĕшĕнче ирех шкула утрĕç. Гена Тимофеев пуринчен малтан шкула çитесшĕнччĕ, анчах Лена Кудряшовăпа Клава Петрова унран та ир тăнă иккен. Вĕсем пурте çывăхри шкула васкарĕç. (Сылтăмри, çӳлти ӳкерчĕк.)







Вера Иванова Шупашкарти 5-мĕш номерлĕ вăтам шкулта вĕренме пуçларĕ. Пĕрремĕш урок—çĕнĕ букварĕн çĕнĕ страници, пирвайхи учитель, çĕнĕ юлташсем—çаксем пурте нихçан асран кайми самантсем. Халлĕхе Вера пĕр парта хушшинче ларакан юлташĕпе çеç паллашма ĕлкĕрчĕ-ха. Класри ытти ачасемпе, шкул пурнăçĕпе кайран паллашĕ. Халь вăл учительницăн пирвайхи сăмахĕсене итлет. (Аялти, сылтăмри ӳкерчĕк.)

Кăçал шкул пурнăçĕнче нумай çĕнĕ улшăнусем пулчĕç. Ачасене çĕнĕ вĕренӳ программисемпе вĕрентме пуçлани уйрăммăнах пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çĕнĕ вĕренӳ çулĕнчен пуçласа 1—4-мĕш классенче вĕренекенсем валли алăпа ĕçлемелли уроксем пулаççĕ. 5-мĕш классенче вĕренекенсем мастерскойсенче тата вĕренӳпе опыт участокĕсенче ĕçлеççĕ. Çавăн пекех арçын ачасемпе хĕрачасем пĕрле вĕренме тытăнчĕç.

Шкулсенче пирвайхи шăнкăравсем янăраса кайрĕç. Пирвайхи уроксем пуçланчĕç. «Лайăх кантăмăр—лайăх вĕренер!», терĕç шкул ачисем, учебникĕсене уçса.

М. Егоров, Ф. Иванов, А. Припалов фотоӳкерчĕкĕсем.

# ПĔРРЕМĔШ ШĂНКĂРАВ

Шупашкарти вунпĕрмĕш номерлĕ шкул хулари пур урамсенчен те аякранах курăнать. Пир-авăр комбиначĕн ретĕн-ретĕн ларса тухнă тăватшар хутлă çĕнĕ çурчĕсен урамĕ шăпах çак çуртран пуçланать.

Сентябрĕн малтанхи кунĕсенче кунта ирхине ирех шкул ачисем пуçтарăнма тытăнчĕç. Пурте вĕсем пĕчĕк портфельсемпе, çипуçĕ тирпейлĕ, таса.

Çак шкулта пир-авăр комбинатĕнчи рабочисемпе çывăхри ытти предприятисемпе учреждениосенче ĕçлекенсен ачисем вĕренеççĕ. Шкулта 36 класс, пурĕ кăçал 1200 ача вĕренет. Шалта таса, урайсемпе стенасене çулла сăрланă, вĕсем халĕ кĕленче пек йăлтăртатса тăраççĕ, класс пӳлĕмĕсем çутă, ирĕк.

Ирхине шкул алăкĕ умне ачасем килсех тăраççĕ. Витя Вашуркинпа Виталий Смирнов пĕрле килнĕ, вĕсен ашшĕ-амăшĕсем пир-авăр комбинатĕнче ĕçлеççĕ. Витьăпа Виталий, пĕр-пĕрне çак кунсенче кăна палларĕç пулсан та, туслашма ĕлкĕрчĕç ĕнтĕ, халĕ вĕсем вăтам шкултан вĕренсе тухиччен çывăх юлташлă пулма ĕмĕтленеççĕ. Сериковсен Наташипе унăн аппăшĕ Людмила иккĕшĕ те çак шкулта вĕренеççĕ. Людмила кăçал тăххăрмĕш класа çӳрет, Наташа—пĕрремĕшне кăна-ха, йăмăкĕ çапах та шкула çӳреме аппăшне кĕтсе тăмасть.

Галя Ерукова, Валя Журкова, Люда Тимофеева, Аля Тихонова—пурте вĕсем комбинатри рабочисен хĕрĕсем, пурте кăçал пĕрремĕш çул шкула килчĕç. Вĕсенчен нумайăшĕ халиччен ача садĕнче пурăннă, халь вĕсен хăйсен ĕçĕ пысăк, хăйсен шухăшĕ пур: вĕсем вĕренме тытăнчĕç. Шкулта пĕрремĕш класра вĕренекенсен шучĕ кăçал икçĕр ачаран та иртет, пилĕк класа вырнаçаççĕ вĕсем. Учительсем вара ачасене нумай вĕрентсе курнă. Елена Матвеевна Раева кăçал хăй пурнăçĕнче çирĕм пилĕкмĕш çул вĕрентме тытăнчĕ, Е. А. Шаронова—11 çул вĕрентет. Çавăн пекех А. С. Стенина, Р. Ф. Павлова, К. Н. Зудина учительницăсем те ачасене вĕрентес ĕçре темиçе çул хушши ĕçлеççĕ.

Ачасем çуллахи вăхăтра лайăх каннă, тулли пит-куçĕсем вĕсен, хĕвел çинче пиçĕхсе, хăмăр курăнаççĕ. Пионерсем, лагерьсенче каннă, походсенче пулнă, тырă вырнă вăхăтра колхозсене кайса колхозниксене пулăшнă.

Пиллĕкмĕшпе улттăмĕш классенче вĕренекен Олег Грошевпа Алефтина Горшкова кăçал Атăл тăрăх пăрахутпа кайса, Владимир Ильич Ленин ячĕпе хисепленекен Атăл-Дон каналне курса килнĕ, çиччĕмĕш класра вĕренекен Володя Банных Урал туне кайса курнă. Ачасенчен нумайăшĕ Кавказра, Крымра, Украинăра экскурсисенче пулнă, Мускаври Кремле çитсе курнă. Халĕ кашни хăйĕн юлташĕсене çуллахи вăхăтра ăçта пулса, мĕн-мĕн курни çинчен кала-кала тĕлĕнтерет.

Ахаль иттермен вĕсем çуллахи каникула. Акă, Володя Лакреев, улттăмĕш класра вĕренекенскер, темиçе тĕрлĕ ӳсентăран пуçтарса, тирпейлĕ гербари туса килнĕ. Унăн гербарийĕпе халь ытти ачасем те вĕренме чух усă кураççĕ. Тăххăрмĕш класра вĕренме пуçланă Анатолий Епишев Атăл тăрăхĕнчи вăрмансемпе хирсенче пурăнакан тĕрлĕ нăрăсемпе хурт-кăпшанкăсен, лĕпĕшсен коллекцине туса килнĕ. Икĕ кĕленче коробкăра нăрăсемпе лĕпĕшсем çĕр ытла пуçтарнă вăл. Унăн коллекцине курсан, Толя чăн та ӳлĕмрен ученый-энтомолог пулĕ тесе шухăшлатăн.

Тĕрлĕ халăх ачи вĕренет шкулта. Акă эпир кăçал вуннăмĕш класра вĕренекенсене çеç пăхатпăр та, унта темиçе халăх ачи вĕренет: Иван Прокопьев — вырăс, Николай Яковлев — чăваш, Георгий Рубель — украинец, Владимир Загидуллин — тутар, Эмма Абрамова — еврей тата ытти халăх ачисем те пур. Вĕсем пурте пĕр çемьери пек килĕштерсе пурăнаççĕ, пĕр-пĕринпе ăмăртса, ăста вĕренме тăрăшаççĕ. Пурте вĕсем кăçал вуннăмĕш класран «отличнон» паллăсемпе вĕренсе тухма ĕмĕтленеççĕ.

Лайăх вĕренме ырă сывлăх сунать ачасене шкулăн директорĕ Александр Иванович Стребнев, пикенсе вĕренме сĕнет вĕсене Вера Михайловна Журавлева та, Шупашкарти шкулсенче 35 çул хушши ачасене вĕрентекенскер.

Хаваслăн янăрать пĕрремĕш шăнкăрав. Ачасем пурте классене кĕрсе вырнаçаççĕ, вĕренме тытăнаççĕ.

Занятисем йĕркеллĕ пуçланчĕç. Çак йĕркелĕхе малашне те çирĕп тытса пырсан, вĕрентес ĕç ăнса пырасса çирĕп шанса тăма пулать. Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви тăрăшнине ответлесе, вĕренекен ачасем те, учительсем те кăçалхи вĕренӳ çулне ăнăçлă иттерме сăмах параççĕ.

Н. ИЛЬБЕК.

# ЧАПАЕВСЕН ÇЕМЙИ

Шупашкарти краеведени музейĕ. Кунта кашни кун çынсем кĕрсе кураççĕ. Юлашки вăхăтра уйрăмах граждан вăрçи историйĕн уйрăмĕнче халăх йышлă. Рабочи е колхозник-и вăл, шкул ачи е Совет Çарĕнчен отпуска таврăннă салтак-и,—вĕсем пурте граждан вăрçи историне кăтартса паракан экспонатсем патĕнче ытларах чарăнса тăраççĕ.

Акă музее шкул ачисем пырса кĕчĕç. Граждан вăрçи историйĕн уйрăмне ертсе пыракан аслă научнăй сотрудник Меркурий Андреевич Волков çамрăк хăнасене хавас кĕтсе илчĕ, вĕсем мĕнпе интересленнине малтанах пĕлсе, ачасене вăл граждан вăрçи геройĕ Василий Иванович Чапаев пурнăçĕпе ĕçĕсене кăтартакан экспонатсем вырнаçтарнă пӳлĕме илсе кĕчĕ. Нумаях пулмасть кунта çĕнĕ документсем илсе килнĕ.

Юлашки вăхăтра музей Чапаева лайăх пĕлнĕ çынсен калавĕсене чылай пухнă. Чапаевăн пиччĕшĕ Михаил Иванович каласа панисем питех те интереслĕ. Чапаевăн ача чухнехи юлташĕ А. К. Федоров калавĕсем те пур.

Халиччен Чапаев Куйбышев облаçĕнче çуралнă тесе çыркалатчĕç. Анчах халĕ Василий Иванович ăçта çуралнине тĕрĕссипе кăтартакан документсене тупса музее панă. Вăл Шупашкарпа юнашар ларакан Будайка (хальхи Чапаево) ялĕнче çуралнă, тăхăр çула çитиччен унтах пурăннă.

Ачасем пуринпе те интересленеççĕ. Экскурсовод вĕсене музейри экспонатсемпе паллаштарать, Чапаевсен çемйи çинчен тĕплĕн каласа парать.

— Ку мĕнле çурт?—ыйтать çав вăхăтра пĕр пионер.— Чапаевсен мар пулĕ те?

— Тĕрĕс, ку Чапаев çуралнă çуртăн макечĕ,— ăнлантарчĕ экскурсовод.— Василий Ивановичсен çак çурчĕ Будайкăра пулнă. Паллах, халĕ çак çурт вырăнне çĕнĕ те çутă çуртсем туса

В. И. Чапаев çуралнă çурт макечĕ. Ана Шупашкарти краеведени музейĕнче вырнаçтарнă.



лартнă. Колхозра çакăн пек начар çуртсене ниçта та курма çук ĕнтĕ, анчах патша вăхăтĕнче ĕççыннисем шурă пӳртсем çинчен ĕмĕтленме те пултарайман.

Экскурсовод ачасене Чапаевсен çемйи çинчен калакан экспонатсемпе паллаштарать.

* * *

Степан Гаврилович хурçă пек çирĕп кăмăллă çын пулнă. 1861 çулта, Российăра крепосла правăна пăрахăçа кăларсан, Степан Гаврилович та «ирĕке» тухнă. Анчах пĕчĕк ят çĕрĕ çинче усăсăр тар юхтарма килĕшмен, пурпĕрех çемьене тăрантармалăх тырă туса илес çуккине вăл лайăх пĕлнĕ. Степан Гавриловичпа пĕр шухăшлисем Будайкăра татах тупăннă. Часах «пăлхавçăсене», патшапа турăна пăхăнманшăн, тĕрмене хупса лартнă.

Унтанпа вунпĕр çул иртнĕ. Анчах Степан Гаврилович пурнăçĕ, ир такăнсан—каçченех такăннă тенĕ пек, ăнса пыман. Тĕрме алăкĕ çири кĕпе евĕрлех çывăх пулнă. Иккĕмĕш хутĕнче ăна «таса турăран мăшкăлланăшăн» хупса лартнă.

Ĕçĕ вара кулăшла пулса тухнă.

Пĕрре Степан Гаврилович Гаврилов лĕнчĕр-ленчĕр урапапа «çветуй турăшсене» турттарса пынă. Çанталăкĕ йĕпе-сапа тăнă, çул çинче урапа тĕнĕлĕ таранах пылчăк çăрăннă. Ун пек чухне инкек те çумрах иккен: чипер пынă çĕртех урапа кустăрми тухса ӳкнĕ те, турăшсем пурте çăра пылчăк çине тăкăннă. Степан Гаврилович аранаран урапине тӳрлеткеленĕ, пылчăк çинчи турăшсене пухкаласа тиенĕ те, хăй çулĕпе малалла кайнă.

Инкек пупсăр килмест, тесе ахаль каламан пулĕ çав. Утне çитмен туртине тенĕ пек, Гаврилов хыççăнах пĕр хаяр пуп тăрантаспа силленсе пынă. Ăнсăртран вăл çул çинче Степан Гаврилович манса хăварнă турăша тупнă. Паллах, Шупашкар пупĕ çакна ахаль хăварма пултарайман, Степан Гаврилова турăран мăшкăлланă тесе хупса лартнă...

Ĕлĕк хресченсен хушамачĕсем ăруран ăрăва улшăнса пынă. Степан Гаврилович ывăлне—Ивана—патша çарне илнĕ чухне Степанов тесе çырнă та, çĕнĕ хушамат пулса тăнă.

Граждан вăрçи çулĕсенче пĕтĕм тĕнчипе чапа тухнă хушамат та çавăн пекрех, пачах ăнсăртран тухса кайнă.



Василий Иванович Чапаев.

Чăваш çĕршывĕ ĕмĕртенпе ешĕл вăрмансемпе, çĕршер çулхи лаштра юмансемпе чапа тухнă. Çак вăрмана касса, аслă вырăс государствин тĕрлĕ кĕтесĕсене ăсатнă. Степан Гавриловпа унăн ывăлĕ Иван Степанов та, çуллахи ĕçсем хыççăн укçа ĕçлесе илес тесе, хĕлле вăрман хуçи патне тара кĕрĕшнĕ. Вăрманта ĕçлеме те çăмăлах пулман: ытама кĕмен юмансемпе хурăнсене, яштак хырсене касса, йывăр пĕренесене сулă тума Атăл хĕррине темиçешер çухрăма лашапа турттарнă.

Будайка хресченĕсем ытларах йывăç турттарнă çĕрте ĕçленĕ. Йывăççене лав çине тиенĕ чухне, ĕçлеме çăмăлтарах пултăр тесе, вĕсем яланах:

— Чапь, чапь,— тесе кăшкăрнă.

Çак сăмаха Степан Гаврилович ытларах калама юратнă.

— Айтăр, ачасем, тытатпăр та, чапь-чапь!—тесе хавхалантарнă вăл, йывăр пĕренесене вăйлă аллисемпе тĕртсе.

Пурăннă чухне тем те пулать. Пĕрре Иван Гаврилович кӳршĕ ялти лавçăран кивçен укçа илнĕ. Анчах вăл ăна вăхăтра таврăса парайман. Лешĕ, Будайкăна пырса, Степан Гавриловича шыранă, анчах вăл унăн ятне манса кайнă, вара Степан Гавриловичăн юратнă сăмахне аса илнĕ те вăл:

— Ăçта пурăнать сирĕн леш... «чапь-чапь» текенни?—тесе ыйтнă.

Лавçă шӳтлесе калани ял çыннисене килĕшнĕ. Нумай вăхăт та иртмен, ялта вĕсене пурте «чапь-чапь» тесе чĕне пуçланă, пурăна-киле «чапьсенчен» «чапаевсем» пулса кайнă. Иван Степановичăн аслă ывăлне çара илнĕ чухне кантуртисем «Чапаев» тесе çырса хунă, ытти ывăлĕсем те вара çав хушаматпах юлнă. Шӳтлесе каланă «чапь» сăмахранах пĕтĕм тĕнчипе паллă хушамат—Чапаев—пулса кайнă.

Василий Иванович Чапаев, аслашшĕпе ашшĕ пекех, йывăр ĕçрен хăраса

таман. Пĕлекен çынсем каланă тăрăх, вăл çар службине кайиччен платник пулнă. Анчах вăл çакăнпа кăна çырлахман. Çамрăк чухне вăл темĕн тĕрлĕ ĕçе те тытăнса пăхнă. Чапаев кĕтӳ те кĕтнĕ, тимĕрçĕ патĕнче те ĕçленĕ.

Саратов тавраш ĕнчи пĕр ялта Василий Иванович чиркӳ тунă çĕре кĕрĕшнĕ. Çав хушăрах вăл турăшсем ӳкерме те хăтланса пăхнă. Анчах, аслашшĕ пекех, Василий Ивановичăн та «çветуйсемпе» инкек курмалла пулнă.

Ăна пĕрре турăшсене çĕнетме панă. Вăл çак ĕçе çав тери «тăрăшса» тунă. Анчах ĕçне туса пĕтерсен, чиркӳ çыннисем хăраса ӳкнĕ. Василий Ивановичăн Микул турри картузне вĕçкĕнле чалăшла лартнă, аллине çул çӳремелли хитре туя тытнă.

Вырăнти влаçсем Василий Ивановича «искусствипе» тӳрех интересленме пуçланă. Вара унăн çийĕнчех Мелекес хулине тармалла пулнă. Мелекесре ăна патша çарне илнĕ.

Граждан вăрçи геройĕн пурнăçне совет çыннисем лайăх пĕлеççĕ. Василий Иванович çинчен кĕнекесем çыраçыра кăларнă, кинофильмсем ӳкернĕ. В. И. Чапаев ячĕпе хуласемпе ялсем, фабрикăсемпе заводсем, шкулсемпе клубсем хисепленеççĕ. Аслă Отечественнăй вăрçă çулĕсенче те совет салтакĕсемпе матросĕсене, тăшман тылĕнче паттăр кĕрешнĕ партизансене çапăçура Чапаев сăнарĕ хавхалантарнă.

Василий Иванович шăллĕ—Григорий Иванович Чапаев та хăй пурнăçне Совет влаçĕшĕн панă.

1918 çул пуçламăшĕнче Григорий Иванович Чапаева Балаково хулин военкомне уйăрса лартнă. Аслашшĕпе пиччĕшĕ пекех çирĕп кăмăллă, хĕрӳ чĕреллĕ Григорие хула çыннисем нумайăшĕ лайăх пĕлнĕ. Григорий Иванович кунта чылайччен платникре ĕçленĕ. Военком пулсан, ăна хула çыннисем нумай пулăшнă, анчах вырăнти заводчиксем Чапаева хăратма хăтланнă.

— Комиссар пулсах эсĕ пуçна çиетĕн,—тенĕ вĕсем.—Ытла кăра илетĕн. Советсем тепĕр эрнерен ытла тытăнса тăрас çук. Ун чухне санăн хăш юпа çинче çакăнса тăмалла пулать-ши?

— Ахалех пăшăрханатăр, господасем,—нимĕн хăрамасăр ответленĕ Григорий.—Чапаевсем революци тума çуралнă, вĕсем революцишĕн пурăнаççĕ. Чапаевсем Совет влаçĕшĕн епле кĕрешнине курăр-ха эсир!

Балаковăра революци тăшманĕсем нумай пулнă. Вĕсем Совет влаçне хăвăртрах путарса лартма тăрăшнă. Çурхи кунсенчен пĕринче хулара чиркӳ чанĕсем кĕрлеме пуçланă. Çакă ĕнтĕ кулаксем Совет влаçне хирĕç восстани пуçланине пĕлтернĕ. Восстани пуçлависем Григорий Чапаева хулари пушар сарайне хупса лартнă. Часах хулара юратнă военкома арестленĕ хыпар сарăлнă. Григорий Иванович Чапаева тытса хупнине пĕлсен, рабочисем ăна çăлма васканă, пушар сарайне питĕрнĕ çăрасене çапса ватнă та Григорие ирĕке кăларнă. Григорий Иванович Чапаев кунтан тӳрех хула площадьне кайнă. Черносотенецсен митингне вăл пĕр хăрамасăрах пынă.

Паттăр военком, хастар чĕреллĕ Григорий Иванович Чапаев трибуна çине хăюллăн хăпарнă. Кулаксем, хула военкомне ирĕкре курсан, каллех шикленсе ӳкнĕ, ăна пуçĕпех пĕтерме хатĕрленнĕ. Григорий Иванович халăха Совет влаçне пулăшма чĕнсе хĕрӳллĕ сăмах каланă, пĕтĕм площадь ăна тăвăллăн алă çупса саламланă. Çав вăхăтра,—Чапаев трибуна çинчен аннă чухне,—черносотенецсенчен пĕри военкома револьверпе персе вĕлернĕ.

Василий Иванович Чапаев çав вăхăтра контрреволюцин тепĕр восстанине путарнă. Хăйĕн шăллĕне Балаковăра кулаксем вĕлернине пĕлсен, вăл пысăк мар отрядпа Балаковăна васканă. Военкома пытарма пĕтĕм хула халăхĕ тухнă. Ăна пытарма хĕрлĕ ялавсемпе пынă. Колонна умĕнчи хĕрлĕ ялавсенчен пĕри кайран Чапаев дивизийĕнче вĕлкĕшнĕ. Чапаевецсем, çак хĕрлĕ ялав айне тăрса, революци тăшманĕсене хирĕç кĕрешнĕ, белогвардеецсене пĕр хĕрхенмесĕр путарнă.

Чапаевсен аслă ывăлĕ Андрей Иванович та ун чухнехи патша йĕркисене чунтанах курайман. Ăна 1905 çулта патша çарне мобилизациленĕ. Андрей Иванович та, тăванĕсем пекех, хĕрӳ чĕреллĕ, паттăр çын пулнă. Василий Ивановича çара илнĕ çулхине Андрей Ивановича çав тери хытă айăпланă. Патша çарĕнче службăра пулма килĕшменшĕн ăна персе пăрахнă.

Василий Иванович Чапаевăн çарти пурнăçĕ те малтанах ăнăçлă пуçланман. Кусĕ вăйсăртарах пулнă пирки ăна часах çартан каялла янă, çакăн хыççăн вăл каллех платникре ĕçленĕ, слесарь пулнă, живописец пулма хăтланнă. Чухăн пурнăç ăна пĕр çĕртен тепĕр çĕре хăваланă.

Иккĕмĕш хут Василий Ивановича империализм вăрçи умĕн мобилизациленĕ. 1914 çулхи сентябрь уйăхĕнче В. И. Чапаева Львов хули патĕнче амантнă, унтан Перемышль патĕнче каллех суранланă. Малтанхи хут вăл разведкăра çапăçăва кĕнĕ. Империализм вăрçи вăхăтĕнче вунултă хут аманнă пулин те, Василий Иванович çирĕп çӳренĕ. Унăн сылтăм алли суранланнă пирки çирĕп тытайман, çапла пулсан та, вăл граждан вăрçи çулĕсенче мĕн виличченех тăшманпа çапăçма пăрахман, хĕçне алăран яман. Унăн паттăрлăхĕ, унăн хурçă пек çирĕп кăмăлĕ боецсене хавхалантарнă, пурте Чапаев пек пулма тăрăшнă.

Чапаевăн паттăрлăхне патша çарĕнчи офицерсем те лайăх курса тăнă. Пĕрре вăл 8 çынлă отрядпа тăшманăн хĕрĕх салтакне тыткăна илнĕ. Василий Иванович «Георгиевски хĕрес» орденĕн тăвата степенне те илме тивĕçлĕ пулнă.

1917 çул пуçламăшĕнче Чапаев Балаковăна таврăннă та хăйĕн пĕтĕм пурнăçне революци ĕçне панă. Граждан вăрçин легендарлă геройĕ—Василий Иванович Чапаев—мĕн виличченех халăхпа, партипе пĕрле пулнă.

...Ĕлĕк Будайка ялĕ пулнă, халĕ Чапаев ячĕпе хисепленекен колхоз тĕпренех çĕнелсе улшăнчĕ. Ялăн тăхăрвунă виçĕ çул ĕлĕкрех пулнă сăн-сăпатĕнчен тĕсĕ те юлман. Совет влаçĕ пулнăранпа вăтăр çичĕ çул, çĕршывра колхозсем пулнăранпа çирĕм виçĕ—çирĕм тăватă çул хушшинче Чапаев ячĕпе хисепленекен колхоз, ĕмĕрхи тĕттĕмлĕхе сирсе пăрахса, Совет правительствипе Коммунистсен партийĕ пулăшнипе çĕнĕ те çутă пурнăç турĕç. Василий Иванович Чапаев хăй пурнăçне шеллемесĕр контрреволюцие хирĕç кĕрешни харама каймарĕ.

Колхоз тупăшĕ çултан-çул ӳссе пырать. Кунти теплицăсенче хĕлĕн-çăвĕн помидорсемпе симĕс сухан, купăстапа хăяр лартса ӳстереççĕ. Кăçал çуркунне кăна колхоз теплицăран аллă пин тенкĕ ытла тупăш илнĕ.

Колхозри доярка Варвара Богомолова кăçал 685 ĕçкунĕ тунă. Вăл нумаях пулмасть аслă Мускава—Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкине кайса килчĕ. Екатерина Андреева, Николай Афанасьев, Александра Глазнова, Валентина Шуралина колхозниксем—ялти ятлă çынсем.

**Николай СТУРИКОВ.**



Шупашкарти пионерсем В. И. Чапаевăн ача чухнехи юлташĕ Александр Константинович Федоров патĕнче хăнара.

**Б. Бородин** фотоӳкерчĕкĕ.

# ПИСАТЕЛЬ-КОММУНИСТ



Кăçалхи сентябрĕн 29-мĕшĕнче кăвар чĕреллĕ писатель-коммунист Николай Алексеевич Островский çуралнăранпа аллă çул çитрĕ.

Островскин кун-çулĕ питех те кĕске пулнă, вăл пурĕ те вăтăр икĕ çул çеç пурăннă. Анчах унăн çутă сăнарĕ пĕтĕм совет халăхĕ умне ĕмĕр тĕксĕмленми тухса тăнă ĕнтĕ, çулсем иртсе пынă май, вăл татах та çуттăнрах курăнма тытăнать. Островский çырнă «Хурçă мĕнле хĕрнĕ», «Тăвălра çуралнисем» ятлă кĕнекесене ăру хыççăн ăру вулать, унăн паттăр геройĕсенчен пирĕн çамрăксем пурăнма та кĕрешме вĕренсе пыраççĕ. Вилĕмсĕр Павка Корчагин Аслă Отечественнăй вăрçă кунĕсенче совет салтакĕсемпе юнашар утнă, вăл Зоя Космодемьянскăйпа Александр Матросова, Краснодонри çамрăк гвардеецсемпе Сталинград паттăрĕсене Тăван çĕршыв чыслăхĕпе ирĕклĕхĕшĕн хастаррăн çапăçма хавхалантарнă.

Павел Корчагин сăнарĕ совет литературинче чи паллă та чи юратнă сăнарсенчен пĕри пулса тăчĕ. Паянхи\ мирлĕ саманара вăл совет çыннисене, уйрăмах çамрăксене, Совет çĕршывĕн хăвачĕпе пуянлăхне ÿстерессишĕн кĕрешме хавхалантарать. Пинпин совет çамрăкĕсем ĕçпе кĕрешÿре пирĕн те Павка Корчагин пекех паттăр пуласчĕ, тесе ĕмĕтленеççĕ. Корчагин ятне ĕнтĕ пирĕн çĕршывра кăна мар, ытти çĕршывсенче те лайăх пĕлеççĕ. Корчагин сăнарĕ вĕсемшĕн совет çыннисен чи ырă шухăш-кăмăлне, чи паха енĕсене пĕтĕçтерсе тăрать.

Франци писателĕ Луи Арагон хăйĕн «Коммунистсем» романĕнче пĕр пĕчĕк эпизод кăтартса панă. Акă вăрçăра хытă аманса пĕтнĕ француз салтакĕ Жозеф Жигуа госпитальте выртать. Унăн икĕ куçĕ те курмасть, икĕ алли те çук. Çапах та тĕлĕнмелле çирĕп тытать вăл хăйне. Вăл — коммунист, хăй мĕншĕн кĕрешме тивĕçлине пĕлет. Хăйпе пĕр палатăрах выртакан тепĕр салтак икĕ ури те татăлнишĕн хурланса макăрма тытăнсан, Жозеф ăна çапла калать: «...Пуçу ĕçленĕ чухне эсĕ пĕтнĕ çын мар. Пĕлетĕн-и, эпĕ хамăн куçăмсем курнă чухне пĕр кĕнеке вуланăччĕ, мĕнле ăнлантарса парам-ши сана... Çав кĕнекене çыраканни хăйсен вăрçинче аманнă... вăл нумай çул хушши вырăнтан хускалмасăр выртнă, унăн куçĕсем курми пулнă... вăл кĕнеке çырнă... «Хурçă мĕнле хĕрнĕ»—çапла кĕнекин ячĕ... ăна пирĕн куçарнă... Çавăн пек çынсене яланах асра тытмалла, вара сана та çăмăлрах пулать. Вăл авă тытнă та кĕнеке çырнă, эпĕ те мĕн те пулин тăвăп-ха... Эпĕ те кирлĕ пулăп... ăнланатăн-и?»

Китай çамрăкĕсем, Корейăпа Вьетнам çамрăкĕсем, халăх демократи çĕршывĕсенчи çамрăксем, Николай Островскипе унăн геройĕсене асра тытса, совет çамрăкĕсенчен çĕнĕ пурнăç тума вĕренеççĕ, капитализмла çĕршывсенчи çамрăксем мирпе демократишĕн çапăçăва çĕкленеççĕ.

Çапла Островскин творчестви, уйрăмах унăн «Хурçă мĕнле хĕрнĕ» ятлă романĕ, ĕнерхи кунпа кăна мар, паянхи вĕресе тăракан пурнăçпа та тĕлĕнмелле таччăн çыхăнса тăрать. Çăннипех те ĕнтĕ унăн çулăмлă талантне социализмла революци самани, коммунистсен аслă партийĕ пăхса çитĕнтернĕ.

Николай Алексеевич Островский рабочи çемйинче, 1904 çулта çуралнă. Вуникĕ çула çитсен, вăл хăй те тара кĕрĕшсе ĕçлеме пуçланă. Украинăра шуррисем тискерленме тытăнсан, вăл, вунтăватă çулхи йĕкĕт, çитĕннĕ рабочисемпе пĕрле пăшал тытса, шуррисене хирĕç çапăçăва тухнă. 1919 çулта вăл комсомола кĕнĕ, Украинăри пĕрремĕш комсомолецсенчен пĕри пулнă. Вунултă çула çитсен, Островский Хĕрлĕ Çар ретне тăнă, малтан—Григорий Котовскин чаплă дивизийĕнче, кайрантарах Буденнăйăн Пĕрремĕш Утлă çарĕнче пулнă.

1920 çулхи кĕркунне йывăр аманса, вăл стройран тухать. Анчах, сывлăхĕ кăшт тÿрленсенех, Островский ĕç фронтне каять, çĕршыври хуçалăха юсаса ура çине тăратас ĕçе хăйĕн мĕнпур вăйне парать. 1924 çулта вăл Коммунистсен партине кĕрет.

Пĕчĕкрен йывăр ĕçре çитĕнни, çамрăклах хытă аманса сусăрланни унăн сывлăхне ытла та хавшатса хăварнă, вăл, çирĕм çултан тин çеç иртнĕскер, татах чирлесе ураран ÿкет. Унăн аллисем хускалаймасăр пулать, куçĕ тĕтреленсе килет. «Мана тата тепĕр усал инкек килсе çапрĕ. Сылтăм куç пачах курми пулчĕ... сулахайĕ те кăшт çеç курать»,—тесе çырать вăл хăйĕн юлташĕ патне 1928 çулта.

Анчах сывлăхĕ пĕтĕмпех хавшаса çитни те боец-коммунистăн шухăш-кăмăлне хуçаймасть, парăнтараймасть.

«Эпĕ ĕнтĕ виççĕмĕш çул пурнăçшăн кĕрешетĕп,—тесе çырать вăл юлташĕ патне. — Юлашки сывлăш тухиччене кĕрешмелли закона хам пурнăçăн никĕсне çавăн пек çирĕп хывман пулсан, эпĕ хама хам тахçанах персе пăрахнă пулăттăм... Эпир кăна, ман пеккисем кăна, пурнăçа ăсран кайса юратаканнисем, çĕнĕ, урăхла, лайăхрах тĕнче тăвассишĕн пыракан çак кĕрешÿе, çак ĕçе юратаканнисем, эпир кăна, мĕнпур пек пурнăçа витĕр курса илнисем, пĕр шанчăк та юлмиччен çирĕп тăрса, ниçта та пăрахса кайма пултараймастпăр».

Пурнăçшăн çакăн пек паттăррăн кĕрешме Николай Островские пирĕн парти иксĕлми çирĕп вăй панă, парти ăна халăх ĕçĕшĕн, çĕршыв ырлăхĕшĕн юлашки сывлăш тухиччене кĕрешме вĕрентнĕ.

Сывлăхĕ хавшаса çитнине пăхмасăрах, Островский партипе халăхшăн усăллă çын пулма тăрăшнă. Çак ĕмĕтпе вăл писатель ĕçне тытăннă. Хăй мĕн тÿсссе иртернине, хăй мĕн курнине, хăй мĕн шухăшланине унăн епле пулсан та çырса памалла, хăйĕн пурнăç опычĕпе совет çамрăкĕсене вĕрентсе çитĕнтерес ĕçре пулăшмалла. Анчах мĕнле çырмалла? Куçĕ курмасть, алли ĕран çеç хускалкалать. Пĕртен-пĕр май хăвăн шухăшусене çынна каласа çыртарасси çеç юлать. Çагла тытăнать вăл писатель ĕçне.

Тем пек пысăк йывăрлăхсене çĕнтерсе пырса, Островский 1930 çулта çырма пуçăннă «Хурçă мĕнле хĕрнĕ» ятлă романне 1932 çулта çырса пĕтерет. Островскишĕн ку вăл çав тери пысăк çĕнтерÿ пулса тăрать. Вăл хăйне татах строя кĕнĕ боец пек туйса илет.

«Пурнăç алăкĕ ман умра яриех уçăлса кайрĕ,—тесе çырать вăл, çĕнтерÿшĕн хавхаланса.—Эпĕ кĕрешÿе активлăн хутшăнма чунтан ĕмĕтленни пурнăçа кĕчĕ... Ман пурнăçăм халĕ ĕнтĕ тулли вĕресе тăрать. Малалла, ĕçе, ÿсĕмпе çитĕнÿсемшĕн! Хыттăн чăмăртăр ман алла, юлташсем! Манăн çĕнтерÿ вăл — сирĕн çĕнтерÿ! Илтетĕр-и, епле хĕрÿллĕн шаккать ман чĕре?»

Н. А. Островский, сывлăш çавăрса илмесĕрех тенĕ пек, хăйĕн иккĕмĕш романне — «Тăвăлра çуралнисем» ятлă произведенине çырма тытăнать. Кунта та вăл революципе пĕрле кĕрешÿе çĕкленнĕ ĕççыннисен паттăрлăхне кăтартса парас задача лартать. Анчах ку романа вăл çырса пĕтереймест, унăн чĕри тапма чарăнать...

Çук, «чĕри тапма чарăнать» тени вырăнсăр сăмах. Николай Алексеевич Островский пĕтĕм тĕнче умне кăларнă герой Павел Корчагин паян та пирĕнпе пĕрле, ыран та вăл пирĕнпе пĕрлех пулĕ. Унăн тарăн шухăшлă сăмахне эпир яланах асра тытăпăр.

— Этемĕн чи хакли—пурнăç,—тет пире Павел Корчагин.—Этем пĕрре çеç пурăнать, çав пурнăçа унăн чыслăн пурăнса ирттермелле, кайран тĕлсĕр пурăнса ирттернĕ çулсемшĕн чун ыратмалла ан пултăр, иртнĕ пурнăçри киревсĕр вактĕвексемшĕн намăс курмалла ан пултăр, вилес чухне: пĕтĕм пурнăçа та пĕтĕм вăй-хала тĕнчери чи ырă ĕçе — этемлĕхе ирĕке кăларассишĕн кĕрешнĕ çĕре патăм тесе каламалла пултăр...

Островскин «Хурçă мĕнле хĕрнĕ» романĕ пирĕн совет литературине чăннипех те классикăлла произведени пулса кĕчĕ. Ăна ĕнтĕ Совет Союзĕнче кăна мар, урăх çĕршывсенче те нумай-нумай чĕлхене куçарнă. Чăваш ĕççыннисем те ăна тахçанах хăйсен тăван чĕлхипе вулаççĕ.

Кристалл пек таса шухăш-кăмăллă, кăвар чĕреллĕ писатель-коммунист Николай Алексеевич Островский хăйĕн пĕтĕм пурнăçĕпе пире, писательсене, партипе халăх ĕçĕшĕн яланах пĕтĕм чунчĕререн парăнса кĕрешме, çул çинчи кирек мĕнле йывăрлăха та хастаррăн çĕнтерсе пыма, халăх валли чăннипех те лайăх кĕнекесем çырма вĕрентет. Совет писателĕ, унăн сăн-сăпачĕ мĕнле пулма тивĕçли çинчен Островский пĕр хутчен кăна мар витĕмлĕ сăмах каланă. Совет писателĕ вăл—«чи малтан социализм строителĕ... Вăл—боец. Боец, учитель, трибун. Пысăк саспаллипе çырăнакан çын», тенĕ Островский. Çавăн пек писатель пулас тесен, пурнăç çине парти куçĕпе пăхма вĕренмелле. Хăй çинчен Островский çапла каласа хăварнă: «Эпĕ — пĕчĕкçĕ тумлам, çумăр тумламĕ, çав тумламра аслă парти хĕвелĕн шевли çуталса тăрать», тенĕ. Вăл килти пурнăçра та, йăлара та, творчество ĕçĕнче те партилĕх принципне çирĕп тытса пынă. Рабочи класс ывăлĕ, парти ывăлĕ пулниуншăн чи пысăк телей шутланнă. Писатель-коммунист Николай Островский паян та коммунизм строителĕсен ретĕнче çирĕппĕн утса пырать.

# ПИСАТЕЛЬ ЯТНЕ ЧЫСЛĂН УПРАР

Николай ОСТРОВСКИЙ

**(ВЛКСМ X-мĕш съездĕнче тухса калама хатĕрленĕ тезиссем. Мускав, 1936 çулхи апрелĕн 17-мĕшĕ).**

Хаклă юлташсем, çак трибуна умне тухнă май манăн кăмăлăм хытă пăлханса хумханать. «Этем чунĕн инженерĕсен» батальонне кунта питех те хытă критиклерĕç, эпĕ шăпах ĕнтĕ çав батальонăн боецĕ пулса тăратăп. Мĕнле сăнлăхсем тухса тăраççĕ-ха пирĕн умма кунта, халăхсен хăватлă пĕрлешĕвĕнчи çамрăк гвардин вăйĕсене пăхса тухнă çĕрте? Хăвăрах куратăр: таврари пĕтĕм пурнăç хăватлăн малалла куçса пырать. Ирĕке тухнă халăх, большевиксен партийĕ ертсе пынипе, çÿлĕрен çÿлĕрех пусăма улăхать. Анчах та халăх малалла çавăн пек çĕнтерÿллĕн пынă чухне «этем чунĕн инженерĕсен» батальонĕ, тÿрех каламалла, хăй умĕнчи чи ответлă задачăсене пурнăçа кĕртеймест. Мĕн куратпăр-ха эпир? Çапăçу вут-кăварĕн малти линийĕнче — паттăр боецсен взвочĕ. Вĕсем хăватлăн çĕнтерсе пыракан юхăмран кая тăрса юлман. Вĕсен хĕçпăшалĕ тутăхман. Çапăçу вут-кăва-

рӗн линине Александр Фадеев хӗрлӗ партизансене ертсе тухрӗ, лăпкă Дон йӗри-тавра Шолохов большевик-казаксене пухать, Балтикăри революцилле матроссене Всеволод Вишневский çапăçăва ертсе тухрӗ. Яновский хăйӗн «Юлан-учӗсемпе» пирӗн стройра вырăн тупрӗ. Çак взводра лайăх боецсем татах пӗр вуннăн тупăнаççӗ... Ыттисем вара ăçта? Батальонра виçӗ пин штыка яхăн шутланать-çке-ха. Пирӗн батальонăн чапа тухнă командирӗ, çӳлӗскер те кăвак мăйăхлăскер, хăй ӗçӗн аслă ăсти, мăйăхне çилӗллӗн пӗтӗркелет те тарăхса хаяррăн пăшăлтатать: «Эх, çав обозниксем, фронтран пӗр аллă километр каярахра ирхи апат тăваççӗ пульха. Вӗсен кухни таçта шурлăха кӗрсе ларнă ӗнтӗ. Манăн кăвак пуçăма намăслантармӗçинччӗ пӗреххут». Паллах, ку вăл пăшăрханса шӳт тунă сăмах, анчах çав шӳтре чылай тӗрӗсси пур.

Пурнăçшăн хавасланакан, пӗтӗм чун-чӗререн пӗлӳлӗх патнелле, музыка патнелле, литература патнелле туртăнакан пирӗн çамрăксем хăйсен поэчӗсемпе писателӗсенчен янăравлă юрăсем, илемлӗ те савăнăçлă юрăсем кӗтеççӗ. Çав юрăсенче сăввисемпе кӗввисем килӗшӳллӗн илтӗнсе тăччăрччӗ. Çамрăксем хăйсен писателӗсенчен илемлӗ те витӗмлӗ, чăнлăхлă та талантлă кӗнекесем кӗтеççӗ. Пирӗн чыслă ӗç — çамрăксем ыйтнине тивӗçтересси. Пур-и совет литературинче çав пултаруллă вăйсем?

Пур!

### Малтисемпе танлашмалла

Ан тив, кӗнекесем сахалтарах пулччăр, анчах вӗсем илемлӗрех те витӗмлӗрех пулма тивӗç. Кӗнеке çӳлӗкӗ çинче шупка кӗнеке валли вырăн çук. Тӳрӗ кăмăллă ӗçченӗн вăхăтне, унăн канăçне вăрлама юрамасть.

Хăйсем вӗрентме шутлакансенчен нумайрах пӗлекенсем кăна ыттисене вӗрентме пултараççӗ.

Писатель çынсен ăс-тăнӗнчи капитализм юлашкийӗсене тăпăлтараканӗ пулма тивӗç.

Пирӗн вулакан хаяр критик, хӗрхенӳсӗр критик пулса тăчӗ. Ăна арпапа тăрантарма никам та хăяймӗ. Халăха улталама юрамасть, ӗç тухмӗ апла. Халăх сан произведенирисуялăха, чӗререн каламан сăмаха, ытахальтен шухăшласа кăларнă сăнлăха часах туйса илӗ, сана ырă мар сăмахпа асăнӗ, сан кӗнекӳне вуласа пӗтермесӗрех пăрахӗ те сан çинчен усал ят сарӗ. Ырă ята çухатсан, ăна çӗнӗрен тупма йывăр.

Совет çӗршывӗнчи писателӗн ырă ятне чыслăн упрамалла. Эпир ӗнтӗ çакна пӗлетпӗр: тӳрӗ кăмăллă ӗçпе кăна, пысăк ӗçпе, хăйӗн мӗнпур ăс-халӗпе чӗре вăй-хăватне хурса ӗçлесен кăна, кунӗн-çӗрӗн вӗренсе, татах та татах вӗренсе пырсан кăна, кӗрешӳпе строительствăна тӳррӗн хутшăнса пырсан кăна писатель стройра хăйӗн малти вырăнне йышăнӗ. Халиччен чаппа çеç, халиччен çӗнтерӳсемпе çеç пурăнма юрамасть. Эпир пӗлетпӗр: пирӗн çӗршывăн малта пыракан çыннисем — стахановецсем — пӗр тунă çитӗнӳсемпе лăпланса лармаççӗ, вӗсем паттăрла ӗçпе малти вырăна яланах хăйсен аллинче тытма тăрăшаççӗ. Çакă ӗнтӗ вӗсен чыслăх ӗçӗ пулса тăчӗ. Писательсем вара час-часах, пӗрер лайăх кӗнеке çырсан, лăпланса лараççӗ, пурнăç хăвăрт малалла каять, пурнăç мăранлăха каçармасть, пурнăç хăйхи писательсене кая тăратса хăварать. Вара трагеди пулать.

### Чап «хăрушлăхӗ»

Хастар ӗçшӗн çӗршыв чапа кăларнă нимле çамрăк боец та нихçан та урри айӗнчи çирӗп тӗреке çухатма тивӗç мар. Ура айӗнче тăван çӗр пуррине яланах çирӗп туйса тăр, коллективпа пӗрле пурăн, вăл сана вӗрентсе çитӗнтернине лайăх асра тыт. Эсӗ коллективран татăлса кайнă кун эс пӗтессин пуçламăшӗ пулӗ. Сăпайлăх боеца илем кӳрет; каппайланасси, вӗçкӗнленесси вăл — капитализмла кивӗ тӗнче юлашки, ку вăл — индивидуализм йăли. Боец мӗн чухлӗ сăпайлăрах, çавăн чухлӗ илемлӗрех. Çакă вăл писательсене те тӳрех пырса тивет.

### Çӗнӗ туйăмсем

Туслăх, тӳрӗлӗх, коллективлăх, çынна юратма пӗлни,— çаксем вӗсем пирӗн туссем. Хăвна çирӗп те хастар пулма вӗрентесси, революцие пӗтӗм чун-чӗререн парăнса тăрасси, тăшмансене кураймасăр пурăнасси — пирӗн законсем. Хӗçпăшаллă тăшман пирӗн патра пӗр япала çеç тупӗ — вилӗм. Капитализм çарӗнчи салтак, хӗçпăшала пăрахса, вăрçă вăрçма чарăнчӗ пулсан,—вăл вара тăшман мар. Эпир ăна урăлма тата хăйӗн штыкне пусмăрçăсене хирӗç çавăрма пулăшăпăр. Анчах хӗçпăшаллă тăшмана эпир пӗтӗм чун-чӗререн кураймастпăр; хӗçпăшаллă кӗрешӳре Совет çӗршывӗн боецӗ пӗр тӗллеве кăна пӗлет — тăшмана пӗтермелле. Тăван çӗршыва юратни, тăшмана курайманнипе хăватланнă юрату, çакăн пек юрату кăна пире çӗнтерӳ кӳрӗ. Курайманлăх пултăр тесен, тăшмана пӗлмелле, юнлă тăшманăн ирсӗрлӗхне, ултавлăхӗпе тискерлӗхне пӗлмелле — писательсем вара çакăн çинчен каласа пама тивӗç.



## ӲСЕТ ХУЛА, ИЛЕМЛЕНЕТ

**Пилӗк-ултă çул каялла Канаш çулӗпе Шупашкара пырса кӗнӗ тӗлте, Карл Маркс урамӗнче, йывăç çуртсем ытларах тӗл пулатчӗç.**

**Юлашки çулсенче Шупашкар хулин урамӗсем тӗпренех çӗнелсе улшăнчӗç. Урамсене ешӗл йывăçсем лартса илемлетрӗç. Хулана пырса кӗнӗ çӗрте электроаппаратура заводӗнче ӗçлекенсем валли туса лартнă тăватшар хутлă хитре çуртсем урам илемне кӳреççӗ. Хулари ӗçсыннисем валли ытти урамсенче те çӗнӗ çуртсем нумай лартнă.**

**Шупашкарта халь çӗнӗрен педагогика институчӗпе ялхуçалăх институчӗн çурчӗсене тăваççӗ. Вӗсем хулари чи хитре те пысăк çуртсем пулаççӗ.**

**Çывăх вăхăтрах хулара, Карл Маркс урамӗнче, çӗнӗ çурт тума тытăнаççӗ. Ку çурта чăваш тӗррисемпе илемлетеççӗ.**

Ӳкерчӗксенче: Шупашкарта Карл Маркс урамӗнче нумаях пулмасть туса лартнă пурăнмалли çӗнӗ çуртсем.

А. Припалов фотоӳкерчӗкӗсем.



# Пакăлти Микиш

*Калав*

Г. ТРОЕПОЛЬСКИЙ

П. Сизов ӳкерчĕкĕсем.

Мана колхозсем тăрăх нумай çӳреме тивет. Ĕлĕкрех, Евсеичпа туслашиччен, эпĕ пĕччен çӳреттĕм. Халĕ манпа пĕрле часчасах Евсеич пырать.

Старикĕ вăл çапласкер: хăй каçхи сторож пулса ĕçлет, анчах сывăрса тăранма та, сунара е пулă тытма кайса килме те ĕлкĕрет. Хăш чух вăл мана:

— Атя, Владимир Акимыч, эпĕ те санпа пырам, ырă çынсем мĕн туса пурăннине курам,—тесе хурать.

Вара, иксĕмĕр пĕрле çӳренĕ чух, çул çинче чунсене уçсах калаçатпăр...

Акă, халĕ те эпир унăн килне—«Çĕнĕ пурнăç» колхоза таврăнатпăр. Пирĕн ансăр урапан рессорĕсем хуллен кăна чĕриклетеççĕ. Кăрташ ятлă сар лаша тикĕссĕн юртать; Евсеич урисене ман еннелле илсе хучĕ,— вăл ĕнтĕ манпа самаях вăрăм халап пуçласа ярасшăн пулмалла.

Евсеич яланах хаваслă, ун пек калаçакана тупма та чылай шырас пулать. Вăл утмăлтан иртнĕ, анчах унăн сывлăхне ăмсанма пулать. Пысăках мар сухалĕ кăвак унăн, шĕвĕр — савăл пек, пичĕ-куçĕ вăрт-варт хускалать, улшăнсах тăрать: пĕрре шӳтле, çынран мăшкăлланă пек курăнать, кĕçех кулма пăрахать вăл, вара унăн сенкер, вичкĕн те ăслă куçĕсем хăй калаçакан



çын çине уççăн та тӳррĕн пăхаççĕ. Евсеичăн пуçĕ çинче пусмана савăлсем пек касса çĕленĕ кепка, ун тăррине тӳме лартса янă.

Вăл юмах яма юратать, пулма пултарайман шӳтле историсем шухăшласа кăларать, наянран тăрăхласа кулма хирĕç мар, сунара çӳренн çинчен калама пуçласан вара — хăйĕн çыпăçуллă, кулмалла халапне çав тери хаваслanса, каçса кайса майлаштарса пырать те, ăна кулмасăр ниепле те итлеме çук. Тĕрĕссипе, вăл хăй те çынсене култарма тăрăшать çав. Қалама пуçличчен кепкине хăрах куçĕ çине антарса лартать те пĕр пӳрнипе тăнлавĕ патĕнчен хыçса илет—акă, епле кулмалла ĕçсем пулаççĕ! тенĕ пек тăвать.

— Нумайăшĕ: агроном пуласси çăмăл ĕç, тесе шутлаççĕ...— тетĕп эпĕ Евсеича.— Çӳре хăвна май хир тăрăх, хĕвелпе пиç, тасан сывлăшпа сывла та тулă тинĕсĕн хумĕсем çине пăх. Қаламалли çук ĕнтĕ,— эпир хĕвелпе пиçетпĕр, тулă тинĕсĕн хумĕсем çине те пăхатпăр. Лайăх ку, паллах. Анчах та агрономăн мĕн чухлĕ сводка, сведени, плансем, отчетсем ыйтса янисене хирĕç ответсем тата ахаль ним усăсăр хутсем мĕн чухлĕ çырма тивнине сахалăшĕ пĕлеççĕ. Хăшпĕр эрнесенче хире тухма мар—кун сутине те курмастăн. Шав сводка, сводка, сводка!..

— Хут мĕн чухлĕ пĕтет пулĕ, батюшки!—хыттăн тĕлĕнсе илет Евсеич.

— Тепĕр сводки—иксĕр ыйтуллă, вуникĕ листа çинче пулать.

— Ыйтусене вуласа тухиччен те икĕ сăмавар ĕçсе яма пулать-иç.

— Пĕррехинче çавăн пек сводкăна тăршшипе—листа хыççăн листа—сарса тухнă та—виçĕ метр ытларах пулнă!

— Виçĕ метр!—пуçне сулкаласа илет Евсеич.—Ай-ай-ай! Пир тăрăхĕ вĕт вăл, чăн-чăн пир тăрăхĕ!

— Анчах çав пир тăрăхĕсене шухăшласа кăларакансем,— малаллах ӳпкелешетĕп эпĕ,—е министерство, е институт ыйтни çине яраççĕ, е тата хăйсенчен те хушса хураççĕ. Унсăрăн, çакăн пек ыйту ăçтан сиксе тухтăрха: «Юнашар ӳсекен, йĕркипе, суйламасăр илнĕ вунă купăста пуçĕ çинче миçе пăрса пур?» Юрать-ха хуть, асăрхаттарса çырнинче: «Ĕçе çăмăллатас тесе, кашни уйрăм купăста çинчи пăрçасене шутламалла мар», тенĕ. Уншăн та тавтапуç: шутла-ха эс вĕсене! Çавăнпа та вăл графа тултармасăрах юлать.

— Паллах ĕнтĕ, пăрçа ăна ăнланмасть. Ялт! сикет те—çук вăл! Йăли çапла унăн—кăпшанкă вĕт.

— Мĕн тăвас-ха пирĕн! Тепĕр чух ответ вырăнне çапла çыратăн вара: «Хытă сикеççĕ. Сăтăрçă активлă пулнă пирки шутлаймарăмăр», тетĕн.

— Тĕрĕс! Çапла кирлĕ те! «Сăтăрçă активлă пулнă пирки» тени—питĕ тĕрĕс!—Пĕр хушă чĕнмесĕр пынă хыççăн, Евсеич мана хĕрхеннĕ пек пулса ыйтать:—Сире çав... Хутран тунă пир тăрăхĕсемшĕн кăшт та пулин хушса тӳлеççĕ-и? Е ахалех ĕçлеттереççĕ?

Эпĕ ăна: ку вăл агроном ĕçĕсен шутне кĕрет, тени Евсеич кăмăлне каймарĕ.

— Ак çак шӳт тумалли япалапа туртасчĕ вĕсене! (Шӳт тумалли япала тесе вăл хăйĕн чăпăрккине калать).

— Кама?

— Çавсене ара... бюрократсене... Вĕсем пур-ха вĕт, э? Епле шухăшлатăн эсĕ?

— Пур та пулĕ çав,—килĕшетĕп эпĕ.—Анчах вĕсене кăкласах пыраççĕ...

— Паллах, кăкласа пыраççĕ!

Кăрташ, пуçне ывăткаласа, «шӳт тумалли япала» çине чалăшшăн пăххаласа илсе, хăвăртрах юртма тытăнать. Манăн чĕркуççи çинче выртакан полевой сумка—хулăн, шывпа йĕпеннĕ çăкăр пекех кӳпшек, унта сводкăсемпе сведенисем туп-тулли. Эпир чи юлашки сведенисене илме каятпăр: утă миçе капан пулнă, кашни капанĕ мĕн пысăкăш, кашни капанра утă пахалăхĕ мĕнле, унта хăях, акмасăр ӳсекен курăксем, акнисем—пур çулхисем, нумай çулхисем,—вĕсен шутĕнче люцерна, эспарцет, хутăш курăксем миçе процент, çав шутрах—вăрлăхлăх пухса кĕртни миçе процент.

Анчах «Çĕнĕ пурнăçра» ун пек сведенисене кам парĕ-ха? Счетовод çинчен шухăшламалли те çук. Вăл сана: выльăх апачĕ çавăн чухлĕ, утă çавăн чухлĕ, çуртырри улăмĕ çавăн чухлĕ, тет кăна.

— Евсеич! «Çĕнĕ пурнăçра» утă капанĕсене кам виçнĕ?—тесе ыйтатăп эпĕ.

— Мĕн вара?

— Сводка.

— А! Сводка-и!.. Миçе ыйту?

— Вунсаккăр.

— Пакăлти Микиш виçнĕ. Ун патне каяс пулать... Вăл хуть те пин ыйтăва хирĕç те ответ пама пултарать.

— Унăн хушамачĕ мĕнле вара?

— Қамăн?

— Ара, утă капанĕсене виçнĕ Пакăлтин.

— Кĕнекесем тăрăх — Пяткин, урамри пек каласан—Пакăлти... Çавăн пек усăсăр çăмарта пур— тăрă çăмарта. Силлесен—пăкăлтпакăлт! тăвать... Анчах ăна кĕнеке çинчи пек правленире çеç çыраççĕ, чĕнессе—Пакăлти, тесе чĕнеççĕ. Пурте çапла чĕнеççĕ. Унăн ачисем те—Пакăлти ачисем, арăмĕ те Пакăлти.

— Мĕншĕн ун çумне çавăн пек ят çыпăçтарса хунă-ха?

— Эккей! Мĕншĕн!.. Қам тивĕçлĕ—тӳрех çыпăçтарса хураççĕ, ачам. Пĕтĕмпех кирлĕ пек пулса пырать... Ĕмĕр тăршшĕпе шухăшласан та лайăхраххине шутласа кăлараймастăн! Халăх çавăн пек ят парса хурсан, вилсессĕн те пăрахăçа кăлараймастăн ăна. Ку ята ăна колхоз пуçланнă чухнех пачĕç: пухусенче нумай калаçать тата ăнланмалла мар сăмахсене питĕ юратать.

— Ну, хăй мĕнле вăл: ăслă-пуçлă мужик-и?

— Тĕтĕмĕ çăра, шӳрпи шĕвĕ.

Çак сăмахсем хыççăн вăл шухăша кайрĕ те калаçма чарăнчĕ.

...Эпир правлени патне пырса чарăнтăмăр. Унта сторожсăр пуçне никам та çук-мĕн—пурте хирте, вара эпир Пяткин патне кайрăмăр. Вăл пӳрт умне купаланă тăпра çинче, пĕр урине тепĕр ури çине хурса, тăрăшсах чĕлĕм туртса ларатчĕ. Евсеич ман паталла пĕшкĕнчĕ те хăлхаран хур чашкăрнă пек пăшăлтатса калаçрĕ:

— Пурте хирте, çынсем çитмеççĕ, а вăл лыцарь пек ларать. Яланах çапла... Шӳт тумалли япалапа туртасчĕ çурăмĕ тăрăх!

Пакăлти, ура çине тăмасăрах, мана аллине тăсса пачĕ те:

— Агрономи персоналне, çичсакăр миллиардшăн кĕрешекенсене, хĕрӳллĕ салам!—тесе хучĕ.

Эпĕ ăна хам мĕн пирки килни, вăл мана мĕншĕн кирлĕ пулни, счетоводран пур материалсене те илме çукки çинчен тӳрех каласа патăм. Микихвер эп каланине мăнаçланарах, ӳсĕркелесе, пирусне чаплаттарса ĕмкелесе итлерĕ. Унăн сăн-пичĕ путене çăмарти майлăрахчĕ: пĕчĕккĕ, хуратутлă. Çамки çинче питĕ хăвăрт хускалакан темиçе хутлам пур: хăй тĕлĕнсен, хутламĕсем çӳлелле çĕкленеççĕ, хăйне мăнаçлантарсан, хутламĕсем аялалла анаççĕ, кулса ярсан—хутламĕсем купăс пек пулса чĕтренеççĕ. Куçĕсем—пĕчĕк, кăштах хĕсĕннĕ, куç тĕкĕсем шурă, куç харшисем пачах та тĕссĕр. Сăнран пăхсан, вăл хĕрĕхрен иртнĕ, хĕрĕх иккĕ, хĕрĕх виççĕсенче, темелле.

— Эппин, утă пирки тăракан ыйту çинчен дебатировать* тумалла пулать. Та-ак!—Пакăлти таран сывласа илчĕ, янахне икĕ пӳрнипе тытрĕ те, çĕрелле пăхса, малалла калама тытăнчĕ:—Та-ак. Вăл ыйтусене пурне те эпир сирĕнпе пĕрле пĕтĕмпех тишкĕрсе тухма пултаратпăр. Пуринчен ытла, эпĕ, комисси членĕ пулса, утта виçнĕ çĕрте пулнă май, ку ыйтăва çутатса пама пултаратăп.

* Дебатировать — тавлашас, сӳтсе явас тени пулать.

Ҫакна каланӑ май вӑл хӑйӗн путене ҫӑмарти пек питне мӑнкӑмӑллӑн ҫӳлелле ҫӗклерӗ.

— Пире дебатировать туни кирлӗ мар,—терӗм эпӗ,—хӑшпӗр япаласем ҫинчен тӗрӗсрех пӗлмелле ҫеҫ пирӗн. Сирӗн утта виҫнӗ чух ҫырса пынисем пур-и, тата эсир капансенчи утӑ пахалӑхӗ пирки каласа пама пултаратӑр-и?

— Мӗнле?

Эпӗ тепӗр хут каларӑм.

— Та-ак... Виҫнӗ чух ҫырнисене эпир правление панӑ, анчах пахалӑхӗ пирки—пӗлетӗп, ӑна тӗрӗслес пулать те ҫынсемпе калаҫса килӗшес пулать... Каҫхине правлени ларӑвӗ пулать — унта тӗпренех сӳтсе явмалла... Паян эпир выльӑх-чӗрлӗх усрас тӗлӗшпе дебатировать тӑватпӑр, ҫавӑнта вара, кирлӗ пулнӑ таран, эсир—ялхуҫалӑх специалисчӗ — ыйтнӑ тӑрӑх, ҫак ыйтӑва та хутшӑнтарма пулать, мӗншӗн тесен пирӗн сире яланах итлемелле тата сирӗнпе пӗтӗмӗшпех килӗшсе пымалла. Мӗн-ха вӑл, выльӑх-чӗрлӗх усрас ӗҫ, енчен те...

Эп ӑна пӳлтӗм:

— Манӑн хире каяс пулать, анчах кунта сводкӑсем валли даннӑйсем ниҫтан илме ҫук.

Пакӑлти кӳренчӗ пулас. Унӑн ҫамки ҫинчи хутламсем аялалла сикрӗҫ.

— Так, так...—терӗ вӑл.—Эп ӑнланнӑ тӑрӑх, эсир сводкӑна пӳрт умӗнчи тӑпра ҫинче тултарас шутпа манран ыйтса пӗлесшӗн. Атьӑр правление, унта йӗркеллӗн вырнаҫса ларар та форма хушнӑ тӑрӑх дебатировать туса илер.

Эпӗ «дебатировать» тӑвас мар, терӗм, ҫавӑнпа та унпа сывпуллашса хире тухса кайрӑм.

...Каҫхине, правлени ларӑвӗ пуҫланиччен, эпир счетоводпа иккӗмӗр утӑ пирки панӑ вӗҫӗмсӗр нумай ыйтусенчен хӑшпӗрисем ҫине аран-аран ответсем тупса паркаларӑмӑр.

— Мӗн чухлӗ пустуй ыйтусем ку сводкӑра!—тӳссе лараймарӗ юлашкинчен счетовод.—Тата кун пек формӑна статуправлени те ҫирӗплетмен—бюрократсем шухӑшласа кӑларнӑ япала ку.

— Ан та кала,— алӑпа султӑм эпӗ,— ҫителӗклех вӗсем! Пустуйӗисем те, ниме пӗлтерменнисем те...

Тахши тӑкӑскӑ сасӑпа хуллен кӑна кулса ячӗ те, кӗтес хыҫӗнчен:

— Политика енӗпе илсен, аван мар калаҫу ҫак...—тени илтӗнчӗ.

Ку—Пакӑлти пулнӑ. Вӑл хӑш вӑхӑтра пырса кӗнине асӑрхаман та эпир...

— Мӗн аван марри пур унта?—терӗ ӑна хирӗҫ счетовод.—Ҫак пӗтӗм лӑпӑр-лапӑр ыйтусем пирки ответ парас вырӑнне: утӑ ҫавӑн чухлӗ пулнӑ, темелле кӑна вӗт.

Пакӑлти, тӑрӑхламалла кулкаласа, пирӗн паталла пычӗ те, хырӑмӗпе сӗтел ҫине выртса, калаҫма тытӑнчӗ:

— Мӗнле сводка пулать-ха вара вӑл?.. «Утӑ ҫавӑн чухлӗ пулнӑ»... Ку вӑл форма тӑрӑх туса панӑ сводка мар, шуйттан пӗлет—темскер пулать, сводка мар. Утӑ! Чаплӑ сӑмах вӑл—утӑ! Ӗҫӗн тымарне ӑнланас пулать. Эпӗ вӗт икӗ уйӑх хушши колхоз председателӗ пулнӑ, выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес тӗлӗшпе те ӗҫленӗ: ӗҫе ӑнланма пултаратӑп. «Утӑ» тенӗ сӑмах сводкӑра тӗп вырӑн йышӑнмалла, пӑта пек шала кӗрсе каймалла,— вӑл пӳрнипе сӗтел ҫине пусрӗ,—ҫав сводкӑра унӑн тарӑнланса сарӑлмалла. Ҫапла пулсан кӑна ҫӳлти ертсе пыракан ҫынсем ыйтӑвӑн тымарне ӑнланма пултарӗҫ. «Тымарне пӑх!» тенӗ Кузьма Стрючков.

— Стрючков мар, Прутков,—тӳрлетрӗм эп вӑл каланине.

— Прутков?—тепӗр хут ыйтрӗ Пакӑлти, сӗтел ҫинчен тӑрса, аса илме тӑрӑшнӑ пек пулса. Анчах хӑй пӗртте вӑтанмарӗ.— Темле, Стрючков тенӗ пек астӑватӑп... «Тымарне пӑх!» тет. Тӗрӗс калать. Политиксем!—Вӑл пӳрнине пуҫӗнчен ҫӳле ҫӗклесе юнаса илчӗ.— Эпир шухӑшласа кӑларман, эпир пӑрахӑҫа та кӑларас ҫук. Сводка вӑл—сводка, форма вӑл—форма. Никам та ирӗк парас ҫук ҫӳлте тӑракан организацисен кӑтартӑвӗсене пӑсма...

— Ну, тапранса кайрӗ ӗнтӗ, ка-айрӗ!—терӗ тахӑшӗ тӗттӗм ҫенӗкрен.— Халӗ чарӑнас ҫук вӑл: хӳри айне тилхепе лекрӗ—пӗтрӗ урапа!

Пакӑлти ҫенӗк еннелле чалӑшшӑн пӑхрӗ те пуҫне сулкаласа илчӗ.

— Тӗттӗмлӗх—тӗттӗмлӗхех ҫав! Илтрӗн-и, Федора Карповна мӗн каларӗ. Пӗр сӑмах кӑна—тӗттӗмлӗх!—Вӑл аллипе сулса илчӗ, картузне тӳрлетрӗ те каллех кӗтессе вырнаҫса ларчӗ.

Правлени ларӑвӗ хӑвӑрт пухӑнмарӗ. Малтарахран пынисем вӑхӑта кашни хӑйне майлӑ иртерчӗҫ. Счетовод хаҫата сарса тытса вулама тытӑнчӗ; виҫӗ ҫамрӑк ҫын, шахмат хӑми ҫине пӗшкӗнсе, задача шутласа кӑларма пикенчӗҫ. Вӗсенчен пӗри, ӑшӑ фуфайка ҫийӗнчен чӗн пиҫиххи ҫыхнӑ тата аллине чӑпӑркка тытнӑскер, лашапа ҫӳрекен Петя, ҫине тӑрсах лӑпкӑн канаш пачӗ:

— Слонпа каяс пулать! Слонпа кӑна.

— Ӑҫталла?—ыйтрӗ иккӗмӗш.

— Дэ-сиччӗ ҫине.

— Тӗрӗс... Халь вара... халь...

— Ферзьпе: а-тӑваттӑ ҫине,—терӗ ҫав Петя ятлиех.

— Нимӗн те тухмасть апла!—кӑшкӑрса илчӗ виҫҫӗмӗш.— Хурисем эф-улттӑ ҫине сикеҫҫӗ, короле шах пулать, ка-айрӗ вара урӑм-сурӑм!

Вӗсем виҫҫӗшӗ те шахмат задачине малалла шутлама тытӑнчӗҫ. Эпӗ те тӳссе тӑраймарӑм, вӗсем ҫумне ларса, тӑваттӑмӗш пултӑм. Сасартӑк ҫурӑм хыҫӗнче каллех Пакӑлтин тӑкӑскӑ сасси илтӗнчӗ:

— Ҫын чӑн-чӑн образовани илнӗ, ҫапах та ҫакӑн пек пустуй япаласемпе аппаланать.

— Юрататӑп,—терӗм эпӗ, ун еннелле ҫаврӑнса.

Пакӑлти, тӑрӑхламалларах кулкаласа, картузне тӑнлавӗ ҫинелле шутарса лартрӗ. Унӑн сайра та шурӑ ҫӳҫӗсем пуҫӗн пӗр енчен милкӗ вӗҫӗ пек тухса тӑраҫҫӗ.

— Ку вӑйӑ валли ӑс кирлӗ,—терӗ счетовод, малтанхи пекех хаҫат вуланӑ май.

— Ҫак Петькӑн ӑс пур-и вара?—кӑшкӑрсах ячӗ Пакӑлти, каччӑ ҫурӑмӗнчен пӳрнипе тӗртсе.

Анчах лешӗ, куҫӗсене шахмат хӑми ҫинчен илмесӗрех, ӑнсӑртран каланӑ пек, хуллен кӑна: «Тӑхта, акӑ, ҫак ларура сана ӑс парӗҫ!» терӗ те, шухӑша кайса, ним тума пӗлеймесӗр, ферзь пуҫӗнчен тытса ларчӗ. Уншӑн ҫак самантра Пакӑлти ҫут тӗнчере пачах та пулман. Петян кепки айӗнчен хура ҫӳҫӗн кӑтрашкисем тухса кайнӑ, куҫхаршисем хура та сарлака, хӗрлӗ пит ҫӑмартисем хӗвелпе пиҫсе кайнӑ, янах шӑммисем кӑшт сарлакарах, куҫӗсем шанчӑклӑн пӑхаҫҫӗ, хӑй ҫав тери вӑйлӑ пулни палӑрать. Вӑл ҫичӗ ҫул вӗренмелли шкултан вӗренсе тухнӑ та халь ялхуҫалӑх шкулӗнче заочно вӗренет. Виҫӗ ҫултан вӑл агроном пулать. «Шуррисем пуҫлаҫҫӗ те выляса илеҫҫӗ» пулсан, мӗн тума кирлӗ ӑна ҫак вӑхӑтра Пакӑлти?

Ҫенӗкрен пӗр харӑсах темиҫе ҫын кӗчӗҫ, вӗсем хушшинче Евсеич та пурччӗ. Пурте пӑлханнӑ пек пулнӑччӗ, йӑл та йӑл кулкалаҫҫӗ, Данила Васильевич Головков конюх—сарлака хулпуҫҫиллӗ, тӗреклӗ, украинецсен евӗр уссиллӗ, аялалла усӑнса аннӑ ҫӑра куҫхаршиллӗ, жилеткине йӳле янӑ, аллине йӗвен тытнӑ ҫын хулӑн сасӑпа кӗрлерӗ:



— Ну, Евсеич та ҫав! Вӗлерчӗ култарса, туршӑн та вӗлерчӗ!

Тултан кӗнисем шавлӑн вырнаҫма тытӑнчӗҫ—пӗрисем саксем ҫине, теприсем ҫурӑмӗсемпе стена ҫумне тӗренсе кукленсе ларчӗҫ.

Евсеичӑн часах хӑйӗн постне каймалла пулчӗ: ларура та пулас килнӗ унӑн, хурала тухма та вӑхӑт ҫитнӗ.

Данила Васильевич йӗри-тавра пӑхса илчӗ те:

— Пурте пухӑнса ҫитрӗҫ пулас,—терӗ.— Кузьмича чӗнме те юрать. Коля!—стена ҫумне тайӑнса тӑнӑ ачана пуҫӗпе сулчӗ вӑл. — Кай-ха, Петр Кузьмича чӗнсе кил.

Часах колхоз председателӗ Петр Кузьмич Шуров пырса кӗчӗ, вӑл утнӑ ҫӗртех пурне те пӗр харӑс сывлӑх сунчӗ те, чарӑнса тӑмасӑрах, хӗрлӗ пусмапа витнӗ сӗтел хушшинелле иртрӗ. Счетовод ҫав самантрах, аллине шур хут листи тытса, сӗтел айӑккине пырса ларчӗ. Пакӑлти малти тенкел ҫине вырнаҫрӗ.

Лару пуҫланчӗ. Председатель, счетоводпа хуллен кӑна канашласа илсе, ура ҫине тӑчӗ те пӗлтерчӗ:

— Кун йӗркинче икӗ ыйту: пӗрремӗш—выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫ пирки, иккӗмӗшӗ—ӗҫкунӗсен минимумне тултарман колхозниксем ҫинчен.

Пӗррӗмӗш ыйтупа Петр Кузьмич хӑй каларӗ. «Ҫӗнӗ пурнӑҫра» председатель пулса вӑл пӗтӗмпе те пӗр ултӑ уйӑх ҫеҫ ӗҫлет; хӑйӗн сӑмахӗсене кӗскен калани, кӑтартусене яланах татӑклӑн пани, пур ӗҫсене те ҫине тӑрса туни, наянсене тӳсме пултарайманни тата хӑйӗн ӗҫне юратни ӑна унччен малтан ӗҫленӗ нумай ҫынсенчен питӗ лайӑх палӑртса тӑраҫҫӗ. Колхозниксем ӑна хисеплеҫҫӗ, анчах ӗҫрен пӑрӑнса ҫӳрекен кахалсен пурнӑҫӗ пӗтрӗ, вӗсене вӑл ним хӗрхенмесӗр пӗтӗм колхоз умне кӑларса тӑрататъ. Анчах хӑй ҫине пӑхсан — нимех те ҫук пек... Пӗвӗ ҫӳлӗ мар, типшӗм, пиншакне те мухтамалли ҫук, галстукӗ те ҫавӑн манерлех... Сӑнран-питрен чаплӑ мар. Чӑн та, ҫамки ҫӳлӗ унӑн, сарӑрах ҫӳҫӗсем кӑтраланса, пӗтӗрӗнсе тӑраҫҫӗ, анчах пӗвӗпе, кӗлеткипе мухтанаймасть. Ни хырӑмӗ мӑкӑрӑлса тӑмасть, ни кӑвак галифе тӑхӑнса ҫӳремест,— ун пек йӗм ӑшне тепӗр председатель, кӑмӑлӗ пулсан, ҫур пӳлме тулӑ вырнаҫтарма пултарать,—пӗр сӑмахпа, тӗлӗнмелли нимӗн те ҫук, ытти пур ҫынсем пек ҫынах! Куҫӗсем хура унӑн, усӑмлӑ та кӑмӑллӑ... Анчах хӑй ҫиленсен вара ӑнланса илме ҫук: те хура унӑн куҫӗсем, те урӑх тӗслӗ, хӗссе лартать те вӗсене, куҫ шӑрҫисемпех ҫынна витӗр шӑтарать, пӑхнӑ чух хӑй: «Суятӑн, хыпашласа пӗлетӗн!» тенӗн туйӑнать. Рвачсемпе, наянсемпе пысӑк хирӗҫӳсем пуҫланса кайнӑ унӑн, лешсем ним тума аптраса ҫитнӗ. Ун ҫинчен района та, облаҫа та мӗн чухлӗ жалоба панӑ пуль, Мускава та ҫитернӗ. Анчах кун пирки кайран калӑпӑр: эпир Петр Кузьмичпа пӗрре кӑна мар тӗл пулӑпӑр-ха, унпа ҫывӑхрах паллашӑпӑр.

Хӑйӗн сӑмахӗнче председатель ҫапла каларӗ:

— Выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли плана тултарма пирӗн колхозниксенчен ҫирӗм пуҫ пӑру контрактацие тумалла. Вара выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ыйту татӑлать. Выльӑх апачӗ пирӗн ҫителӗклӗ. Халӗ контрактаци тумалли хака палӑртса ҫирӗплетес пулать... Камӑн мӗнле сӗнӳсем пур?

Урӑх нимӗн те каламарӗ. Ыйту питӗ ҫӑмӑл та усӑмлӑ пек курӑнчӗ.

Чи малтан Данила Васильевич сас пачӗ:

— Атьӑр, пӗлтӗрхи пекех тӳлетпӗр: кашни пӑрушӑн пӗр центнер тырӑ та ҫӗр тенкӗ укҫа.

Ку сӗнӗве никам та хирӗҫ пулас ҫукки лайӑхах палӑрнӑччӗ, темелле. Анчах ун пек мар иккен ҫав!

— Тата мӗнле сӗнӳсем пур? Кам каласас тет?—ыйтрӗ председатель.

Ҫав самантрах Пакӑлти ура ҫине тӑчӗ.

— Парӑр-ха сӑмах, эп калам.

— Ну, кайрӗ ӗнтӗ халь!—терӗ тахӑшӗ хыҫалти ретрен.

Пакӑлти хӑйне хыҫалтан сас паракана пӗрре пӑхсах пӗтерсе хучӗ, вара ӳпкевлӗн: «Дисциплина пӗтсе пырать, пушатса ятӑн», тенӗ пек, председатель ҫине ҫаврӑнса пӑхрӗ. Унтан ывӑҫ тупанӗпе ҫамкинчен пуҫласа ӗнсине ҫити шӑлса илчӗ,—ҫавна пула сайра ҫӳҫӗсем пӗр тӗлте пухӑнса автан киккирикӗ пек пулса тӑ-

чĕç,—çамки çинчи хутламĕсене аялалла антарчĕ, янахне çÿлелле çĕклерĕ те тÿрех çапăçма юратакан, анчах тĕсне çухатнă, сăхса пĕтернĕ киккириклĕ автан пек пулса тăчĕ.

— Çапла, юлташсем! Эпир паян кунта...—Вăл тарăннăн сывласа илсе, самантлăха чарăнса тăчĕ.—Правлени ларуне пухăнтăмăр... Çапла, пĕлтĕрхи иртнĕ çул хушшинче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç мĕнле пулса пынин итогĕсене пăхса тухма тата килес çул валли плансем палăртма, çĕнĕ çула çĕнĕ вăйпа пырса кĕмеллине тата ыттине те палăртса хума пухăнтăмăр. Анчах мĕн куратпăр-ха эпир, хаклă юлташсем? Ни-имĕн те курмастпăр. Эпир сÿтсе те явмастпăр. Çапла.

— Кĕскерех!—терĕ председатель.

Пакăлти ун еннелле çаврăнчĕ те, ăна шелленĕ пек кулса илсе, малалла янрама тытăнчĕ:

— Эп калатăп акă. Чирлĕ выльăхсем пур-и пирĕн? Пур, юлташсем! Ăçта пирĕн витинарсем? Мĕншĕн укçа тÿлетпĕр эпир вĕсене? Ăçта вĕсем, çав спецсем?! Ăсталла пăхса пурăнать правлени: ĕне ÿксе вилнĕ! Э? Анчах эсир нимĕн те шарламастăр!..—Унăн сасси çÿлтен çÿле хăпарса пычĕ.—Камран шăрш кĕме пуçлать, юлташсем? Паллах: пуçлăхсенчен. Спецсен те, колхозниксен те дисциплина çук. Ăсталла каятпăр эпир, юлташсем: ĕне ÿксе вилнĕ!

— Çитĕ ĕнтĕ сана!—тÿссе çитараймарĕ председатель.—Ветеринарнăй врач çырнă акт пур вĕт. Ĕç çинчен кала!

— А-а! Ку вара ĕç мар-и? Критикăпа самокритикăна путаратăн! Анчах та эпĕ, ялта политика тĕлĕшĕпе нумай пĕлекен актив пулса, критикăпа самокритикăсăр пурăнма пултараймастăп...—Вăл каллех пĕр самантлăха чарăнса тăчĕ.— Мĕн вăл чирлĕ выльăх? Чирлĕ выльăхсемпе кĕрешес пулать пирĕн, ан пултăр вăл. Çавна ăнланас пулать те, кулленхи ĕç çумне хутшăнтарса туса пырас пулать.

Данила Васильевич Коля патне пĕшкĕнчĕ те çурма сасăпа, анчах пурне те илтĕнмелле каласа хучĕ:

— Игнатьич патне шорнăйне кай та кала: хăмăтна çĕлесе пĕтер, те! Кунта Пакăлти калаçать. Вăл калаçса пĕтерсен систерĕпĕр, вара килĕ. Унччен хăмăт çĕлесе пĕтерме ĕлкĕрет вăл.

Пакăлти, пурне те тăрă шыв çине кăларакан çын рольне хăнăхса çитсе, çаплах кăшкăрчĕ:

— Ку — пĕрре! Пĕрре, юлташсем!—Вăл пÿрнипе çÿлелле тĕртрĕ.—Тепри вăл — чăх-чĕп ыйтăвĕ. — Çапла каларĕ те, пÿрнипе аялалла тĕртрĕ.

Председатель, ним тума аптраса, аллипе сулчĕ. Счетовод аллинчи кăранташне хурса хаçат тытрĕ. Данила Васильевич пăшатан кăларчĕ те, йĕвенне чĕркуççисем хушшине хĕстерсе, ăна юсама тытăнчĕ.

— Тепри вăл — чăх-чĕп ыйтăвĕ!—кăшкăрчĕ Пакăлти.—Пит те кĕрÿллĕ ку, чăх-чĕп ыйтăвĕ, мĕншĕн тесен чăх та выльăхах, ăна та тăрантармалла. Тăрантармалла, юлташсем! Эпĕ акă чăхсен витине пытăм та, пĕр ватă чăх, чÿрече çинче ларса, ман çине кăрушла сасăпа: ко-о-о!—тесе кăшкăрса ячĕ. Паллах, çиесшĕн вăл! Анчах та мĕншĕн çиесшĕн? Çитерме-ессĕ! Çитермессĕ, юлташсем! Пурĕпĕр выльăх вĕт: хуть чăх, хуть ĕне.

— Пурĕ-пĕр мар!—терĕ хыттăн Петя-ездовой.—Вĕсем — икĕ тĕрлĕ класс: чăхсем — кайăксен класĕ, ĕне — сĕт çисе ÿсекенсен класĕ.

— Эсĕ ху сĕт çисе ÿсекенскер!—тарăхса кăшкăрса ячĕ Пакăлти.—Туту çинче аннÿ сĕчĕ типмен, анчах калаçава хутшăнма хăтланатăн. Председатель юлташ! Ларăва форма тăрăх ертсе пыр! Мĕн пулса тухать капла пирĕн? Пăх-ха эс ăна! Классем шухăшласа кăларнă вăл!.. Çапла, юлташсем! Халĕ сыснасене илер.

Пурте пĕр харăс, ун сăмахĕ пĕтессе шанмасăр, ассăн сывласа ячĕç.

— Сыснасене илер, юлташсем! Хуçалăха малашне те çакăн пек тытса пыма пултаратпăр-и эпир? Çук, хаклă юлташсем, пултараймастпăр. Çыватпăр, юлташсем! Силлесех вăратас пулать пире. Ĕçе кăкранах улăштарас пулать. Сысна — выльăх вăл...—Пакăлти Петя çине чалăшшăн пăхса илчĕ те малалла каларĕ:—Сысна вăл кăмăллă выльăх. Сыснан тĕрĕс выльăх пулас пулать, антихрист мĕлки мар. Ку пĕрре. Анчах Улаçка икĕ эрне чирлерĕ, ăна аран-аран сыватрĕç, начарланса çитрĕ — çавăнпа антихрист мĕлки пулса тăчĕ те вăл.

Улаçка чирленине, вăл чирленĕ чух дежурнăйсем талăкĕпех ун патĕнчен кайманнине пурте пĕлнĕ, анчах Пакăлти çаплах «сысна ыйтăвĕ» пирки çине тăрсах калаçрĕ, «хускатрĕ», «дебатировать» турĕ, «кăкран улăштарма» хушрĕ. Унăн сăмахĕсене никам та итлемерĕ ĕнтĕ, çынсен хăлхисене темле уйăрса илмелле мар сасăсем çеç пырса çапăнчĕç.

— Иккĕмĕш ыйту: ĕçкунĕсен минимумне тултарман колхозниксем çинчен,—сасартăк хыттăн пĕлтерчĕ председатель.

Ку питех те кĕтмен çĕртен пулчĕ те, пурте кăртах сиксе, хускалса илчĕç. Çĕнĕ уçă сасă тÿрех ăс-тăн патне пычĕ. Пакăлти ним ăнланмасăр аллисене саркаласа тăнă вăхăтра председатель ĕçе татса та пачĕ:

— Пĕрремĕш ыйту пирки сасăлăпăр: кам Данила Васильевич Головков панă сĕнÿ майлă, çавсене алă çĕклеме ыйтатăп!.. Пурте сасăларĕç. Çырса хурар эппин: кашни пăрушăн çĕр килограмм тырă тата çĕр тенкĕ укçа.

— Епле-е?—çуйăхса илчĕ Пакăлти.—Критикăна хĕсетĕр! Райкома çыратăп! Ыранах çырса яратăп... Облаçа çыратăп! Курăпăр-ха эпир. Çитмелли çĕре çитеретĕпех эпĕ. Спецсене те, сана та çитеретĕп! Актив сассине хуплатăр! Кам ирĕк парĕ ун пек тума?!

— Иккĕмĕш ыйту — минимум çинчен,—вăл кăшкăрашни çине çаврăнса та пăхмарĕ председатель.—Ĕçкунĕсен минимумне тивĕçлĕ сăлтавсăр виçĕ çын тултарман: вĕсенчен пĕрремĕшĕ — Никифор Пяткин; унăн пĕтĕмпе те утмăл ĕçкунĕ çеç пулнă. Пирĕн колхозра ачасен, шкулта вĕренекенсен çĕршер ĕçкунĕ пур. Анчах Пяткинăн... Э, тепĕр тесен, мĕн калаçмалли пур ун çинчен! Акă вăл — пăхăр та ун çине, кирлĕ пек йышăнăр!

Мĕн кăна пулса тăчĕ пуль Пакăлтипе! Вăл пĕрре председатель çине пăхрĕ, тепре йĕри-тавра ларакансем еннелле çаврăнса пăхрĕ, çамки çинчи хутламĕсем пĕрре выляса илчĕç, тепре тĕлĕннипе çÿлелле çĕкленчĕç те çаплипех тăрса юлчĕç; вăл аллипе ĕнсинчен пуçласа çамки патне çити сăтăрса илчĕ, çавна пула киккирик пек тăракан çÿçĕ выртрĕ те, хăй ку таранччен автан пек курăнни тÿрех пĕтсе ларчĕ.

— Пурăнма памасть вĕт вăл пире!—калама тытăнчĕ Федора Карповна. Хулпуççийĕ çине тăваткал-тăваткал ÿкерчĕклĕ шаль уртса янă, çÿлĕ те тĕреклĕ, хĕвел çинче пиçнĕскер, вăл сĕтел патне пырса тăчĕ те малалла каларĕ:—Эпĕ, правлени членĕ пулса, тÿрех калатăп: пурăнма памасть! Эпир хĕрсех çум çумлаттăмăр, а вăл пыратчĕ те икшер сехет сăмах калатчĕ. Ун хыççăн Уринен пуçĕ ыратать: вăл пырсанах чĕтреме ерсе каять, мĕскĕн. Тепĕр çыншăн пулсан, нимĕн те мар: пакăлтатать пулсан — пакăлтаттăр! Анчах тепри — итлеме пултараймасть, тÿсеймест. Паллах, вăл «агитацилеме» пырсан, нормăсене тултараймастпăр. Ну, юрĕ ĕнтĕ, калаçасси килетех пулсан, калаçтăр, анчах ĕçлес те пулать-çке-ха... Ут-мăл ĕçкунĕ! Мĕнешкел намăс! Е ăна валли саккун çук-и?!. Эп пĕтертĕм...

— Саккун пур,—терĕ Петя.—Мĕн тума тытса усрамалла ăна колхозра?

Пакăлти сăн-пичĕ сасартăк улшăнса кайрĕ: вăл шĕвĕр сăмсипе нăшлаттарса илчĕ, куçĕсем сиккелеме, ялкăшма тытăнчĕç; пăсара пек хаярланса кайса, аллине çÿлелле çĕклесе кăшкăрса ячĕ вăл:

— Эпĕ активра çÿретĕп, а эсир мана компитировать тăвасшăн! Çу-ук! Ирĕк памастăп! Эпĕ заем тĕлĕшĕпе икĕ çул ĕçленĕ, анчах...

— Акă сана «анчах»!—сасартăк хулăн сасăпа мĕкĕрсе ячĕ Данила Васильевич.—Заем тĕлĕшĕпе! Анчах та ху кăçал та заем укçине тÿлемен. Намăссăр куç, эпĕ ак çитмĕл çулта, çапах та манăн тăватçĕр ĕçкунĕ пур, а эсĕ хĕрĕхе те çитмен пулĕ-ха. Шуйттан милĕкĕ! Тьфу!—Данила Васильевич йĕвенне силлесе ун çăварлăхне чанкăртаттарса илчĕ, хăйĕн хулăн сасси пÿлĕмре пысăк пичкери пек янăрарĕ. Унтан вăл лач! сурчĕ те ларчĕ.—Эп хамăнне каларăм... Колька! Кай Игнатьич патне, Пакăлти каласа пĕтерчĕ, те. Хăмăтне çĕлесе пĕтермен пулсан — пăрахтăр ăна, «тĕрлĕ ыйтусенче» лаша кÿлмелли хатĕрсем пирки калаçăпăр... Пăх-ха эс ăна — акти-ив!—мĕкĕрсе илчĕ те вăл юлашкинчен, йĕвен çăварлăхĕпе çĕре çапса илчĕ.

— Ну, мĕнле-ха ĕнтĕ, сасăлăпăр-и?—туринчен те пĕр харăсах ыйтрĕ председатель.—Хирĕççисем çук. Кам Пяткина юлашки хут асăрхаттарас тет?.. Пурте!

Данила Васильевич, сарлака ывăç тупанне пуçĕ çинче тытса, лăплантармалла каласа хучĕ:

— Сăпан. Ăна пăчăртаса кăларас пулать.

Пакăлти ним хускалмасăр, пуçне пĕксе, ывçисене чĕркуççисем хушшине усса ларчĕ. Унăн пичĕ курăнмастчĕ. Те вăл халь мĕн пулса иртнине ăнланса, хăйĕн питне колхозниксенчен юри пытарнă, те облаçа памалли çĕнĕ жалобăна мĕнле çырасси çинчен шухăшланă — кам пĕлет ăна! Анчах хăй темле питех те мĕскĕнччĕ.

...Пухуран эпĕ васкамасăр таврăнтăм. Каçĕ ăшă та лăпкăччĕ. Пысăк та çутă уйăх йывăççем çине, курăк çине кĕмĕл тĕс сапса тăратчĕ. Инçетре те мар купăс сасси янăраса кайрĕ те çавăнтах шăпланчĕ. Темиçе хутчен тăмана кăвиклетрĕ, анчах вăл та часах чарăнчĕ. Акă, Данила Васильевич пÿртĕнче çутă çуталчĕ — вăл килне таврăннă ĕнтĕ. Акă тата тепĕр уçă чÿречере çутă курăнчĕ, унтан хĕрарăм сасси илтĕнчĕ:

— Мĕн пулнă сана, Микихвер? Е ÿсĕр-и эс?

«Ара, ку Пакăлти пÿрчĕ вĕт!»—шухăшларăм та эпĕ, хам сисмесĕрех чÿречерен пĕр ик-виç метр чарăнса тăтăм. Пакăлти арăмне хирĕç ним те чĕнмесĕр чÿрече патĕнче ларатчĕ.

Колхоз кĕлечĕ тĕлĕнче мана Евсеич чĕнсе илчĕ:

— Акимыч-и ку?

— Эпĕ.

— Утту тăрăх палларăм...—Вăл ман паталла пырса пăшалне тепĕр хулпуççийĕ çине илсе çакрĕ, чĕлĕмне табак тултарчĕ те:—Ну, Пакăлти пирки мĕнле йышăнчĕç унта?—тесе ыйтрĕ.

— Татах çавăн пек пулсан, колхозран кăларатпăр, тесе асăрхаттарчĕç...

— Вăл хăй мĕнле?

— Авă, килĕнче сĕтел хушшинче ларать, ăнран тухса кайнă çын пек...

— Лайăххах пырса тивнĕ эппин. Тен, ăнланнă... Ăнланса илнĕ пултăрах!—Вăл тарăн сывласа илчĕ, чĕлĕмне ĕмкелерĕ те хушса хучĕ:—Паллах ĕнтĕ, пĕрер эрнелĕх шăпланать... Ав Петр Кузьмич каллех пĕр-пĕччен правленире ларать. Куратăн-и, çутă çунать! Çырать...

Шăп.

Ял тулашĕнче, икĕ енче те, икĕ трактор ĕçлетчĕç. Вĕсем пурте хăнăхса çитнĕ каçхи шăплăха пăсмаççĕ, вĕсем яланах ĕçлеççĕ, мотор сассине никам та асăрхамасть, анчах вăл чарăнса ларсан — пурте илтеççĕ. Стена çинчи сехет, çÿреме чарăнсан, çавăн пекех хăй çинчен аса илтерет.. Акă мĕнле вăл, ялти шăплăх!

— Сывă пул, Евсеич!



# Ф. П. Павлов çуралнӑ ялта

*(Çул çинчи блокнотран)*

Мана, анатри чӑваша, ӗлӗкхи Самар кӗпӗрнин çеçенхирлӗ те сайра вӑрманлӑ сарӑ уйӗсенче ӳссе çитӗннӗ çынна, кунта пурте савӑнтарать. Пирӗн енчи чӑваш ялӗсем пысӑк, çара. Йывӑçлӑ ялсем сайра çеç курӑнкалаççӗ, унта йывӑçӗсем те çын лартнисем мар, хӑй тӗллӗн ӳснисем, ял пуçланиччен хӑвалӑхран е вӑрмантан тӑрса юлнисем. Пӳрчӗсене тултан, тепӗр чухне шалтан та, тӑмпа шӑлса шуратса лартнӑ. Аякран пынӑ чухне хир пекех тикӗс те çара вырӑнта шап-шурӑ ял курӑнса каять. Урам варрисенче—янкашка пусӑ тарасисем. Шыв мӗн чухлӗ тарӑнрах, пусӑ тараси те çавӑн чухлӗ çӳлӗрех. Пахчасенче — хӗвелçаврӑнӑш, арпус, тын...

Çуллахи шӑрӑх кунсенче вара анатри чӑваш ялӗсем хӗвел питӗнче хӗрӗнсе лараççӗ. Кӑшт çил хускалсанах е урампа машина иртсе кайсан, пӳртсене тусан пӗлӗчӗ пырса хуплать.

Пиччене, колхозри хуртхӑмӑр ӑстине, эпӗ темиçе хутчен те йывӑçсем лартма ӳкӗтленӗ, çук, итлемест:

— Мӗн аппаланмалла йывӑççемпе, ача-пӑча ӗçӗ вӗт вӑл,—тет.

Пирӗн енчипе кунти ялсене танлаштарсан, урӑх уйрӑмлӑх та сисӗнме пуçлать: ирӗк çӗрте шухӑшӗ те ирӗк, тенӗ пек, пирӗн енче те хӑйне евӗр лайӑххи пур: хирӗсем — чикесӗр, шывӗ-шурӗсем аслӑ, улӑхӗсем çулса пӗтермелле мар. Хул-çурӑмсене ирӗккӗн сарса ӗçлемелӗх те, вӑхӑт çитсен, канмалӑх та вырӑн пур...

Пирӗн чаплӑ драматург, композитор, писатель-юморист, музыка тӗпчевçи Федор Павлович Павлов çуралнӑ ялта — Çӗрпӳ районӗнчи Патӑрьелӗнче — эпӗ кӑçалчен те пулкаланӑ. Патӑрьел Ункӑ шывӗ хӗрринчи талӑмра сапаланса ларать. Юнашарах—Хурӑнсур, Туптул ялӗсем.

Колхозсем пуçланиччен Туптулпа Патӑрьел хушшинче пӗр татӑк çӗршӗн чӑн-чӑн вӑрçӑ пулса иртнӗ. Пуртӑсемпе те сенӗксемпе çапӑçнӑ. Пӗтӗм ял халӑхӗ пуçтарӑнса, тепӗр ялне кайса хупланӑ, антӑхса кайса çапӑçнӑ. Икӗ енчен те хӑйсен «паттӑрӗсем», «ертсе пыраканӗсем» пулнӑ. Тата Çӗрпӳ хулине, Шупашкара, Мускава çӳресе, мӗн чухлӗ укçа тӑккаламан пулӗ Патӑрьелпе Туптул çыннисем!

Халӗ Патӑрьел, Туптул, Хурӑнсур пӗр колхоза пӗрлешнӗ. Колхоз председательне ӗлӗкхи çапӑçура «паттӑрӗсем» пулнӑ... ял çыннине—Туптулсене — Дмитрий Павловича Павлова суйланӑ.

Патӑрьелӗнчен çур километрта, Ункӑ шывӗ урлӑ,—Хыркасси ялӗ. Вулакансем ӑна Ф. П. Павловӑн «Ялта» пьеси тӑрӑх та пӗлеççӗ пулӗ. Елюка хӑй май çаврма ӗмӗтленекен ватӑ Çтаппан, Ванюк вӑрçӑра вилнӗ тесе, Елюк ячӗпе суя çыру çырать.

«Деревни Хыркасси. Елене Кудряшовой. Сывӑ пурӑнатӑр-и? Иван Кудряшов сире нумай пурӑнма хушса хӑварчӗ».

Сӑмах майӑн каласан, Çтаппан ятлӑ куштан пуян автор шутласа кӑларнӑ сӑнар мар, чӑнах та Хыркассинче пурӑннӑ çын. Хӑйӗн ӗçӗсем сарӑлса пынӑ май, каярахпа ӑна Хыркассинче тӑвӑр пула пуçланӑ та, вӑл вара Çӗрпӳ хулине куçса кайнӑ, унта та пуян çуртйӗр çаврӑнӑ. Вӑл вилни те нумаях пулмасть-ха, тесе каласа пачӗ пире Патӑрьел çынни, Хыркассинче учительте ӗçлекен Иван Прокопьевич.

Елюк тенӗ ят Хыркассинче темиçе те пур...

Патӑрьел (таврари çынсем ӑна Чирӗкъел, теççӗ) самаях пысӑк ял. Урамӗсем икӗ тип çырма тӑрӑх вырнаçнӑ. Чи вӑрӑм урамӗ Ункӑ шывӗ хӗррипех анать.

Пӳрт-çуртсем, карта-хура, пахча-çармасем тирпейлӗ, тӑпӑл-тӑпӑл. Пӳрт умӗнче—пӗчӗк сад пахчи: хурама, пилеш, ӑвӑс. Картишӗнче те йывӑççем, пуринчен ытла йӑмрапа хурӑн. Йӑмри вара ялта таçта та пур. Урамсем хушшинчи тип çырмасем урлӑ каçма тытӑнатӑн, тӑршшӗпех — йӑмра ашкӑрса ларать, пахчана тухатӑн — йӑмра, Ункӑ хӗррине анатӑн — унта та темиçе ытам çитми йӑмрасем кашласа лараççӗ.

Ял таврашӗнчи кашни йывӑçах çын алли лартнӑ. Сӑмахран, Ельмаковсем, Абашевсем е тата кам та пулин, калӑпӑр, Патӑрьел çӳл вӗçӗнче пурӑнаççӗ, вӗсем лартнӑ йывӑççем, çынсен куçне савӑнтарса, ялӑн анат вӗçӗнче ӳсеççӗ. Ешӗл хунавсем — йӑмрасем, хурӑнсем—урам хушшинче те нумай. Выльӑхсем хыçаланса-йӑштаса тымарӗсене хускатасран, вӗсене кашнинех йӗри-тавра пӗчӗк картасем тыта-тыта çаврӑнӑ.

Утмӑл-çитмӗл çулхи старик кӑçал лартнӑ пушӑ аври пек йӑмра тепӗр вӑтӑр-хӗрӗх çулсӑр та йывӑç пулаймасть-ха, усӑшӑн çеç тӑрӑшакан çын куçӗпе пӑхсан, çав йывӑçа лартакан старик унран пайтине те кураймасть. Анчах юрлама вӗреннӗ кайӑк, ним пайти-усси çинчен шухӑшламасӑрах юрланӑ пек, старик те йывӑççемпе тӑрмашать. Ан тив, теприн ачипӑчи те çук пулӗ, вӑл лартнӑ йывӑç сулхӑнӗнче çынсен ачисем выляса савӑнӗç...

Тепӗр чухне çеçенхир енче пурӑнакан «анатрисене» манӑн Чӑваш республикине экскурсие илсе килсе кӑтартас килет. Тен, вара вӗсем те йывӑççем лартма вӗренӗччӗç, пур пеккисене упраса усрӑччӗç. Атту, курӑр-ха эсир: Сухари-Матак ятлӑ икçӗр аллӑ киллӗ ял варринче (ку ял Куйбышев облаçӗнчи Исаклӑ районӗнче), пӗр вунпилӗк-çирӗм çул каярах та-ха, тахçан çутçанталӑк туса панӑ хитре кӑна парк пурччӗ. Паркӗ-мӗнӗ ӗнтӗ акӑ мӗскерччӗ вӑл: ӗлӗкавал ял вырӑнӗнче шурлӑхлӑ пысӑк вӑрман пулнӑ. Вунсаккӑрмӗш ӗмӗр вӗçнелле унта чӑвашсем куçса пынӑ та, вӑрманне касса, шурлӑх йӗри-тавра, кӑшӑл пек, ял туса лартнӑ. Шурлӑхӗнче хурама, хурӑн, хӑва, çирӗк нумайччӗ, кантӑр хутмалли кӳлӗсем пурччӗ. Шӑматкунсенче вара шурлӑх йӗри-таврах мунчасем пӑсланатчӗç. Халӗ унти йывӑççене кам ӳркенмест — çавӑ касать. Кӳллисем типе-типе ларнӑ. Пур çӗрте те выльӑх çӳрет. Пӗтет çутçанталӑк туса панӑ парк... Тытасчӗ те ӑна ялти комсомол организацийӗн колхоз çамрӑкӗсене канма чӑн-чӑн парк туса хурасчӗ. Нумай та кирлӗ мар ӑна тума: карта е канав чавса çавӑрмалла, кирлӗ çӗре, йывӑççем айнех, площадка тумалла, тенкелсем лартса тухмалла. Ытти колхозсенче, темиçешер пин укçа тӑккаласах, кану паркӗсем тӑваççӗ, йывӑççем лартаççӗ пулсан, мӗншӗн Сухари-Матак çыннисем пуррине пӗтереççӗ? Кун пирки комсомол организацийӗ манса кайнӑ тесен, ӑна ялти парти организацийӗ аса илтермелле. Вӑл та маннӑ пулсан, Исаклӑра КПСС райкомӗ пур. Йывӑççене, садсене пӗтерме мар, çӗнӗрен-çӗнӗ вӑрмансем ӳстермелле, мӗншӗн тесен, эпир — совет çыннисем, малашлӑхшӑн тӑрӑшакан, коммунизм тӑвакан çынсем.

Патӑрьелӗнче йӑмрасем, хурӑнсем кӑна мар, çимӗç сачӗсем те нумай. 1941 çулта пӗтнӗ улмуççисем вырӑнне çӗнӗрен чӗртнӗ. Чие, хурлӑхан, хӑмлаçырли пур. Чылай пахчара хӑмла аврисем курӑнаççӗ.

Ял çыннисем хӗрсех тырӑ выраççӗ. Ыраша тахçанах тирпейленӗ ӗнтӗ, çуртырри те нумаях юлман. Уйра комбайн ӗçлет. Ут кӳлнӗ машинӑсем те ахаль лармаççӗ кунта—лакӑм-тӗкӗмлӗ вырӑнсене комбайн кӗреймест.

Ункӑ хӗрринчи айлӑма колхоз хӑяр лартнӑ. Ӑна ӳстерме пайтах вӑй хунӑ пулас: кашни хӑярӗ—сысна çури пысӑкӑш!

Пахча çимӗç бригадирӗ Калинник Иванович, лутрарах кӑна типшӗм хура çын, хуларан канма килнӗ хӗрарӑмсене ӳкӗтлет:

— Пырӑр тархасшӑн колхоз хурлӑханне пуçтарма! Умран юличчен çитерӗп! Варени тума та туянма пултаратӑр... Хур курать хурлӑхан, сая каять, кайӑксен мӑшкӑлӗ пулать. Пуçтарма çын çитмест, хӗрсем, пулӑшӑр...

Каяççӗ вара хӗрсемпе хӗрарӑмсем. Ялта пушӑ. Пуçне шакла хыртарнӑ Дмитрий Павлович уяллаваскать. Лина Архиповна Кондратьева, колхоз агрономӗ, йывӑр çын, çапах вӑл та кунӗпех ура тӑрринче. Ним тума та çук—ӗç çийӗ!

Пӗртен-пӗр шавлӑрах вырӑн ялта—лавкка. Ун умӗнче пысӑк хура йытӑ выртать. Хуçи, ют ял çынни, çула май лавккана пирус илме кӗнӗ-мӗн те халӗ лавкаçпа калаçса тӑрать. Васкаса колхозниксем пыра-пыра кӗреççӗ те, хӑйсене кирлӗ таварсене туянсан, васкасах

каялла тухса каяççĕ. Йытă харăлтатса вĕрни илтĕнет. Лавккана ялти пуп пырса кĕрет. Вăрăм тумтирĕн аркисене сирсе, вăл прилавок çине пушă çур литр кĕленчи кăларса лартать те туллине пама ыйтать. Хура йытă Патăрьел пупне тухса кайнă чухне те вĕрсех ăсатать.

— Миçе çын кĕрсе тухмарĕ пуль, никама та вĕрместчĕ, куна темшĕн килĕштермерĕ-çке,—тет йытă хуçи.

— Вăл уншăн хăнăхман картина, — теççĕ Хыркасси хĕрарăмĕсем.

Федор Павлович Павловăн çывăх тăванĕсенчен Патăрьеленче пĕтĕмпе те икĕ çын çеç тăрса юлнă ĕнтĕ. Пĕри—Федор Павлович пиччĕшĕн Василий Павловичăн арăмĕ—Ульяна Прокопьевна, 70 çулхи карчăк, тепри—унăн чĕлхесĕр ывăлĕ Леонид, вăтăртан иртнĕ çын.

Ульяна Прокопьевна ĕç патне çӳреймест, çапах самаях тĕреклĕ-ха. Пĕчĕк пӳртне те таса тытать вăл.

1922 çулта, тĕп кил çунса кайсан, Василий Павлович çемйипех çĕн çĕре куçса кайнă пулнă. Кил пуçĕ вилсен, Ульяна Прокопьевна, ачисене ертсе, каялла тăван ялне таврăннă, тĕп кил вырăнĕнчен аяларах, урам урлă, пĕчĕк пӳрт туса лартнă.

Хăй ĕмĕрĕнче Ульяна Прокопьевна хурапа шурра пайтах тӳссе иртнĕ. Вăл вунă ывăл, виçĕ хĕр çуратнă. Тахçан шавлă та пĕр çăвартан пурăнакан çемье пуçĕнче тăнă. Халĕ унăн икĕ ывăл та икĕ хĕр кăна ĕнтĕ, килĕнче вара чĕлхесĕр ывăлĕ çеç.

— Федор Павлович çинчен каласа памĕ-ши пире Ульяна Прокопьевна?

Чĕрĕ куçлă типшĕм карчăк хăй çывăхнерех ларма сĕнет.

— Манăн хăлхисем хытăрах,—тет вăл.

Вара, манăçа юлнă ĕçсене аса илсе, пĕр хушă пуçне чиксе ларать.

— Ывăлсем пирĕн шутлă ачаччĕ. Эпĕ качча пынă вăхăталла вăл вуннă-вуниккĕсенчеччĕ ĕнтĕ.

«Шутлă ача» тени Патăрьеленче тирпейлĕ, япаласене перекетлесе тыткалакан ача, тенине пĕлтерет.

— Вăл вĕренме тăрăшатчĕ. Сак çине урисене хуçса ларатчĕ те вара пĕрмай вĕренетчĕ. Апат сахал çиетчĕ. Вĕренсе йăлăхсан, сĕрме купăсне тытса ларатчĕ. Балалайка та пурччĕ пирĕн ывăлсемĕн...

Федор Павлович çинчен калаçнине илтсен, чĕлхесĕр Леонид, сарлака питлĕ вăтам çын, тахăш енчен Федор Павловича аса илтерекенскер, стена çумĕнчи рама хыçĕнчен пĕр ывăç сăн ӳкерчĕкĕ илсе парать. Леонид çине тăрсах фотокарточкăсем çине тĕллесе кăтартнăран эпир те унталла пăхатпăр. Пĕрин çинче репетиције хатĕрленнине ӳкерсе илнĕ. Майралла тумланнă хĕрсем, 19—20 çулхи каччăсем. Тумтирсем пурин те—ĕлĕкхи, революцичченхи. Пĕр çынни чăн та Федор Павловича аса илтернĕ пек, тепри—Иван Мучи еверлĕ... Те ĕнтĕ вăл карточка 1918—19 çулсенче Хусанта ӳкернĕскер, те Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнчи? Чĕмпĕрти пулсан, унта Иван Мучи пулмалла мар пек.

Ульяна Прокопьевна та пăхать карточкăсем çине. Пăхса тăрать-тăрать те, куçĕсене шăлкаласа, сак çине кайса ларать.

— Çук, нимĕн те курмастăп. Куç çути пĕтрĕ. Пурте пĕр çĕре хутăшса каяççĕ... Çук пуль унта ывăлсемĕн сăнĕ.

Ульяна Прокопьевна асаилу «çипписене» сыпма тăрăшать:

— Ман ати, Федор Павловичăн ашшĕ Павел Степанăч, юрра ăстаччĕ...

Ларсан-ларсан:

— Тыр вырма кайнисене астăватăп. Вырсан-вырсан, ывăлсем çурлине кĕлте çине тăрăнтарса хуратчĕ те: «Ĕнтĕ алă ырата пуçларĕ, ывăнтăм», тетчĕ.

Федор Павлович пĕчĕккĕ чухне амăшне: «Анне, çыврат, ыйăх килет», тенисене, вăл мĕнле Виçикасси шкулне чупнисене аса илет Ульяна Прокопьевна. Чĕмпĕр шкулĕнчен вĕренсе тухсан, Федор Павлович ĕçлеме те çав шкулах юлнă пулнă. Акланма тăрсан, туя пиччĕшĕпе инкĕшне чĕнсе янă. Чĕмпĕре пиччĕшĕ, Василий Павлович, пĕччене кайнă, хăйпе пĕрле пĕр пичке сăра илнĕ. Федор Павлович ăна кĕпе тăхăнтарса янă.

Ф. П. Павловăн ятне эпир кашни кунах илтсе тăратпăр. Радиопа е концертсенче унăн юррисене юрлаççĕ, театрсенче пьесисене лартаççĕ, шкулсенче Павловăн произведенийĕсене вĕренеççĕ. Унăн «Ялта» тата «Судра» пьесисене лартман пĕр чăваш ялĕ те юлман. Ф. П. Павлов статьясем нумай çырнă, вырăсла кĕнекесем кăларнă...

Çапла, унăн ячĕ хисепре, кунпа Патăрьел колхозĕн агрономĕ Л. А. Кондратьева юлташ та килĕшет. Анчах Федор Павлович Павлов хăйсен ялĕнче çуралнă тесен, Лина Архиповна шалтах тĕлĕнсе каять:

— Павлов пирĕн ялсем пулнă-и?!.

Л. А. Кондратьева тĕлĕпнинчен нимĕн тĕлĕнмелли те çук, мĕншĕн тесен вăл—агрономом, çитменнине—çамрăк агрономом. Вĕреннĕ чухне агроном çĕр ĕçне вĕренет, историк—историе... Программăран ытлашшине вара пĕлме те кирлĕ мар, теççĕ пулас ун пек специалистсем, мĕншĕн тесен вĕсем пирки—учитель ыйтмасть.

Ф. П. Павлов Патăрьеленче çурални ку ялта нихçан та паллă мар. Колхозĕ «Богатырь» ятлă. Мĕншĕн—«Богатырь»? Мĕне пĕлтерекен сăмах вăл—«Богатырь»? Пăхаттирсем ыррисем те, усаллисем те пулнă, теççĕ, ку сăмахĕ хăшне пĕлтерет-ши апла?

Патăрьеленчи 7 çул вĕренмелли шкулта та Ф. П. Павлов пурнăçĕпе, унăн творчествипе паллаштаракан кĕтес те пулин çук. Нимĕн те çук! Япăх пулнă пулĕччĕши вара çавăн пек кĕтес тусан? Ан тив, Ф. П. Павлов хăйсен ялĕнче çурални çинчен ачасем кашни кунах пĕлсе тăччăр, хăйсем те, тăрăшса вĕренсе, чаплă çынсем пулма ĕмĕтленччĕр.

Чипер ĕмĕт пирĕн çĕршывра—тулатех.

Çĕрле Патăрьел колхозне электричество çутатать. Патăрьелпе Хыркасси хушшинче, Ункă шывне пĕвесе, пысăк ГЭС туса лартнă. Кăшт тăварах тата тепĕр ГЭС курăнать — Ункăçум колхозĕн ГЭС-ĕ. Ик-виçĕ çул каялла çеç ура питне витейми чĕлтĕртетсе выртнă Ункă шывĕ халь туллин, сарлакан юхать. Колхозсем пулă тытаççĕ, хур-кăвакал ĕрчетеççĕ. Улăхсенче кĕтĕвĕ-кĕтĕвĕпе выльăх çӳрет. Уйсем—сарă-сарă...

Çурхи шыв пекех тулăх пурнăç вĕрет таврара. «Ялта» пьесăри куштан Çтаппансем валли вара кунта вырăн та, сывлăш та çук.

**Хветĕр УЯР.**

Иван ПИНЯЕВ

## ÇУМĂР ХИРТЕ

Тӳпе пĕлĕтпеле хупланчĕ,
Тавра пырать тĕттĕмленсех.
Калăн: тĕнче çурмаран ванчĕ,—
Янрарĕ, кайрĕ кĕрлесе.

Ман алăра ыраш пучахĕ,
Шутлап:
— Тин шăрăх хăруш мар!

Шăп çак самант тӳпе вучаххăн
Çап-çутă хĕм сапать чăл-пар...

Пуçланчĕ çумăр. Ан тив, çутăр,
Шӳтертĕр ăш хыпнă çĕре.
Кашни пучахĕ пултăр тутă,
Пултăр тăпри сĕткенлĕрех.

...Пĕлĕт шăвать. Çăвать лĕп çумăр
Кӳршĕ районăн хирĕнче.
Вылять Сăр шывĕ йăлтăр-йăлтăр
Çич тĕслĕ пĕкĕ айĕнче.

Ачалăхри туспа пыратăп
Тахçан паллană уй-хирпе.
Пăхап тин курнăн, савăнатăп
Тăван кĕтес илемĕпе.

Ман хул умнех çăра ырашĕ
Пыра-пыра çапать хумне.
Çак симĕс тинĕсĕн ăста-ши
Хĕрри е вĕçĕ—пĕл унне!..

Çӳлте сенкер тӳпе, ун айĕн
Яр усă ирĕклĕх, инçет...
— Тахçантанпах, земляк, кунта эс
Пулманччĕ,—тет тусăм, тĕксе.

— Ĕçе пула, паллах, яла та
Эс мантăн пуль, инçескере...
Пĕлмест: эп хатĕр чуптума та
Хама ӳстернĕ çак çĕре.

# ИРТНĔ ПУРНĂÇРАН ЮЛНĂ СИЕНЛĔ ЙĂЛА

П. ОСИПОВ,
*медицина наукисен кандидачĕ*

Пирĕн çĕршыври паллă писатель Федор Гладков эрех тавраш ĕçни пысăк сиен кӳни çинчен, социализмла обществăри йĕркесем çак сиенпе килĕшме пултарайманни çинчен темиçе хут та çырчĕ. Пирĕн обществăра совет çынни ырă та таса йăлишĕн, унăн сывлăхĕшĕн куллен тăрăшаççĕ.

Эрех тавраш ĕçсе ӳсĕрĕлес йăла иртнĕ пурнăçран юлнă, вăл капитализмла обществăра ĕççыннисен ăс-тăнне минретме, вĕсене чарусăр эксплуатацилеме кирлĕ пулнă.

Совет çĕршывĕнче ĕççыннисен пурнăç ырлăхĕсем пĕрмаях ӳссе пыраççĕ, кунта малга пыракан, социализмла культура аталанать, çавăнпа та пирĕн патра алкоголизм пек чир-чĕрсем сарăлма сăлтав çук, ĕçсе ӳсĕрĕлсе прогулсем, ĕçре брак туни пулмалла мар. Анчах пирĕн обществăра та хăшпĕр çынсем хушшинче çак сиенлĕ йăла юлнă-ха, уйрăмах вăл культурăпа çутĕçне япăхтарса янă çĕрте чылай сарăлнă.

Эрех сывлăха çирĕплетет, апат антарать, чир-чĕртен сыхлать, вăй хушать тесе, хăшпĕрисем ĕçке тӳрре кăларма пăхаççĕ. Тĕрĕс-и вăл? Çук. Алкоголь вăй хушмасть, пачах урăхла, вăл ăс-тăнпа вăй-хал ĕçĕн тухăçлăхне нумай чакарать.

Алкоголь вăл чĕрĕ организмăн пур клеткисене те сиен тăвакан наркăмăш. Вăл уйрăмах нерв системине пысăк сиен кӳрет. Ученăйсем сăнаса пĕлнĕ тăрăх, 30—50 грамм шурă эрех е пĕр стакан хĕрлĕ эрех ĕçнипех пуç мимин, уйрăмах унăн чи паха пайĕн — пысăк çурчăмăрсен ĕçĕ пăсăлать: тимлĕх вăйсăрланать, шухăшлас, критиклес пултарулăх чакать. Алкоголе пула çын ĕçе шухăшласа туми пулать.

Пуç миминчи чаракан процессем вăйсăрланнине пула кăмăл çĕкленет: вăхăтлăха çын хуйха-суйха, пурнăçри ĕçĕсене манса каять, савăннă пек пулать.

Çав вăхăтрах алкоголе пула ĕçлес пултарулăх чакать: 80 грамм шурă эрех ĕçсен, çыннăн мышца вăйĕ 30 процент чакать, ĕçнĕ çынна хăйне вара «тусене тапратас» пек вăй кĕнĕн туйăнать. Алкоголь уйрăмах ăс-тăн ĕçне пысăк сиен тăвать.

Алкоголе пула çын таврари пурнăçа, хăйĕн ĕçне тĕрĕс хаклами пулать, хăй шухăшĕсем çине вăл критикăлла пăхма пăрахать, хăйĕн вăйĕпе пултарулăхне ытла пысăка хуракан пулать. Вăл хăй сахал ăнланакан япаласем çинчен калаçма тытăнать. Çын канăçне çухатать, лара-тăра пĕлмест. Ахаль чухне питĕ вăтанакан çынсем те ĕçсен темĕн çинчен те палкама тытăнаççĕ. Хăйсене тыткалани, хăйсем шӳт туни ӳсĕрсене аван пек туйăнать, вĕсем ташлаççĕ, кăшкăрашаççĕ, ятлаçаççĕ, юрлаççĕ. Ӳсĕр çынсем хăйсене хăйсем тĕрĕслеме йăлтах пăрахаççĕ, паллама çук улшăнса каяççĕ. Ĕçсе ӳсĕрĕлнине пула грузчиксем, шоферсем, физкультурниксем, ялхуçалăх машинипе ĕçлекенсем хушшинче час-часах инкек пулать.

Вунă çула çитмен ачасем 15 грамм алкогольпех (40—50 грамм шурă эрехпе) вилсе кайма пултараççĕ. Халиччен эрех тавраш ĕçмен çыншăн 200 грамм алкоголь, урăхла каласан, пĕр бутылка шурă эрех е икĕ бутылка хĕрлĕ эрех ĕçни те питĕ хăрушă. Ун пек чухне çынна çийĕнчех врач пулăшни кирлĕ.

Алкогольпе пĕр хут аптраса ӳкни çийĕнчех медицина пулăшăвĕ памалли чир пулсан, яланах эрех тавраш ĕçес йăла—алкоголизм—вара пурнăçри инкек пулса тăрать. Организма уйрăмах самогонка пысăк сиен тăвать, мĕншĕн тесен унта сивушнăй çу, денатурат, йывăç спирчĕ пур.

Паллă ĕнтĕ, алкоголизм капитализмла çĕршывсенче нумай сарăлнă. Асаплă ĕç, çав тери начар условисенче, нимĕнле савăнăç, çутă кун курмасăр пурăнни, ыранхи куншăн ялан хăраса тăни, шанчăка çухатни рабочие эрех ĕçме вĕрентет, унăн çавăн пек тертлĕ пурнăç çинчен вăхăтлăха та пулин манас килет.

Тĕн йăлисем те алкоголизма сарма нумай пулăшнă, мĕншĕн тесен тĕн уявĕсем нихçан та ĕçкĕ-çикĕсĕр иртмен. Сăмахран, авалхи Грецире тырпулпа эрех турри Дионис ячĕпе чаплă та шавлă уявсем ирттернĕ, кунта ташланă, юрланă, эрех тавраш ĕçсе ӳсĕрĕлнĕ. Çавăн пек уявсем пур халăхсемпе ăрусен те пулнă. Патша Российинче ĕçкĕ-çикĕллĕ праçниксем уйрăмах нумай сарăлнă: пурнăçра нихçан пулман Христос çуралнă е чĕрĕлнĕ ятпа, чиркӳ праçникĕсенче, венчет тусан е ачана шыва кĕртсен яланах ĕçнĕ.

Поэзипе литература, чи малтан пуç пулса тăракан классен интересĕсене хӳтĕлесе, алкоголь ырлăхĕсем çинчен мухтав юрри юрланă. Эксплуатаци тӳссе пурăнакан ĕççыннисем хушшинче хупах юррипе çамрăксен ăс-тăнне минретнĕ. Медицина та шурă эрех, коньяк, шампански тата ытти тĕрлĕ эрехсем усăллă тесе пропагандăланă, эрехпе кирек мĕнле чиртен те сывалма пулать, тенĕ. Çавна пула патша Российинче эрех тавраш ĕçекенсен йышĕ ӳссе кайнă. Вĕсем хушшинче ăнсăртран пĕрре ĕçекенсем кăна мар, ялан ĕçекенсем те нумай пулнă. Хаяр пусмăра хирĕç тухма хăяйман интеллигенци, алкоголь сиенĕ çинчен пĕлнĕ пулин те, ăна хирĕç кĕрешмен, час-часах вăл хăй те хуйха-суйха сирме хупаха утнă.

Çакăн пек пурнăçра, пурте ĕçнĕ чухне, алкоголь пурăна-киле нумай çынсене хăй тыткăнне илет. Çынсем ĕçке ерсе каяççĕ. Çак чирпе чирленĕ çынсем вара алкогольсĕр пурăнайми пулаççĕ, алкоголь пулмасан, вĕсене çав тери йывăр: ĕçлес пултарулăхĕ чакать, вĕсем сывăрайми пулаççĕ, халтан каяççĕ, вĕсен аллисем чĕтреççĕ, çавăн пирки ĕçре тĕрлĕ инкексем, прогулсем пулаççĕ. Ĕçсенех («мухмăр чĕртсен»), çавăн пек ялан ĕçекен çынсем пĕр вăхăта йĕркене кĕнĕ пек пулаççĕ. Çавна пула алкоголик çине-çине ĕçме тытăнать, юлашкинчен вара ĕçлеме пачах юрăхсăр, чирлĕ çын пулса юлать. Ăна вара пурте хăйне курайман пек, ăна «пĕтнĕ çын» тесе шутланă пек туйăнать. Алкоголик майĕпен-майĕпенех ĕçпе, çемьепе, пурнăçпа интересленми пулать. Вăл пĕр эрех çинчен кăна шутлать. Çын дипсоман пулса каять, урăхла каласан, вĕçĕмсĕр ĕçме тытăнать, çапла вăл куçа тĕрлĕ усалсем, йĕкехӳресем, шапасем, çĕленсем курăнакан пуличченех ĕçсе, ухмаха тухать.

Хăшпĕр çынсем ӳсĕрпе хытă аташаççĕ, вĕсене тытамак тытнă пек тытса пăрахать. Çакăнпа пĕрлех ĕçкĕ шалти органсене сиен тăвать. Чĕре пăсăлать. Алкоголикăн имшерленсе çитнĕ чĕри хăйĕн ĕçне тума пултараймасть. Сывлăш пӳлĕнет, чĕре хăвăрт тапакан пулать, пĕтĕм ӳт-пӳ вăйсăрланать, çын шыçăнса каять, пит-куç кăвакарать, юн тымарĕсенче юн таппи чакать. Час-часах вар-хырăм пăсăлать. Алкоголь уйрăмах пĕвере пысăк сиен тăвать, ялан алкоголь наркăмăшĕ сиен тунипе пĕвер пĕчĕкленсе каять, ĕçлейми пулать; çакăн хыççăн вара çын вилет.

Эрех ĕçсе ӳсĕрĕлсе çӳрекенсен шăпи çавăн пек ĕнтĕ. Эрех ĕçме пăрахса, йĕркеллĕ çын пулас тесен, çав ирсĕр йăларан хăтăлмалла, врачсем патĕнче сывалмалла. Унсăрăн алкоголик, никама кирлĕ мар çын пулса, ирĕксĕрех пĕтме пултарать.

Пирĕн обществăлла организацисен алкоголизма хирĕç пропаганда ĕçне анлăн туса пымалла. Эрех тавраш ĕçсе харпăр хăй сывлăхне, çемьене, государствăна çав тери пысăк сиен туни çинчен çынсене пĕлсе тата куллен-кун ăнлантарса парас пулать. Культурăпа çутĕç учрежденийĕсен, культура работникĕсен çак усал йăлана хирĕç кĕрешме пур майсемпе те усă курмалла. Лекцисем иттерни, ятарласа хатĕрленĕ кинофильмсем кăтартни, наука вĕрентнине ăнлантарса паракан кĕнекесем, плакатсем пичетлесе кăларни тата ытти майсем пирĕн пурнăçра алкоголизма пĕтерме пулăшмалла.

Совет çыннисене культурăллă канма пур условисем те туса панă, кунта ĕçсе ӳсĕрĕлсе çӳрени пулмалла мар. Уйрăм алкоголиксем, хăйсене киревсĕр тыткаласа, пирĕн сывă совет çемйине, пирĕн илемлĕ пурнăça ан варалаччăр.

Алкоголизма — иртнĕ пурнăçран юлнă киревсĕр йăлана — хирĕç çине тăрса кĕрешмелле.

# КУÇАРАС ĔÇРИ ХĂШПĔР ÇИТМЕНЛĔХСЕМ ПИРКИ

Вырăс е урăх халăх чĕлхипе çырнă кĕнекесене чăвашла куçарса кăларас ĕç, паллах, пархатарлă. Ун пирки иккĕленсе калаçма сăлтав çук. Пирĕн тăлмачсем пысăк ĕç тăваççĕ: вĕсем чăваш халăхне совет литератури чи паха тĕслĕхĕсемпе çеç мар, вырăссен классикла литературин произведенийĕсемпе те, тĕнче литератури классикĕсем çырнă кĕнекесемпе те паллаштараççĕ. Аслă Октябрь тивлетне пула кĕнеке куçарас ĕç çулсерен анлăланса пырать. Пирĕн халăх халь марксизм-ленинизм классикĕсен тĕнчипе паллă произведенийĕсене, наукăпа техника тата искусствăн тĕрлĕ облаçĕсемпе паллаштаракан кĕнекесене тăван чĕлхепе вулать. Тăван чĕлхепе вулани мĕн вуланине лайăхрах ăнланса илме пулăшать, çавна пула вара халăх культура тĕлĕшĕнчен çĕкленсе, ӳссе пырать. Апла пулсан, çав пысăк ĕçе лайăх, халăх кăмăлне килмелле, унăн чун хавалне çĕклентермелле туса пымалла.

Пуриншĕн те паллă, кĕнеке куçарас ĕçре çитĕнӳсем сахал мар пирĕн. Темиçе çул каярах вырăсларан чăвашла куçарнă кĕнекесем сайра хутра кăна тухкаланă пулсан, халь ĕнтĕ вĕсем çулталăкра çĕршерĕн пичетленсе тухма тытăнчĕç. Тăлмачсен ăсталăхĕ те ӳснĕçем ӳссех пырать, вĕсем куçарса кăларнă кĕнекесенчен чылайăшне халăх юратса вулать.

Анчах ку статьяра кĕнеке куçарас ĕçри çитĕнӳсем çинче чарăнса тăрасшăн мар эпир, ку ĕçри йăнăшсемпе çитменлĕхсем çинчен ытларах калаçасшăн, мĕншĕн тесен çитĕнӳ вăл çĕнтерсе илнĕ япала, йăнăшсемпе çитменлĕхсене вара—çĕнтермелле-ха. Сăмах хускатиччен çакна та асăрхаттарса хăварас килет: ытти тĕрлĕ литературăна куçарнине сăнасах кайман эпир, те хамăр ĕçпе çывăхрах пулнăран, илемлĕ литература произведенийĕсене мĕнле куçарнине ытларах сăнанă, çавăнпа ĕнтĕ ку статьяра илемлĕ литература произведенийĕсене куçарас ĕç пирки ытларах калаçма тӳр килет. Ку ĕçре пирĕн пысăк çитменлĕхсем пур-ха. Çав çитменлĕхсем юлашки вăхăтра ытларах палăрма пуçларĕç. Мĕнрен килет-ши вăл? Куçарас ĕçе хăйсен ĕçне пĕлсех кайман тăлмачсем йышлăн хутшăннăран-ши е тата урăх сăлтавсем те пур? Ăсталăх, паллă ĕнтĕ, кирек хăш ĕçре те кирлĕ, унсăр ĕç ăнасса шанма хĕнрех. Хăй ĕçне чун-чĕререн юратса тăвакан çыншăн ку çĕнĕ япала мар, мĕншĕн тесен вăл ĕçре ăсталăх кирлине эпир каламасăрах лайăх чухлать. Çавăнпа куллен ĕçлет, вĕренет, тимлесе тăрăшать, хăйĕн ĕçне хăнăхнăçем хăнăхса пырать, ăсталăхне те вĕçĕмсĕр ӳстерет. Ĕç çине çиелтен пăхаканни вара—пачах урăхла, ним чухлĕ те хыпмасть, мĕнле пулса тухать унăн ĕçĕ: лайăх-и, начар-и? Пурпĕрех уншăн, чун-чĕрине ыраттарса асапланмасть вăл, пăшăрханмасть, савăнмасть, çавăнпах-и тен, хăшпĕр чух, хăйĕн ĕçĕ никама юрăхсăр пулса тухнине те чухласа илеймест. Кĕнеке куçаракансем хушшинче те çавăн пекрех пирĕн: икĕ тĕрлĕ çынсем пур. Пĕрисемшĕн пулсан, куçару ĕçĕ—чăн-чăн творчество, чун-чĕререн юратнă ĕç, теприсемшĕн вара—укçа илмелли çăмăл меслет кăна.

Ку сăмах тĕрĕс иккенне ĕнентерме йывăрах мар. Сăмахран, Чăваш государство издательствинче ĕçлекенсем хушшинче кĕнеке куçарса курман çын çукрах тесен те юрать. Ĕç тухать-и, тухмасть-и, ăна-кăна уяса тăмаççĕ вĕсем, кĕнеке куçарса пултăр. Унта темиçе çул хушши ĕçлекен опытлă редакторсем пур, неушлĕ вара вĕсем те кĕнеке куçарма пултараймаççĕ?—тейĕ вулакан. Тĕрĕс шухăш. Чăн та, издательство редакторĕсем хушшинче илемлĕ литература произведенийĕсене куçарас тĕлĕшпе нумай çул хушши ĕçлесе хăйсен пултарулăхне палăртнă тăлмачсем сахал мар. Анчах кунта ун пек редакторсем пирки мар, урăххисем пирки сăмах пырать. Издательствăра тĕрлĕ ĕç пур, илемлĕ литературăран пачах аякра тăракан çынсем те сахал мар ĕçлеççĕ унта. Ун пеккисем ытларах тесен те йăнăш пулмĕ. Анчах çав аякра тăраканнисем, илемлĕ литературăпа нихăш енчен те çыхăнманнисем, пурте тенĕ пекех, илемлĕ литература произведенийĕсене куçарас ĕçе хутшăнма хăюлăх çитерниччен чăнах та тĕлĕнмелле вара. Ку çеç те мар-ха, издательствăна куллен нумай çын пырса çӳрет: «Мĕнле-ши, чăвашла куçарма пĕр-пĕр кĕнеке пекки тупса параймăр-ши?»—ыйтать вăл çын. «Ку таринччен ăçта ĕçленĕ эсир, ăçта вĕреннĕ, халиччен пĕр кĕнеке те пулин куçарса курнă-и?»—ыйтать унран издательство редакторĕ. «Куçарасси куçарса курман-ха та, куçарса пăхас тетĕп, вăхăт пур халь ман, çавçав учрежденире счетоводра ĕçлеттĕм те, тухса каймалла пулчĕ», тет ыйтаканĕ. Пыран-çӳренсем çакăн пек калаçнине пирĕн издательствăра час-час илтме пулать. Вĕсем хушшинче «телейлĕрехисем» те тĕл пулкалаççĕ, çемçерех кăмăллă редактор вĕсене хăшпĕр чух чăнах та ĕç тупса парать, куçарма хайхи «пĕр-пĕр кĕнеке» тыттарса ярать. Вĕсенчен нумайăшĕ «ӳркенсе» тăмаççĕ, мĕнле кĕнеке куçарма паратăн, çавна илеççĕ. Пĕрех мар-им, паян вăл выльăх-чĕрлĕх çинчен е чăх-чĕпе мĕнле пăхса усрасси çинчен калакан кĕнеке куçарать, тепĕр эрнерен вар-хырăм чирĕ çинчен, унтан вара çав «ăста» тăлмач Лев Толстой, Пушкин е Гюго произведенийĕсене куçарма тытăнать.

Куçару ĕçне çĕнĕрен хутшăнакансем пурте çавăн пек тесшĕн мар эпир. Вĕсем хушшинче куçару ĕçĕпе чăннипех интересленекенсем те сахал мар. Вĕсен йышĕ ӳссех пырать. Ку аван. Анчах илемлĕ литература произведенийĕсене куçарас ĕçре хăйсен ăсталăхне ӳстерсех пыракан тăлмачсен йышĕ халлĕхе тӳсме çук хуллен ӳссе пыни пăшăрхантарать вара. Сăлтавĕ паллă. Тăлмачсен йышне çĕнĕрен хутшăнса пыраканнисенчен нумайăшĕ кĕнеке куçарас ĕç мĕн таран ответлă иккенне, вăл ĕç халăх, государство ĕçĕ иккенне халиччен те-ха çителĕклĕ ăнланса илеймеççĕ. Куçару ĕçĕ, вĕсемшĕн пулсан, питĕ ансат, вăл ĕçе туса пыма нумай вĕренни те, пĕлни те кирлех мар имĕш, кăштах та пулин чăвашла-вырăсла перкелешме пĕлнипех çителĕклĕ. Çак йăнăш шухăш—ерекен усал чирпе пĕрех, вăл нумайăшĕн пуçне минтретет, хăш чух тата чипер ĕçлеме тытăннă çыннах тӳр çул çинчен пăрса ярать, ӳркенчĕке кăларать. Сиенлĕ чир. Куçару ĕçне кăшт та пулин çӳлĕрех пусăма çĕклес тесен, пирĕн ку чирпе пĕр тăхтамасăрах кĕрешме тытăнмалла. Кам ĕçĕ-ха ку? Пуриншĕн те паллă, ку ĕçе никам та мар, литература критики туса пыма тивĕç. Литература критики хăйĕн ĕçне вăхăтра тата кирлĕ пек туса пынă пулсан, ку чир пулас та çукчĕ-и тен, пулсан та, сайра хутра çеç тĕл пулкалатчĕ-и. Халлĕхе эпир пирĕн литература критики пурнăçпа тан ĕлкĕрсе пырать теме пултараймастпăр-ха. Кĕнеке çыраканĕсем çыраççĕ, куçараканнисем куçараççĕ, издательство вара çав кĕнекесене пĕрин хыççăн теприне пичетлесе кăларать, çав кĕнекесемех вулакансем хушшине, халăх хушшине сарăлаççĕ. Мĕнле кăмăлпа йышăнать-ха вĕсене халăх? Мĕнле-ши, юратса, хавхаланса вулать-ши? Пулма пултарать, тепĕр чух, ăнланма йывăр пирки, вуласа тухмасăрах аяккалла сирсе хурать-и тен? Кĕнеке çыраканăн е куçараканăн ĕçне те вăхăтра хак памалла: ăнăçлă пулса тухнă-и унăн ĕçĕ, ăнăçсăр-и? Литература хуçалăхĕнчи пекех, куçарас ĕçĕн хуçалăхĕнче те тивĕçлĕ йĕрке пулма кирлĕ. Чыслă ĕç ку. Анчах пирĕн литература критикин шăмшакĕ йывăртарах, çак чыслă ĕçе вăхăтра туса пырасшăн питех хыпмасть вăл, чи кирлĕ чух йăпăр-япăр та вăрт-варт хускалас йăли çукрах унăн, çавăнпа ĕнтĕ пичетленсе тухнă кĕнекесенчен нумайăшĕ критика ытамне кĕреймесĕр юлаççĕ. Урăхларах каласан, литература критики нумай çитменлĕхсене курмасăр иртерсе ярать, куçарса кăларнă пĕр-пĕр кĕнеке пирки хăйĕн çивчĕ сăмахне вăхăтра калаймасть. Кун пек чух, хăвăрах пĕлетĕр, ăста тăлмачсене хавхалантараканни, вăй парса тăраканни çук, çăмăл ĕç шыракан «тăлмачсене» вара алхасма ирĕк, никам та тивмест, мĕн тăвас килет, çавна ту! Çапла çав, пахчаçă ӳркенчĕк чух ун пахчине çумкурăкĕ тапса тухать, тапса тухать те вара мĕнпур усăллă курăксене хупласа илет. Литература критики хевтесĕр чухне те çавăн пекех, куçару ĕçĕнчи çитменлĕхсемпе йăнăшсем ытларах хунама пуçлаççĕ.

Пичетлесе кăларнă кĕнекешĕн редактор ответ тытать, тейĕç вулакансем. Тĕрĕс шухăш. Алçырăвне автор е урăх чĕлхерен куçараканни чи малтан издательство редакторĕ патне илсе пырать. Редактора издательство пысăк право панă. Алçырăвне вăл йышăнма та, авторне каялла тавăрса пама та пултарать. Алçырăвĕнче уйрăм çитменлĕхсем пулсан, редактор автора кирлĕ канашсем, сĕнӳсем парать, палăртнă çитменлĕхсене çийĕнчех, кĕнеке пичетленсе тухиччен пĕтерме пулăшать. Сăмах та каламалли çук, пичетленсе тухнă кĕнеке пахалăхĕ, пĕтĕмĕшпех мар пулсан та, редактортан килет. Анчах пирĕн редакторсем нумай чухне хăйсене панă правăпа тивĕçлипе усă курмаççĕ, ответлăхне те туйсах каймаççĕ. Акă издательство редакторĕ умне пысăк роман алçырăвĕ пырса выртать. Вырăсларан куçарнă роман алçырăвĕ ку. Пахалăх тĕлĕшĕнчен аптрасах каймасть пулмалла вăл, пĕтĕмĕшпех хурласа тăкма çук, апла пулин те тĕрĕс куçарайман вырăнсем, çитменлĕхсем сахалах мар. Мĕн тумалла-ха редакторăн? Кĕнеке куçараканĕпе пĕрле палăртнă йăнăшсемпе çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе ĕçлеме тытăнмалла. Пысăк чăрмав ĕнтĕ ку. Ĕç питĕ вăраха каять, çитменнине тата план тулмасть. «Урăхларах тусан май килмĕ-ши? Ку таранчен пичетленсе тухнă кĕнекесене критиксем тивсех кайманччĕ-çке, кăна та асăрхамасăрах иртерсе ярĕç, тен? Атя, кайтарах, типографине набора парар!»—шухăшлать редактор. Çапла, кĕнеке набора каять, пичетленсе тухать. Кĕнекери йăнăшсем те, çитменлĕхсем те çаплипех юлаççĕ. Кĕнеке редакторĕ çавăн пек ĕçленине кăтартакан тĕслĕхсем сахал мар пирĕн. Чылай тупма пулать вĕсене. Ку статьяра, хамăр калани чăн та тĕрĕс иккенне ĕнентерме ĕнтĕ, вĕсенчен хăшпĕрисене илсе кăтартсан та ытлашши пулмĕ тетпĕр. Сăмахран, вырăсла кĕнекере: «В нашем крае, мне кажется, слишком уж, увлекаются таежной экзотикой, этим диковинным сожительством южной маньчжурской и северной охотской флоры. Почитают это своей местной достопримечательностью и молятся на нее» тесе çырнă. Чăвашла вара ăна çапла куçарнă: «Ман шутпа, пирĕн тавраşра ытла та ĕнтĕ тайгара кăнтăр енчи ӳсентăрансем ӳснипе тата вĕсен хушшинчех çурçĕр тискер кайăкĕсем пурăннипе савăнаççĕ. Ăна кунта хăйсен хаклă тивĕçлĕхĕ вырăнне хурса хисеплеççĕ, пуççапаççĕ». Редакторпа куçаракан мĕнле шухăшлаççĕтĕр, анчах вулакан улталаймăн. Вăл флора ӳсентăран тĕнчи иккенне, фауна чĕрчун тĕнчи иккенне лайăх пĕлсе тăрать. Вырăсла текстра флора çинчен, ӳсентăран тĕнчи çинчен халап пырать, фауна çинчен, çурçĕр тискер кайăкĕсем çинчен сăмах та çук. Ăçтан кĕрсе кайнă-ши çурçĕр тискер кайăкĕсем? Ăна ĕнтĕ эпир пĕлейрес çук, куçараканпа редактор çеç пĕлеççĕ-и, тен. «Молятся на нее» тенине те, пирĕн шухăшпа, «пуççапаççĕ» тесе мар, «уншăн пĕтсех каяççĕ» тесе куçарсан аванрах пулма кирлĕ. Ку кăна мар-ха, вырăсла текстра эпир çын калаçнине туятпăр, чăвашла куçараканни вара калаçу чĕлхине пачах çухатнă. Алçырăвне пичете париччен тӳрлетме çăмăл вырăнсенех тӳрлетмен тата. «Нефтеперегонный завод» нефть юхтаракан завод пулса тăнă. Нефть юхтаракан завод мар вăл, нефтьрен бензин, краççын т. ыт. туса кăларакан завод. «Автосборочный завод»-ран автомобиль пухакан завод туса хунă. Ку заводра хатĕр детальсене пухса пĕрлештернипе автомобиль туса кăлараççĕ пулас. «Серый зверек» тенине «шурă мулкач» тенĕ, «сăрă» вырăнне пулас ку. «Глухомань»

сӑмаха «тӗксӗм вӑрман» тесе куҫарнӑ, «сӗм вӑрман» пулма кирлӗ пек. Вырӑсларан чӑвашла куҫарнӑ романра труках ӑнланма йывӑр предложенисем те сахал мар тӗл пулкалаҫҫӗ. Сӑмахран, куҫаракан ҫапла ҫырать: «Тӗтре карса тӑракан тӳперен хӗвел тухма пуҫларӗ. Вӑл ҫуталнӑҫем ҫуталса пычӗ, унтан, пӗр самантрах пӗлӗт хушшинчен тухса, таврана ҫутатса ячӗ». Пӗр шухӑшламасӑр вуласан, тӗрӗс марри нимех те ҫук пек кунта. Анчах лайӑххах шухӑшласа пӑхатӑн та тӗлӗнсех каятӑн. Мӗнле-ха апла? Тӳпене чӑнах та тӗтре карса илнӗ пулсан, паллах, пӗлӗт таврашӗ курӑнма кирлӗ мар. Ирӗксӗрех ыйту тухса тӑрать: мӗн карса илнӗ-ши тӳпене? Тӗтре-ши, пӗлӗт-ши? Иккӗшӗнчен пӗри пулма кирлӗ ӗнтӗ. Куҫараканпа редакторӑн апла мар. Хӗвел тӗтре карса тӑракан тӳперен тухать, унтан вара, темле майпа-ҫке, пӗр самантрах пӗлӗт хушшинчен тухать. Куҫараканпа редактор айӑплӑ мар-и тен? Вырӑсла ҫыракан автор пӑтраштарман-ши? Ҫук иккен. Вырӑсла «тӗтре» ҫинчен сӑмах та ҫук. «Солнце начало пробиваться сквозь муть небосвода. Оно проступало все сильнее, и в какой-то неугаданный миг лучи его хлынули в образовавшийся просвет». Хӑвӑрах куратӑр, автор лайӑх, ӑнланмалла ҫырнӑ. Кӗнеке куҫаракане, темшӗн-ҫке, «тӗтре» сӑмаха питӗ юратать, ҫавӑнпа-и тен, унпа час-часах кирлӗ мар ҫӗртех, вырӑнсӑр усӑ курать. Вырӑсла текстра «Бескрайний купол неба затянут ровной белесой пеленой» тенӗ. Чӑвашла ӑна ҫапла куҫарнӑ: «Тӳпене лаппӑшӗпех тӗтре карса илнӗ». Тӗрӗс мар. Куҫарнӑ кӗнекере автор шухӑшне урӑхлатса каланӑ вырӑнсем те пур. Автор хӑйӗн кӗнекинче: «Ты прав: много ли хороших книг об этих людях?» тет. Куҫаракане ҫак предложение ҫапла пӑсса хурать: «Эсӗ тӗрӗс каларӑн: ҫавӑн пек ҫынсем ҫинчен ҫырнӑ кӗнекесем нумай-ха, терӗн». Вырӑсла текстра ун пек кӗнекесем питӗ сахалли ҫинчен сӑмах пырать, чӑвашла вара пачах урӑхла пулса тухнӑ. «Анчах пирӗн нефтепровод литературӑра тӗксӗм тайган мӗнпур илемлӗхӗнчен те тивӗҫлӗрех пулнине ӗненсе тӑратӑп». Мӗнлерех ӑнланмалла-ши ку сӑмахсене? Чӑн та, ӑнланма йывӑртарах. Тем тени пулать ӗнтӗ ку? Пӗр шухӑшласан, пирӗн писательсем литературӑра нефтепровода тивӗҫлипе сӑнласа кӑтартни ҫинчен каланӑ теме пулать, тӗксӗм тайган мӗнпур илемне ҫав нефтепровода кӑтартнӑ пек тивӗҫлипе кӑтартайманни ҫинчен сӑмах пырать тейӗн. Пытарса тӑмӑпӑр, ку предложенире сӑмах мӗн пирки пынине чӑвашла вуласа ӑнланаймарӑмӑр эпир, вырӑсла мӗн ҫырнине вуласа пӑхма тӳр килчӗ. Вырӑсла ҫапла ҫырнӑ иккен: «Но убежден, что наш нефтепровод—куда более достойный объект для литературы, чем все прелести первобытной тайги». Чӑвашла ӑна, пирӗн шухӑшпа, ҫапларах куҫармалла пулнӑ: «Тискер тайган мӗнпур илемлӗхӗпе танлаштарсан, пирӗн нефтепровод литературӑра сӑнласа кӑтартма тивӗҫлӗрех иккенне ӗненсе тӑратӑп». Кӑшт урӑхларах та калама май пур: «Пирӗн нефтепровод, тискер тайган мӗнпур илемлӗхӗпе танлаштарсан, литературӑра сӑнласа кӑтартма тивӗҫлӗрех иккенне ӗненсе тӑратӑп». Асӑннӑ тӗслӗхсене эпир Василий Ажаев ҫырнӑ «Мускавран инҫетре» ятлӑ романран илсе кӑтартрӑмӑр (чӑвашла куҫаракане П. Золотов, редакторӗ М. Рубцов). Ун пек тӗслӗхсене ку романран нумай илсе кӑтартма пулать. Тӗрӗс мар куҫарнӑ вырӑнсемпе уйрӑм ҫитменлӗхсем ытлашшипех унта. Анчах эпир вӗсем ҫинче чарӑнса тӑмӑпӑр, мӗншӗн тесен кунта редактор ӗҫӗ пирки сӑмах пырать. Редактор вӑл, урӑхларах каласан,—кӗнекен чи малтанхи критикӗ, автор е куҫаракан алҫырӑвне никамран малтан вӑл пӑхса тухать, хак парать: алҫырӑвӗ пичете пама юрӑхлӑ-и, юрӑхлӑ мар-и, тӳрлетмелле-и ӑна е пачах пӑрахӑҫламалла—йӑлтах редактортан килет. Редактор хӑйӗн ӗҫне тивӗҫлипе туса пыманни кирек хӑҫан та сиен кӳрет, ун пек редактор сӑтӑрҫӑпа пӗрех, мӗншӗн тесен вӑл халӑха япӑх, вулама юрӑхсӑр кӗнеке кӑларса парать. Редакторӑн, пирӗн шухӑшпа, алҫырӑвӗ пирки авторпа е куҫараканпа каласнӑ чух ҫемҫешке кӑмӑллӑ пулма кирлӗ мар, вӗсенчен мӗн ыйтма тивӗҫлине ҫине тӑрса ыйтмалла, мӗншӗн тесен унран хӑйӗнчен нумай ыйтаҫҫӗ. Ҫӳлте асӑннӑ тӗслӗхсене эпир ахаль мар илсе кӑтартрӑмӑр, ҫак кӗнеке редакторӗ, пирӗн шухӑшпа, ҫемҫешке кӑмӑллисен шутне кӗрет, вӑл хӑй государствӑпа халӑх умӗнче мӗн таран ответлине чун-чӗререн туйса ӗҫленӗ пулсан, пӗр иккӗленмесӗрех калама пулать, «Мускавран инҫетре» кӗнеке халь кӑларнӑ пек мар, нумай лайӑххах пулса тухатчӗ. Чӑваш государство издательствинче редакторсем йышлӑ, пичетленсе тухакан кӗнекесен пахалӑхне ӳстерсех пырас тӗлӗшпе вӗсем пысӑк ӗҫ тума пултараҫҫӗ. Мӗн ҫитмест? Кулленхи ӗҫре ним ҫинчен те мар, чи малтан халӑх ҫинчен, издательство пичетлесе кӑларнӑ кӗнекесене вулакан халӑх ҫинчен шухӑшлани ҫитсех каймасть. Ҫитменнине ҫитерме пулать, чӗререн тӑрӑшса ӗҫлес кӑмӑл пултӑр кӑна.

Кӗнеке куҫарса кӑларас ӗҫре пирӗн тата тепӗр пысӑк ҫитменлӗх пур. Халиччен те калаҫса татӑлаймастпӑр: мӗнле куҫармалла? Пӗрисем каланӑ тӑрӑх, вырӑсла оригиналти предложенисене ҫаплипех, вӗсен структурине пӑсмасӑр, кашни сӑмахне куҫармалла, унсӑрӑн тӗрӗс куҫарма май ҫук, теҫҫӗ. Ун пек шухӑшлакансемпе ниепле те килӗшме май ҫукки курӑнсах тӑрать. Вырӑсла предложенисемпе чӑвашла предложенисен структури пӗр пек мар иккенӗ пуриншӗн те паллӑ. Апла пулин те, пирӗн тӑлмачсем хушшинче халь каланӑ пек (вырӑсла эпир ӑна буквально тетпӗр) куҫараканнисем ытларах. Кӗнеке куҫарас ӗҫре буквализм пысӑк сиен кӳни ҫинчен пирӗн тӑлмачсемпе литераторсем хушшинче тахҫантанпах сӑмах ҫӳрет. Вӑл сӑмаха хускатнӑран вара виҫ-тӑватӑ ҫул та иртрӗ пулмалла ӗнтӗ, анчах усси сахалрах, куҫару ӗҫӗнче ҫак пархатарсӑр мел те ытлашши тарӑн тымар янӑран, эпир унтан халӗ те хӑтӑлса ҫитейместпӗр-ха. Ун пек куҫарма ҫӑмӑлтарах-и тен, мӗншӗн тесен нумай шухӑшласа асаплама кирлӗ мар, вырӑсла предложенири сӑмахсене пӗрин хыҫҫӑн теприне куҫарса кай ҫеҫ: чӑвашла ӑнланмалла тухать-и вӑл, ӑнланмаллах мар-и, ун пирки куҫараканни мар, кам та пулин «урӑххи» шухӑшлатӑр! Ытахальтен калаҫса ҫӑвар тутине сая ярар мар. Буквально куҫарнинчен мӗн пулса тухнине тӗслӗх илсе кӑтартса пани усӑллӑрах пулӗ. 1953 ҫулта Чӑвашгосиздатра П. Павленко ҫырнӑ «Телей» ятлӑ кӗнеке пичетленсе тухрӗ. Ку кӗнекене вырӑсларан чӑвашла куҫараканни Н. Евстафьев, редакторӗ В. Цирульников. Унта ҫакӑн пек куҫарнӑ вырӑн пур: «Кунти наступленилле операцисем хӑратса тӑракан окруженисемпе тата обходсемпе кӑткӑсланнӑ, кӗрешӳ Дунайшӑн пынӑ; хӑюллӑ переправӑсем тата юханшывсен тепӗр енне паттӑррӑн чакнисем осадӑна куҫакан оборонительнӑй ҫапӑҫусен лӑпланнӑ саманчӗсемпе пӗрле пулса пынӑ,—ҫаксем пурте хӑвӑртланса пыракан темпсемпе, ӳссе пыракан масштабсемпе, ҫынсен нихҫанхинчен те вӑйлӑрах ҫирӗплӗхӗпе пӗрле пулса пынӑ» (45 стр.). *«Хӑратса тӑракан* окруженисемпе обходсем»? Мӗнле, ӑҫтан хӑратса тӑраҫҫӗ-ши? Мӗнлескерсем-ши тата вӗсем? Ҫук, ун пек окруженисемпе обходсем пурри ҫинчен илтменччӗ эпир. «Хӑюллӑ переправӑсем тата юханшывсен тепӗр енне паттӑррӑн чакнисем осадӑна куҫакан оборонительнӑй ҫапӑҫусен лӑпланнӑ саманчӗсемпе пӗрле пулса пынӑ». Мӗне пӗлтерет-ши ку? Мӗн ҫинчен каланӑ-ши кунта? «Переправӑсем, паттӑррӑн чакнисем ҫапӑҫусен лӑпланнӑ саманчӗсемпе пӗрле пулса пынӑ»? Ҫам мӗнле-тӗр, анчах эпир, мӗн ачаран чӑвашла калание самантрах ӑнланма хӑнӑхнӑскерсем, кунта мӗн ҫырнине ниепле те ӑнланса илеймерӗмӗр. Переправӑсем те, чакнисем те ҫапӑҫусен лӑпланнӑ саманчӗсемпе пӗрле хӑйсем тӗллӗнех пулса пынӑ иккен. Тӗлӗнмелле! Ку ҫеҫ те мар-ха, ҫав переправӑсемпе чакнисем... ҫынсен нихҫанхинчен те вӑйлӑрах ҫирӗплӗхӗпе пӗрле пулса пынӑ, тесе ӗнентерме хӑтланать пире куҫаракан. Вулакан хуть мӗн каласан та, хамӑр калас тенине каласа хӑвармаллах пулать: сӑмахӗсем чӑваш сӑмахӗсемех пулсан та, чӑвашла ҫырман кунта, унсӑрӑн эпир куҫаракан мӗн ҫинчен ҫырнине ҫӑмӑллӑнах ӑнланса илнӗ пулӑттӑмӑр. Мӗн тӑвӑн, вуланӑ япалана ӑнланасах килет, вара ирӗксӗрех вырӑсла ҫырнине тупса вулатӑн. П. Павленко писатель ӑнланмалла ҫырнӑ иккен, вӑл ним чухлӗ те айӑплӑ мар-мӗн, айӑпӗ кӗнеке куҫаракана пырса тивет имӗш. П. Павленко акӑ мӗнле ҫырать: «Наступательные операции были здесь осложнены угрожающими обходами и окружениями, борьба шла за Дунай; лихие переправы и еще более героические отходы за речные преграды сопровождались паузами неожиданных оборонительных боев, выраставших в осады,— и все это в ускоряющихся темпах, в возрастающих масштабах, беспримерной и тоже все растущей стойкости людей». Хирӗҫ пӗр сӑмах та калаймӑн. Ӑнланмалла ҫырнӑ. Куҫаракана шухӑшламалла пулнӑ, вырӑсла ҫыракан авторӗ вырӑс писателӗ мар, чӑваш писателӗ пулнӑ пулсан, халь асӑннӑ текста мӗнле ҫырнӑ пулӗччӗ-ши? Ҫук, никам ӑнланса илмелле мар ҫырас ҫукчӗ вӑл. Асӑннӑ текста ҫӗнӗрен куҫарас ӗҫе хамӑр ҫине илесшӗн мар эпир, апла пулин те, ун чӑтмасть, тӗрӗсех куҫарма хӑват ҫитерейместен те, куҫарса пӑхасах килет. Мӗнле пулса тухать-ши? Пирӗн шухӑшпа, П. Павленко писатель чӑвашла ҫапларах ҫырнӑ пулӗччӗ: «Дунайшӑн ҫапӑҫу пыратчӗ. Наступление кайнӑ чух питӗ кансӗрччӗ кунта, аякран пырса кӗрсе ҫавӑрса илес хӑрушлӑх пурри ӗҫе нумай йывӑрлататчӗ. Юханшыв урлӑ хӑюллӑн каҫнӑ хушӑрах татах та паттӑртараххӑн ҫапӑҫса каялла чакса каллех хамӑр енне каҫма тӳр килетчӗ, хушӑран вара, кӗтмен ҫӗртенех, оборонӑллӑ ҫапӑҫусем пулса иртетчӗҫ, кун пек чух хупӑрласа илнисем те пулкалатчӗҫ,—ҫак ҫапӑҫусен хӑвӑртлӑхӗсем ӳснӗҫемӗн ӳссех пыратчӗҫ, сарӑлнӑҫемӗн сарӑлсах пыратчӗҫ вӗсем, ҫынсем те хӑйсен халиччен пулман паттӑрлӑхне ытларан та ытларах кӑтартатчӗҫ». Пӗрре те тиркемелле мар тӗрӗс куҫартӑмӑр теместпӗр эпир, лайӑх куҫарас тесен, нумай ӗҫлемелле, вӑхӑт та ытларах кирлӗ, ҫапах та ку, эпир куҫарни, пирӗн шухӑшпа, чӑвашларах. Кунта илсе кӑтартнӑ тӗслӗхсем, паллах, буквально куҫарнинчен нимӗнле пархатар та ҫуккине ахаль сӑмахпа каланинчен лайӑххӑн, ӗненмеллерех кӑтартса параҫҫӗ.

Куҫарнипе куҫарни хушшинче уйрӑмлӑх пурах ҫав. «Мыслимое ли дело воздвигнуть жизнь на голых камнях? Это же блажь!» тенине тӑлмач чӑвашла ҫапла куҫарать: «Пурнӑҫ туса ярасси ҫинчен шутлама пулать-и ҫара чул ҫинче? Ку вӑл—ӑнтан каясса ҫитни» (Тӗслӗхне П. Павленко ҫырнӑ «Телей» ятлӑ кӗнекерен илтӗмӗр). Ку пуплеве апла та, капла та ӑнланма пулать. Ҫара чул ҫинче ҫавӑн пек шутлама пулать-и вара?—тенӗпе пӗрех ку. Ҫара чул ҫинче мар, урӑх ҫӗрте пулсан шутлама пулать тесе те ӑнланмалла. Чӑвашла тата «пурнӑҫ туса ярасси» темеҫҫӗ, «пурнӑҫ тӑвасси» теҫҫӗ. «Ку вӑл—ӑнтан каясса ҫитни»? Ҫам мӗнле шухӑшлать-тӗр, анчах чӑвашсем ун пек калаҫнине халиччен илтменччӗ эпир. Асӑннӑ текста чӑвашла куҫарма питӗ ансат. «Ҫара чул ҫинче ӑҫтан пурнӑҫ тӑватӑн? Мӗн шухӑшламалли пур ун ҫинче. Ухмахланни кӑна вӑл!» темелле те ӗҫӗ те пӗтрӗ.

Вырӑсларан чӑвашла куҫарнӑ чух ӗҫ пахалӑхне чакаракан сӑлтавсем сахал мар ҫав. Тепӗр чух тӑлмач чунхавалӗпе ҫӗкленсе ӗҫлеменнинчен те нумай килет. Ун пек тӑлмач кирлӗ сӑмах шыраса асапланмасть, мӗнле каласан лайӑххах, тӗрӗсрех пулать-ши, тесе те шухӑшласшӑн мар вӑл, тытать те куҫарать. Акӑ ун умӗнче вырӑсла текст: «Через ложбину, отделявшую город от ближайшего горного кряжа, шла узкая, покрытая щебнем тропинка. Далеко вверху, меж серых скал, виднелись зеленые верхушки пробковых дубов, низкорослые лишайники и свисающие с громадной скалы вьющиеся стебли дикого винограда. Там журчал горный ключ. Камни на солнцепеке становились горячими. Полузасохший горный лишайник колол босые ноги» (Жан Грива, «Испани ҫинчен», «Максильо» ятлӑ калав, куҫара-

канĕ М. Рубцов, редакторĕ В. Терентьев). Вулатăн та куç умне çутçанталăк сăнарĕ тухса тăрать. Хăйне кура илемĕ те пур унăн. Çав илеме чăвашла та вырăсли пекех çырса кăтартас кăмăл çĕкленет. Чăн та: «Хулана татти-сыпписĕр тăсăлакан çывăхри тусенчен уйăрса тăракан тăрăнах мар васан урлă вĕтĕ чул сарнă ансăр сукмак каçать. Çӳлте, инçетре, кăвак чулсем хушшинче, пробка йывăççисен ешĕл тăррисем, лутрашка мăк куракĕсем, çав тери пысăк чул ту çинчен усăнса анса явăнса ӳсекен виноград тунисем курăнаççĕ. Унтах ту çинчи çăлкуçĕнчен тапса тухакан шыв шăнкăртатса юхать. Хĕвел çинчи чулсем хĕрсе каяççĕ. Кăштах типсе куштăрканă мăк куракĕ çара урана чикет». Анчах пирĕн тăлмач çакна те курсах каймасть, те çакăнта çырса кăтартнă çутçанталăк сăнарĕ унăн чун-чĕрине пачах хускатмасть? Çавăнпах-и тен, вăл ӳркенсе куçарать. Акă мĕнле çырса кăтартать вăл эпир халь çеç асăннă çутçанталăк сăнарне: «Хулана тусенчен уйăрса тăракан васан урлă вĕтĕ чул сарнă тăвăр сукмак каять. Çӳлте, инçетри кăвак тусем хушшинче, пробка йывăççисен симĕс тăррисем, сарăлса ӳсекен лутра ӳсентăрансемпе çӳлĕ те пысăк чул *ту çинчен карăннă* виноград тунисем курăнаççĕ. Унта та çăлкуçĕ юхса выртать. *Хĕвел хĕртекен енчи* чулсем пĕçерсе тăраççĕ. Типнĕ ӳсентăрансем çара урана чикеççĕ.» Тăлмач кирлĕ сăмах шыраса чăрманманни курăнсах тăрать. «Низкорослый лишайник» тени, уншăн пулсан, «лутрашка мăк куракĕ» мар, сарăлса ӳсекен лутра ӳсентăран. «Полузасохший лишайник» тенине вăл «кăштах типсе куштăрканă мăк куракĕ» тесе мар, «типнĕ ӳсентăран» тесе куçарать. «Хĕвел хĕртекен енчи»—пачах чăвашла мар, чăвашла «хĕвел çинче», «хĕвел питĕнче» теççĕ. «Чул ту çинчен карăннă виноград» тенипе те килĕшме çук, мĕнле карăннă? Ун пек ӳркенсе, тирпейсĕр куçарни вырăсла оригинал сĕткенне типĕтет, унăн тĕшшине шĕкĕлчесе илнĕпе пĕрех ĕнтĕ, çара хуппине çеç тăратса хăварать.

Эпир кунта вырăсларан чăвашла куçарас пирки тĕрлĕ май шухăшлакансем пурри çинчен калаçрăмăр. Шухăшлани вăл темех мар, шухăш шухăш халлĕнех тăрса юлнă пулсан, ĕçе сиен кӳрес çукчĕ-и тен вăл, анчах çав йăнăш шухăшсем ĕçе сăрхăнса кĕреççĕ, куçаракансенчен нумайăшне творчество çулĕ çинчен пăрса яраççĕ. Чăн-чăнипех пултаруллă тăлмачăн, пирĕн шухăшпа, тĕллевĕ пĕрре: вырăсларан чăвашла куçарнă произведени чи малтан чăннипех чăвашла вулантăр, ăна вырăсларан куçарнă иккенне вулакан ним чухлĕ те ан систĕр. Вырăсла çырнă текст, «шăнкăр-шăнкăр шыв юхать» тенĕ пек, янăравлăн юхса пырать пулсан, вăл текстри сăмахсем витĕмлĕ те сĕткенлĕ пулсан, чăвашли те çавăн пекех хăватлă, янăравлă, витĕмлĕ те сĕткенлĕ пултăр. Кĕскен каласан, чăвашла куçарни чăваш халăхĕшĕн çывăх, ăнланмалла пултăр. Çакăн пек куçарма пултаракан тăлмач, паллах ĕнтĕ, культура тĕлĕшĕнчен çӳлĕ пусăмра тăрать. Илемлĕ литература мĕн иккенне лайăх ăнланать вăл, унăн историне, теорине лайăх пĕлет, унăн хăй чун-чĕрине çывăх, ытарайми юратнă писателĕсем пур. Çав писательсем çырнă кĕнекесенчи геройсем кирек хăçан та ун куçĕ умĕнче, тепĕр чух, пĕлме çук, тĕлĕкĕнче те вĕсемпе пĕрлех пурăнать-и тен вăл. Ахальтен мар ĕнтĕ, ун пек тăлмач издательстве сĕннипе пĕр шухăшламасăр, йăпăр-япăр килĕшмест, «Çук,—тет вăл,—ку произведение куçараймастăп, кама та пулин урăххине парăр, ман хамăн юратнă писатель пур, унăн произведенийĕсене куçарма хавас, чĕлхи, слогĕ кăмăла каять». Çапла, хăй юратнă писатель çырнă произведение илет те вăл куçарма тытăнать. Мĕн пулса иртет-ха куçарнă вăхăтра? Ăста тăлмач автор вырăнне йышăнать. Автор пекех, произведенири геройсемпе пĕрле пурăнма тытăнать, вĕсен кашни утăмне, хускалăвне курать, çук, сĕтел хушшинче кĕнеке куçарса лармасть вăл, пĕтĕмĕшпех урăх тĕнчене, произведенире çырса кăтартнă тĕнчене куçать. Автор пекех, геройсемпе пĕрле савăнать, пăшăрханать, хурланать, тарăхать, тепĕр чух тата, пĕр-пĕр героя шелленĕ пирки, куççулĕ те юхтарать, пĕр-пĕр герой çине тарăхнă пирки чышкине те чăмăртать. Урăхларах каласан, автор хăйĕн произведенине çырнă чух мĕн-мĕн чăтса ирттернине йăлтах тепĕр хут чăтса иртерет. Произведени малтан автор чун-чĕри витĕр шăранса тухса ун сисĕм-туйăмĕпе сĕткенленнĕ пулсан, халь ĕнтĕ вăл, куçарнă чух, тăлмач чунчĕри витĕр тепĕр хут шăранса тухать. Ку, хăвăрах куратăр, предложени хыççăн предложение пĕр сисĕм-туйăмсăр куçарса кайни мар, чăн-чăн творчество. Чунчĕре витĕр шăранса тухнă сăмах кирек хăçан та витĕмлĕ, сĕткенлĕ, янăрасса та хăватлăрах янăрать вăл, вулакан чĕрине хускатать.

Пултаруллă, талантлă поэт е писатель пире хăйĕн чĕлхи çав тери пуянниле, унпа ăста усă курма пĕлнипе тĕлĕнтерет. Поэт е писатель çын шухăш-кăмăлне, унăн чун-чĕринче мĕн-мĕн пулса иртнине, çутçанталăк илемне т. ыт. те çырса кăтартма кирлĕ чи витĕмлĕ сăмахсем тупать пулсан, паллах, унăн произведенине куçаракан тăлмач та чĕлхе пуянлăхĕ тĕлĕшĕнчен автортан кайра тăма пултараймасть. Ăста тăлмач çак сăмах тĕрĕс иккенне аван чухлать. «Вырăсла-чăвашла пĕлĕтĕп-ха, уншăн пулсан хуйхи-суйхи çук» тесе, хăшпĕр «тăлмач» пек, пуçне каçăртса çӳремест вăл, литература чĕлхине те, халăх калаçакан чĕлхене те куллен-кун, кашни утăмра тенĕ пек, ырми-канми тĕпчет, вĕренет. Çук, чĕлхене тĕпчесе вĕреннипе кăна çырлахмасть-ха вăл, чĕлхе пуянлăхĕ пурри, уншăн пулсан, çителĕксĕр, мĕншĕн тесен, чĕлхе пуянлăхĕ хăй халлĕн çеç ниме те пĕлтермест-ха, чи кирли вăл—çав пуянлăхпа усă курма пĕлесси. Тăлмач вара ĕçленĕ чух, пĕчĕккĕн пулин те, çак кăткăс ĕçе хăнăхса пырать, сăмаха, пĕрчĕнпĕрчĕн тенĕ пек, суйлать: хăшĕ кирлĕрех, хăшĕ витĕмлĕрех, янăравлăрах? Çапла вăл хăйĕн ăсталăхне ӳстернĕçем ӳстерсе пырать. Ĕмĕр тăршшĕпех çапла ĕçлет вăл, пĕрмай шырать, суйлать, нихçан та лăпланмасть. Нумай чух пĕрре куçарса пичетлесе кăларнă кĕнекене, куçарнăранпа темиçе çул иртнĕ пулин те, тепĕр хут, хăш чух тата ик-виçĕ хут та çĕнĕрен пăхса тухса тӳрлетет. Урăхларах каласан, тăлмач та поэт е писатель пекех ĕçлет.

1936 çулта чăваш халăх поэчĕ Петĕр Хусанкай А. С. Пушкинăн «Евгений Онегин» романне чăвашла куçарса «Илемлĕ литература» альманахра пичетлесе кăларнăччĕ. Хусанкай поэта эпир сăмах ăсти тетпĕр, пĕр шухăшласан, ун пек ăста поэт хăй пĕрре куçарнине тепĕр хут пăхса тухма та кирлĕ мар пек, мĕнле куçарнă çаплипех хăвармалла пек. Анчах Хусанкай хăйĕн малтанхи ĕçĕпе çырлахмасть, мĕншĕн тесен А. С. Пушкинăн чаплă произведенине чăвашла куçарма мĕн таран йывăррине те, ăна чăваш халăхĕшĕн уççăн ăнланмалла куçарас тесен, пайтах вăй-хал хума кирлине те лайăх ăнланать вăл. Çавăнпа ĕнтĕ «Евгений Онегин» романăн пĕрремĕш хут куçарнă вариантне пичетлесе тухнă хыççăн вăл ку ĕçе пăрахмасть, пĕр тăхтаса тăмасăрах çĕнĕрен те çĕнĕ вариантсем тума тытăнать. Çапла вунтăватă çула яхăн иртет, вара, 1950 çулта тин «Евгений Онегин» романăн чăвашла куçарнă иккĕмĕш вариантĕ кĕнеке пулса тухать. Тĕслĕххĕн çав икĕ тĕрлĕ вариантри хăшпĕр сыпăксене пĕрпĕринпе танлаштарса пăхăпăр, мĕншĕн поэт тесен ун пек танлаштарса пăхни поэт-тăлмач мĕнле ĕçленине, пĕтĕмĕшпех мар пулин те, кăштах та пулин чухласа илме пулăшасса шансах тăратпăр.

1936 çулта куçарнă сыпăк çапла вуланать:

«Мучейĕн ман чи тӳрĕ кăмăл;
Чăнах халтан кайса ӳксен,
Хăйне сума сутарчĕ халь вăл,
Унтан ыр мел те çук ун тен.
Ана пăхса ытти вĕрентĕр:
Анчах, ах тур, епле кичем-тĕр,
Пĕр утăм та аяккалла
Хăпмасăр, чирлĕ çынпала
Лармашкăн ир те каç! Мĕн мăшкăл—
Çурма чĕрре йăпатасси,
Ун минтерне тӳрлетесси,
Салхун эмел илсе памашкăн;
Сывлатăн ассăн, ху шутлан:
Хăçан илес сана шуйттан!»

1950 çулта пичетленсе тухнă кĕнекере ку сыпăк нумай улшăннă, лайăхланнă, ăна вулама та, ăнланма та çăмăлтарах. Акă вăл:

«Çав ман куккан чи тӳрĕ кăмăл;
Чăнах вăл аптраса ӳксен,
Хăйне сума сутарчĕ çăмăл,
Унтан аван мел çук иккен:
Ана пăхса ытти вĕрентĕр;
Анчах кичем те-çке, сикмесĕр,
Яра куна та çĕрĕпе
Лармашкăн чирлĕ этемпе!
Мĕнле ултав ку, шутласассăн:
Çур вилене эс йăпатан,
Ун минтерне хăпарткалатăн,
Хуллен эмел сыптаркалатăн,
Сывлатăн ассăн, ху шутлан:
Хăçан кăнтас сана шуйттан!»

Кунта, 1936 çулта куçарнă текстпа танлаштарсан, мĕн пурĕ те икĕ йĕрке çеç улшăнмасăр юлнă. Роман тăршшĕпех çапла. Татьяна çырăвĕн пуçламăшне илсе пăхар. Акă 1936 çулта куçарни:

«Татьяна Онегина янă çыру

Ма пытăр-ши пирĕн пата?
Пăрахăç шăпăрт ялта эпĕ
Сире пĕлмĕттĕм нихçан та,
Пĕлмĕттĕм çак асапсене те.
Яш чунăм хускавне вăраххăн
Лăплантарса (ăçтан пĕлен?)
Эп хам чĕреçем тус тупаттăм,
Тĕрĕс-тĕкел мăшăр пулаттăм,
Тата ыр ача амăш, тен».

1950 çулта пичетленсе тухнă текст:

«Татьяна çырăвĕ

Ма куртăр-ши килсе пире?
Çын маннă çак ялта нихçан та
Пĕлмен пулаттăм эп сире,
Курмастăм çак хĕн асапа та,
Айван чуна лăплантарсассăн,
(Ăçтан пĕлес?) тен, малашне
Тус тупăттăмччĕ эп хам майлăн.
Ыр арăм пулăттăмччĕ уншăн,
Ача-пăчашăн—ыр анне...»

Кунта вара улшăнманни пĕр йĕрке те çук. Кайран куçарни, пирĕн шухăшпа, малтанхипе танлаштарсан, вырăсла оригиналпа çывăхрах, чăн та чăвашла вуланать, çитменнине тата пĕр тикĕс янăравлă.

Ку статьяра эпир илемлĕ литература произведенийĕсене вырăсларан чăвашла куçарас ĕçри çитменлĕхсем çинче ытларах чарăнса тăтăмăр. Вăл çитменлĕхсем мĕнрен килнине те кăтартса пама тăрăшрăмăр. Сăлтавĕсем, чăнах та, çителĕклĕ: куçаракансен хăйсен те айăпĕ пур кунта, редакторсем сӳрĕкрех ĕçленинчен те килет ку, литература критики вăр-вар хускалма ĕлкĕрейменнинчен те нумай килет, куçару принципĕ пирки халиччен те калаçса татăлайманни те чылай чăрмав кӳрет. Çапах та чи пысăк сăлтавĕ, пирĕн шухăшпа, илемлĕ литература произведенийĕсене куçаракансенчен нумайăшĕ куçарас ĕç мĕн тери йывăр та кăткăс иккене, вăл чăннипех творчествăллă ĕç иккенне халиччен те лайăххăн ăнланса илейменнинче. Анчах ăнланса илме вăхăт ĕнтĕ, мĕншĕн тесен пирĕн вулакан культура тĕлĕшĕнчен ӳснĕçем ӳссе пырать, çавна май, паллах, унăн эстетикăлла туйăмĕсем те çӳлĕрен те çӳлĕрех пусăма çĕкленеççĕ. Халь вăл вырăсларан чăвашла куçарнă произведенисене çеç мар, тĕнчипе паллă классиксем çырнă кĕнекесене, совет литературин чи чаплă произведенийĕсене вырăсла та вулать. Ун пек вулакан умне япăх куçарнă кĕнеке кăларса хуни, каламасăрах паллă, тӳсме çук киревсĕр ĕç тунипе пĕрех. Вуламасть вăл ăна, тытса пăхать те, ăнланма йывăррине кура, пăшăрханса е хытах тарăхса, аяккалла илсе хурать çеç. Лайăх, чăвашла та вырăсла оригиналтан пĕрре те кая мар вуланакан кĕнеке пар ăна, япăххи кирлĕ мар, уншăн вара вăл сана тав тăвать кăна.

Илемлĕ литература произведенийĕсене, çав хушăрах ытти тĕрлĕ литературăна та, вулакан кăмăлне çырлахтармалла куçарма пултаратпăр эпир. Ку ĕçе тума пирĕн мĕн кирли пурте пур. Чăваш литератури аталанăвĕн историйĕнче вырăсларан чăвашла куçаракан чăн-чăн ăста тăлмачсем сахал мар пулнине эпир пурте пĕлетпĕр, халĕ те сахал мар вĕсем. Вĕсен пуян опытне тĕпчесе вĕренни çеç çитсех каймасть пире. Ку тĕлĕшпе Чăвашсен чĕлхепе литература тата историн наукăпа тĕпчев институчĕ те, литература критики те хускални палăрсах каймасть. Анчах хускалма вăхăт çитнĕ, ку кирлĕ ĕçе вăраха яма пултараймастпăр эпир, мĕншĕн тесен халлĕхе пирĕн кĕнеке куçарас ĕçре йăнăшсемпе çитменлĕхсем тӳсме çук нумай.

**Василий АЛАГЕР.**

# Л. Агаковăн „Ырă кăмăллă çынсем“ кĕнеки

Чăваш государство издательстви Леонид Агаковăн «Ырă кăмăллă çынсем» ятлă кĕнекине пичетлесе кăларчĕ. Унта автор Аслă Отечественнăй вăрçă тапхăрĕнче тата вăрçă хыççăн çырнă калавĕсене кĕртнĕ.

Кĕнекери калавсем совет çыннисен пурнăçĕн тĕрлĕ тапхăрĕсене сăнласа параççĕ пулин те, вĕсен кашниннех пысăк пĕрпеклĕх пур: Аслă Отечественнăй вăрçă тапхăрне сăнласа паракан калавсенче те, вăрçă хыççăнхи мирлĕ вăхăта кăтартакан калавсенче те эпир, вулакансем, совет халăхĕн вăйне, хăйсем çĕнтерессе шанса тăракан ырă кăмăллă совет çыннисене куратпăр. Çакăнта ĕнтĕ кĕнекери калавсен пысăк пĕрпеклĕхĕ.

Акă, сăмахран, «Старик» калаври Яков Иванович Просветов учителе илер. Вăл совет çыннисен чи лайăх, чи характерлă енĕсене пĕтĕçтерсе тăрать. Яков Иванович вăрçă вăхăтĕнче совет халăхне пусмăрлама талпăннă нимĕç фашисчĕсене хирĕç пĕтĕм вăй-хăватне шеллемесĕр кĕрешнĕ. Аçтан куратпăр-ха эпир Просветовăн хĕрÿллĕ патриотизмĕпе чăн-чăн гуманизмне? Кашни ĕçĕнчен, кашни утăмĕнчен, кашни хусканăвĕнчен.

Яков Ивановича фашистсен гестапо начальникĕ, хăй патне чĕнсе, вĕсен писарĕ пулма ÿкĕтлет. Хăй халăхне, Тăван çĕршыва, Коммунистсен партине чунчĕререн парăннă совет çынни, пирĕн çамрăк ăрăва коммунистла воспитани паракан таса чĕреллĕ совет учителĕ çак сĕнĕве йышăнма пултарайман.

Нимĕçсем Яков Иванович Просветов çирĕм çул хушши ĕçлесе пурăннă шкула аркатса тăкаççĕ, унти кĕнекесене çунтараççĕ, парта хăмисенчен лашасем валли кормушкăсем тăваççĕ. Çак тискер хыпара илтсен, Яков Иванович шкула чупать, çунмасăр юлнă кĕнекесене хăй пĕлнĕ вырăна пытарать. Вăлах вилес пек аманнă совет партизанне вилĕмрен çăлса хăварать.

Просветов пурăннă Вишни ялне тăшмансенчен хăтарсан, ватă учитель шкул туса парисчĕнех совет ачисене килтен киле çÿресе вĕрентет, çак ĕçе вăл пĕтĕм чĕререн юратса тăвать.

Кĕнекене кĕртнĕ калавсенчи сăнарсем пурте типлă сăнарсем. Сăмахран, «Амăшĕн сăмахĕ» калаври ватă хĕрарăм сăнарне илсе пăхар. Çак совет хĕрарăмĕ, Просветов учитель пекех, совет çыннисен чи лайăх енĕсене пĕтĕçтерсе тăрать. Ун урлă эпир тăшман тылне вăхăтлăха юлнă совет çыннисене, вĕсен шухăшкăмăлĕсене, ĕмĕчĕсене, интересĕсене, вĕсем Совет Çарĕ ирсĕр фашистсене тĕппипех çапса аркатасса, Совет Çарĕ ирĕклĕх кÿрессе çирĕп шанса тăнине куратпăр. Хурçă чĕрепллĕ çак хĕрарăмăн пĕтĕм çемйи тăшмана хирĕç хаяр кĕрешĕве тухнă: унăн икĕ ывăлĕ те вăрçă пуçлансанах фронта тухса кайнă, пĕри, Киев хулине хÿтĕлесе, паттăррăн пуçне хунă, тепри, тыткăнран тарса килсе, тепĕр куннех партизана кайнă. Пĕррехинче вăл разведкăра пулнă та йывăр аманнă, вара ăна, фашистсем виçĕ çул юппинче çакса вĕлернĕ. Килĕпе унăн ачисен шăпи те çавнашкалах пулнă.

Çак совет хĕрарăмне нимĕнле хăрушлăх та, нимĕнле йывăрлăх та чарса тăрайманнине куратпăр эпир. Çапла вара, вăл совет çыннисен типлă, характерлă енĕсене пĕтĕçтерсе тăрать.

Е тата «Куккук» калаври чăваш хĕрĕ Настьăнах илсе пăхар. Вăл мĕнпур совет çамрăкĕсемшĕн характерлă, типлă пулса тăрать.

Чи малтан çакна асăнмалла: тĕрĕс ĕçшĕн кĕрешекен кашни этем, вăл темле йывăрлăхсем тÿсет пулин те, пурнăçа юратать, урăхла каласан, унра оптимизм вĕрет. Настьăн оптимизмне эпир унăн кашни сăмахĕнчех, кашни утăмĕнчех туятпăр. Йĕритавра хаяр çапăçу пынă вăхăтра вăл бомбăсем, снарядсем çĕре кисретсе çурăлнă чух совет салтакĕсене концерт парать, чăваш халăх юррисене юрласа кăтартать, çапла вара вăл кунĕн-çĕрĕн çапăçса ывăнса çитнĕ совет салтакĕсене тăшмана хирĕç тата паттăртарах, хаяртарах кĕрешме хавхалантарать.

Çапла вара, çак паттăр хĕр сăнарĕ, унăн характерĕ калавра майĕпен уçăлса пырать, калав вĕçĕнче вулакансен куçĕ умне хăйĕн пĕтĕм кÿлепипе тухса тăрать. Фурманов каланă тăрăх, характера тĕрех мар, палăн-пайăн, майĕпен уçса пымалла. Çакна эпир Агаковăн «Куккук» калавĕнче те лайăх куратпăр.

Автор тăшмансене мĕнле сăнланă пирки те чарăнса тăрар. Тăшмансен сăнарĕсем кĕнекере чăннипех те типлă. Сăмахран, «Хĕр юрри» калаври нимĕç комендантнех илер. Çак тискертен те тискер этем фашистсен чи характерлă, типлă енĕсене пĕтĕçтерсе тăрать. Автор çак фашиста сăнласа панă чух, гиперболăпа усă курса, унăн сăнарне тата вăйлăрах туса кăтартать.

Аçтан палăрать-ха çак тискер фашист?

Хăй вăл—ытти фашистсем пекех, çынна шеллемен тискер кайăк. Çакăнпа пĕрлех вăл хăравçă та. Унăн хăравçăлăхне эпир кашни сăмахĕнчен, кашни ĕçĕнчен, кашни хусканăвĕнчен куратпăр. Вăл, хĕр юррине илтсе, кунтан-кун хытăрах хăракан пулать, хăй пурăнакан çурт тавра икĕ ретлĕ хÿме—чăн-чăн крепость тутарать, ăна вуникĕ жандарм сыхлать. Хăравçăлăх вăл вăхăтра кашни фашистшăн характерлă, типлă пулнă. Мĕншĕн? Мĕншĕн тесен вĕсем нимĕн айăпсăр совет çыннисен çĕрĕ çинче пуç пулса пурăннă. Фашистсем хăйсене кашни утăмрах вилĕм кĕтнине туйса тăнă. Çав вилĕм хăратнă та вĕсене. Каççерен вăрттăн юрлакан хĕр-партизанкăна фашистсем çакса вĕлерсен те юрă чарăнманнине кура, нимĕç коменданчĕ куна çакнă хĕр юрлать пулĕ тесе шутлать, çакăнса тăракан хĕре юрлама чарма хăйĕн салтакĕсене приказ парать. Паллах, ку ун пек пулман ĕнтĕ. Кунта автор нимĕç коменданчĕн тĕшмĕшлĕхне ÿстерсе, гиперболизацилесе кăтартни питĕ вырăнлă. Çакă вăл нимĕç фашисчĕн тискер сăн-сăпатне, унăн тĕшмĕшлĕхне яр-уççăн кăтартма пулăшать.

«Ырă кăмăллă çынсем» кĕнекере сăнласа панă совет çыннисем хушшинчи тепĕр пысăк пĕрпеклĕх — вĕсем мирлĕ пурнăçшăн, вăрçа хирĕç хаяррăн, вăя шеллемесĕр кĕрешни, мир салтакĕсем пулни. Чăнах та, кĕнекери калавсене вуласа тухатăн та, пире акă мĕнле чуна хавхалантаракан шухăш аса килет: совет çынни Тăван çĕршыв çине вăрăхурахла килсе тапăннă тискер тăшмана хирĕç çапăçать-и, мирлĕ вăхăтра хамăрăн пурнăçа сад пек чечеклентерет-и,— пур çĕрте те вăл мирлĕ пурнăçшăн кĕрешет, халăхсем хушшинчи мире хÿтĕлет. Илсе пăхар, «Ырă кăмăл» калаври Иван Фомич Фомин садоводах. Колхозра вăл вăрçă пуçланичченех пысăк сад лартса тăвасшăн пулнă, анчах вăрçă ун ĕмĕтне татнă. Тăшмана хирĕç çапăçнă чухне вăл сад çинчен шухăшлама çаплах чарăнмасть. Вăл бруствер хĕрринче те тĕрлĕ чечек лартса ÿстерет. Кун çинчен чăваш писательне Чайка комбат çапла каласа парать:

— Эсир, писательсем, ялан контрастсем шыратăр. Ак сана контраст. Фашист салтакĕ иртнĕ çĕрте — вилĕм, асап, вут-çулăм, кĕл те кăмрăк... Пирĕн салтак малти позицире те чечек ÿстерет! Ăнланатăн-и, мĕне пĕлтерет ку?...

Комбатпа Иван Фомич хушшинче çакăн пек калаçу пулса иртет:

«Капитан тăрук Фомин еннелле çаврăнчĕ.— Вăрçă хыççăн мĕн тăвас тетĕн?

— Колхозра питĕ пысăк сад тума шутлатăп,—пĕр тытăнса тăмасăр ответ пачĕ салтак.—Вăрçă пуçланиччченех тытăннăччĕ те — кансĕрлерĕç... Халь пĕтсе ларчĕ пулĕ ĕнтĕ, пăхакан çук...

— Унта чечексем те ÿстеретĕн ĕнтĕ?

— Чечексĕр мĕн илемĕ пултăр?—Вăл кăштах шухăша кайнă пек пулчĕ те хуллен хушса хучĕ:—Чечексĕр—илем çук, илемсĕр пурнăç та мар.

— Тĕрĕс, Фомин. Пурнăçа ăна питĕ илемлĕ тăвас пулать. Пур енчен те... Этемĕн чунĕ ялан юрласа тăтăр!

— Çавăншăн çапăçатпăр та, капитан юлташ... Вăрçине часрах пĕтересчĕ кăна, кайран мĕн тумаллине пĕлĕттĕмĕр-ха ăна!— терĕ юлашкинчен Фомин.— Ас та, вăй та çитерĕттĕмĕр...»

Çак икĕ воин хушшинчи калаçу совет салтакĕсем пурте мир салтакĕсем иккенне, вĕсен ĕмĕчĕсемпе ĕçĕсем мирлĕ пурнăçшăн тăнине пĕлтерет.

Автор сюжета интереслĕ, чĕрĕ тăвать. Кирек мĕнле шухăша та вăл пурнăçăн чи характерлă енĕсене кăтартса паракан событисем урлă кăтартать.

Çаксемпе пĕрлех «Ырă кăмăллă çынсем» кĕнекере çитменлĕхсем те пур-ха. Вĕсене эпир писатель ăсталăхĕ çинчен сăмах вакланă май палăртса хăварăпăр.

Федин хăйĕн «Писатель ăсталăхĕ» ятлă статьинче çырнă тăрăх, писатель ăсталăхне чĕлхерен тишкерме пуçламалла, мĕншĕн тесен чĕлхе кирек мĕнле произведенире те тĕп материал пулса тăрать.

Писателĕн çак кĕнекери калавĕсен чĕлхи хушăран хаçат чĕлхине аса илтерет, чĕлхе илемлĕхĕ тишкерсе вулакансен ĕмĕтне çырлахтараймасть, чун-хавал хăватне вăл май килнĕ таран ярса илеймест.

Писатель чĕлхинче чăваш чĕлхин стройĕпе килĕшсе тăман предложенисем тĕл пулаççĕ, ку вăл, паллах, писатель чăваш чĕлхи аталанăвĕн шалти законĕсене çителĕклĕ шута илейменнинчен килет. Писатель хăйĕн калавĕсенче сăмахсемпе пур чухне те кирлĕ пек усă курмасть, ку вара хăш чухне калас тенĕ шухăша пăсса урăхлатать, шухăша йăнăш ăнлантарма пултарать.

Писатель хăйĕн произведенийĕсене хаçат чĕлхипе çырать тени ĕненмеллерех пултăр тесе, тĕслĕхсем илсе кăтартар.

Автор «Старик» калава çапла пуçласа ярать: «...Мускав патĕнче тăшман çарĕсене аркатса, Хĕвеланăçнелле хăвалама тытăннăранпа тăватă уйăх хушши тăтăшах çапăçусенче пулнă хыççăн, 1942 çулхи апрелĕн юлашки кунĕсенче пирĕн дивизие малти линирен тыла канма илсе тухрĕç». Тĕрех калăпăр, вулама кичемрех. Çак 28 сăмахлă предложени вырăнне икĕ е виçĕ предложени тума, шухăша эмоциллĕрех уçса пама автор пултарнах ĕнтĕ. Тепĕр тĕслĕх: «Машинăсем хăйсен кустăрмисем курăнми пуличченех кĕре-кĕре ларчĕç, лашасем çур хырăм таранах путрĕç, вара пирĕн шĕвĕ кĕсел пек лапра ăшне кĕрсе кайса, машинăсемпе орудисене те («тупăсене» те темелле пулнă пуль), йывăр лавсене те алă вĕççĕн, хамăр вăйпах сĕтĕрсе кăлармалла пулчĕ». Малтанхи предложение те, иккĕмĕш предложение те автор питĕ лăпкăн, пĕр туйăмсăр çырнă. Вулакансем çакăн пек çиелтен, эмоцисĕр çырса кайнинчен совет салтакĕсене Смоленск тăрăхĕнчи шурлăхсемпе тата ялан е çумăр, е юр çуса тăнине пула лапăртанса кайнă çулсемпе пыма мĕнле йывăр пулнине туймасăрах юлаççĕ.

Е тата акă «Ырă кăмăл» калав пуçламăшне илсе пăхар: «...Район центрне эпĕ каç пуласпа тин çитрĕм. Учрежденисем хупăннăччĕ ĕнтĕ, хама кирлĕ çынсене тупма пулмарĕ. Ирччен нимĕн те тăвас çуккине кура, эпĕ колхозник çуртне кайрăм, анчах кунта та ĕç ăнмарĕ манăн—ремонт пырать иккен, урайне çĕнĕрен сараççĕ, кăмакасем тума—кирпĕч, тăм, хăйăр пырса тăкнă. Аçта каяс? Палланă çынсем çукчĕ манăн ку салара... Кăштах шухăшласа тăтăм та, хамăн йăлапа, районти хаçат редакцинелле çул тытрăм». Кичемрех çав çакăн пек чĕлхепе çырнă калава вулама. Ăна кăштах вулатăн та кĕнекене хупса хуратăн.

Шупашкартан килнĕ корреспондент (автор ĕнтĕ) колхоз садовочĕпе, фронтра пĕрле пулнă чăваш салтакĕпе Иван Фомич Фоминпа тĕл пулать.

Автор çак тĕлпулăва акă мĕнле çырса кăтартать: «Кăнтăрла

иртсен пĕр пилĕк сехетре Иван Фомич хуларан килсе ҫитрĕ. Вăл правление кĕрсенех, эпир пĕр-пĕрне палласа илтĕмĕр. Сахал улшăннăччĕ вăл, ҫамки ҫинчи картсем кăна хутшăннă пек туйăнчĕ. Сăнĕ ҫав-ҫавах кăмăллă, йăваш, калаҫăвĕ лăпкă, сăпайлă.

Вăл мана хăй патне илсе кайрĕ...»

Питĕ шупка, вăйсăр, пĕр вĕри туйăмсăр ҫырса кăтартнă автор ҫак икĕ салтак тĕлпулăвне. Вулакансен чунне хăпартлантаракан, вĕсенче ырă туйăм вăратакан, чăннипех те шухăша яракан сăмахсем тупăнмаççĕ.

Чăваш совет писателĕсен съезчĕ чăваш писателĕсемпе поэчĕсем чĕлхе тасалăхĕшĕн ҫителĕклĕ кĕрешменнине палăртса хăварчĕ. Ҫапла калани Л. Агакова та тивет. Ун произведенийĕсен чĕлхинче те кăлтăксем, шăйрăлчăксем—пысăккисем те, пĕчĕккисем те—пур. Ҫакăн ҫинчен, сăмахран, ҫак тĕслĕхсем те лайăх калаççĕ.

«Ҫавăнтах пĕри, вырăсла пĕлекенскер, митинг тума тытăнчĕ» («митинг пуҫларĕ» е «митинг уҫрĕ» тесен тĕрĕсрех пулать пулĕ); «Чиркĕвĕнче вунă ҫул ытла клуб пулнăччĕ пирĕн» (ку предложенирен клубне хăйне чиркĕве кĕртсе лартнă тесе ăнланма пулать, мĕншĕн тесен «клуб» сăмах вăл пĕтĕм ҫурта пĕлтерет, кунта: «Ҫак чиркӳ вунă ҫул хушши клуб пулнăччĕ пирĕн» темелле пек); «...Ҫавăнпа та нимĕн тытăнса тăмасăрах, ҫири тумтирсене, урари ҫăматăсене, алăсенчи алсишсене халех ҫакăнта хывса хурăр» (ку предложенире «ҫири», «урари», «алăсенчи» сăмахсем вырăнсăр, мĕншĕн тесен ҫăматта урана кăна, алсише алла кăна тăхăнаççĕ); «Чиркĕве пухăннипе питĕ тĕрĕс тунă эсир» (кунта «пухăннипе» вырăнне «пухăнса» тенĕ деепричасти вырăнлă пулать); «Вĕсем ҫинче кунĕн-ҫĕрĕн пулеметлă часовойсем тăчĕҫ» («пулеметлă» сăмах вырăнне «пулеметсемпе» кирлĕ); «Совет влаҫĕ вăхăтĕнче кам кăштах активлăрах ҫын пулнă—ҫавсене пурне те тытса хупма тапратрĕҫ» (автор «ҫын» сăмаха вырăнсăр кĕртсе лартнă, мĕншĕн тесен сăмах ҫын ҫинчен пыни унсăрах паллă); «Пĕр вăхăт шăпланнă пек пулнă пăшал сассисем тепĕр хут илтĕнме пуҫларĕҫ. Ҫывăхран ҫывăха килсе пычĕҫ вĕсем...» (мĕнле ăнланмалла-ха «килсе пычĕҫ» тенине, кунта «ҫывхарнăҫемĕн ҫывхарса пычĕҫ» тесен тĕрĕсрех пулать); «Пирĕн тĕлпе иккĕн-виççĕн юланутсемпе тапăртаттарса иртсе кайрĕҫ» («тĕлпе» кунта вырăнлă мар, чăвашсем «пирĕн тĕлтен иртсе кайрĕҫ» теççĕ); «Унтан вара пире Ямуткинпа иксĕмĕре пуҫĕпех тĕлĕнтерсе яни пулчĕ» (кăна вара пĕртте чăвашла каламан); «Ну, ăнать те иккен сан тĕллĕн» (ăнланма хĕн), «...совхозра вăл пысăк хисепре тăнă ҫын пулнă» (чăвашла та мар, вырăсла та мар). Кун пек тĕслĕхсем кĕнекере тăтăшах тĕл пулаççĕ, паллах, вĕсем кĕнеке пахалăхне чакараççĕ.

Писатель сăмахсемпе тĕрĕс усă курмани час-часах вулакансене автор калас тенĕ шухăша йăнăш ăнланасси патне илсе пырать.

Акă, сăмахран:

«...Хамăн куҫпа курман пулсан, хам тӳссе ирттермен пулсан, тупата, ĕненессĕм те ҫук ҫав, мĕншĕн тесен чипер ĕҫлекен ăс-тăнлă этем ҫав тери тискер ĕҫсем тума пултарнине ниепле те йышăнма пултараймасть...» (кунта вулакан «чипер ĕҫлекен ăс-тăнлă этем ҫав тери тискер ĕҫсем тума пултарать» тесе ăнланма пултарать); «1943 ҫулхи ҫулла, Курскпа Белгород тăрăхĕнчи хаяр ҫапăҫусенче аркатнă хыҫҫăн, нимĕҫсен фашистла ҫарĕсем Хĕвеланăҫнелле, Днепр еннелле тарма тапратрĕҫ» (нимĕҫсен фашистла ҫарĕсем хăйсем такама ҫапса аркатнă пек пулса тухнă кунта); «Ҫав типтикĕс улăхра паян лашасене чуптармалли ипподром тунă». Ҫак предложение икĕ тĕрлĕ ăнланма пулать: е ипподромне паян тунă е лашасене паян тупăштараççĕ, автор лашасене хальхи вăхăтра тупăштарасси ҫинчен каласшăн пулнă пулмалла, анчах вулакан ҫак шухăша тĕрĕс мар ăнланма пултарать. «Юпасем хушшипе чупмалли ҫул ҫине йăм-хура икĕ лаша ухă йĕпписем пек ыткăнса тухрĕҫ...» (каллех икĕ тĕрлĕ ăнланма пулать: те лашасем чупмалли ҫул ҫине юпасем хушшипе чупса тухаççĕ, те чупмалли ҫулĕ юпасем хушшипе пырать—ăнланма хĕн).

Кĕнекере ăнланма йывăр вăрăм предложенисем тĕл пулаççĕ, тенĕччĕ эпир. Кăна ҫирĕплетсе парас тесе, ик-виçĕ тĕслĕх илсе пăхар.

«Райисполком председателĕ хăш колхоз лаши мĕнле чупни, финиша миҫе минутра ҫитни ҫинчен, «Ҫутă ҫул» лашисем иккĕшĕ те чи пысăк призсем илме тивĕҫлĕ пулни ҫинчен пĕлтерсен, эпир Иван Васильевичпа иксĕмĕр, пĕтĕм халăхпа пĕрле улăхран хăпартăмăр та, ялхуҫалăх пайне кĕрсе тухнă хыҫҫăн, апатланас тесе, чайная кайрăмăр». Ҫак предложени темиҫе шухăша пĕлтерет, унта пурĕ 42 сăмах, ăна вулама та, ăнланма та хĕн, паллах, автор ҫакăнта каланă шухăшĕсене темиҫе кĕске предложенине ăнланмалларах, уҫăмлăрах, эмоциллĕрех пĕлтерме пултарнă.

«Ҫаксене итлесе, тĕлĕннипе хытнă пек пулса, тарăхнипе шăлсене ҫыртса лартнă вăхăтра пирĕн пата хайхи Кузька Битый—староста—пырса кĕчĕ». Кунта—пĕр-пĕринпе ҫыхăнса тăман сăмахсен ушкăнĕ.

Автор предложенисене ҫакăн пек вăрăм туни вăл писателĕн чĕлхи пуян та «шыв пек юхакан» яка чĕлхе пулнине кăтартмасть-ха, пĕтĕмпех урăхла, писатель чĕлхе культуришĕн ҫителĕксĕр кĕрешнине, вулакансене ăнланмалларах ҫырма тăрăшманнине ҫеç кăтартать.

«Хаклă ывăлăм Алешенька! Паян сан ҫырăва илтĕм те, эс чĕррине пĕлсен тӳсеймесĕр, макăрса ятăм. Мĕн тери пысăк савăнăҫ пулчĕ ку маншăн!»

«Эпĕ сăнӳкерчĕкĕ ҫине чылайччен тинкерсе пăхса тăтăм. Ҫав тери кăмăла каймалласкер вăл»...

«Чунăм Алеша! Сан ҫыруна илсен, эпĕ мĕн тери савăннине нимĕнле сăмахпа та каласа параймастăп».

«Ҫав тери ырă хĕр пулнă иккен вăл санăн,—терĕм эпĕ».

«Пирĕн артиллери ку хушăра хăйĕн ĕҫне питĕ аван тăвать, снарядсем тăшман окопĕсене сирпĕтеççĕ кăна».

Кун пек тĕслĕхсем ытти калавсенче те пур, ҫак «ҫав тери», «мĕн тери», «питĕ», «питех те», «питĕ лайăх» сăмахсем кашни йĕркере тенĕ пекех тĕл пулнипе хăлхана йĕрĕнтерсе ҫитереççĕ. Паллах, эпир кунпа ҫак сăмахсем литература чĕлхине кĕмен, пĕр-пĕр диалектра кăна тĕл пулакан сăмахсем тесшĕн мар. Вĕсем чăваш чĕлхинчи илемлĕ сăмахсем, анчах та вĕсемпе пĕр вĕҫĕмсĕр усă курсан, вĕсене унталла та кунталла турткаласан, вĕсен илемĕ ҫухалать.

Литературăри ăсталăх шутне композици тума пĕлни те кĕрет. Л. Агаков композици тума пĕлмест тесшĕн мар эпир. Писателĕн кашни произведенийĕнче тенĕ пекех событисем пĕр-пĕринпе тачă ҫыхăнса тăраççĕ, вĕсенчен пĕрне те ҫак пĕр шухăшлă кĕнекерен кăларма май ҫук, ахаллĕн пĕтĕм произведенин тĕшĕ ҫухалать. Писатель уҫса кăтартакан кашни событи тенĕ пекех произведенири тĕп шухăша, персонажсен сăнарне, характерне уҫса пама пулăшать. Произведенири пĕр-пĕр событие кăларса пăрахсан, персонажсен сăнарĕ вăйсăрланать, шупкалать. «Старик» калавах илер. Унта ҫакăн пек вырăн пур: Просветов учителе нимĕҫ комендантчĕ, хăй патне чĕнтерсе, хăйсен писарĕ пулма ӳкĕтлет, терĕмĕр. Просветов хăйне вĕлерессипе хăратнине те пăхмасть: фашистсен писарĕ пулма килĕшмест вăл. Автор ҫак событие калава кĕртмен пулсан, вулакансем Просветов учитель Тăван ҫĕршыва мĕнле хăватпа юратнине ҫителĕклĕ туйман пулĕччĕҫ. Калаври кашни событи Просветован тата ытти совет ҫыннисен сăнарне уҫса пама кирлĕ.

Анчах кунта, композици тăвас ĕҫре, Л. Агаковăн пысăк ҫитменлĕх пур. Ҫав ҫитменлĕх—калава пĕр пекрех калăплă туни, урăхла каласан, калавăн композицийĕ штампла пулса пыни. Автор событисене хăйĕнчен мар, калаври пĕр-пĕр герой сăмахĕсемпе асаилӳсем урлă каласа парать.

«Старик» калавра совет салтакĕсем фашистсенчен хăтарнă Вишни ялне пырса кĕреççĕ, хăйсем тăшман тылĕнче мĕнле пурăнни ҫинчен, фашистсен тискертен те тискер ĕҫĕсем ҫинчен вĕсене ялти ватă учитель Просветов каласа парать. Вăл каласа пани совет салтакĕсене тăшмана татах та ытларах курайми тăвать, вĕсене хирĕҫ хаяррăн кĕрешме хавхалантарать.

«Хĕр юрри» калавра нимĕҫ фашисчĕсем ҫавăрса илнĕ ялта пулса иртнĕ асран кайми пĕр ĕҫ ҫинчен хăйĕн юлташĕсене совет офицерĕ каласа парать.

«Амăшĕн сăмахĕ» калавра хăйсем нимĕҫ фашисчĕсен тылĕнче нихҫан курман хурлăх тӳссе пурăнни ҫинчен совет салтакĕсене вилĕмрен ăнсăртран ҫăлăнса юлнă ватă хĕрарăм каласа парать.

«Этем телейĕ» калавра колхозри конюхăн Антип Петровичăн пурнăҫĕ ҫинчен пĕр корреспондента «Ҫутă ҫул» колхоз председателĕ Иван Васильевич Машкин каласа парать.

«Ырă кăмăл» калавра хуларан килнĕ корреспондент колхоз садоводне Иван Фомич Фомина тĕл пулсан, хăй унпа фронтра тĕл пулни ҫинчен аса илет, ҫак асаилӳ вара калавăн ҫуррине яхăн йышăнать.

Калаври событисене автора унти пĕр-пĕр персонаж асаилӳсем урлă каласа пани килĕшӳсĕр тесшĕн мар эпир. Ҫапах та литературăра ҫак меслетпе ытлашши усă курма юрамасть. Ҫакăн пек меслет вулакансене йăлăхтарса ҫитерме пултарать, тепĕр енчен, калаври геройсен сăнарĕсене, унти событисене шупкалатать, тĕксĕмлетет.

Композици ҫинчен сăмах тапратрăмăр пулсан, тата акă мĕн пирки чарăнса тăмалла: илемлĕ литературăн кирек мĕнле произведенийĕнче те композицин ҫак пайĕсем: экспозици, завязка, кульминаци, развязка пулмалла. Анчах та Л. Агаковăн нумай калавĕсенче, ытларах Аслă Отечественнăй вăрҫă хыҫҫăнхи тапхăрта ҫырнă калавсенче, вĕсене тупма хĕн. Сăмахран, «Ырă кăмăл» калавра ăҫта-ха кульминаци? Калама хĕн. Мĕншĕн тесен автор калава малтан пуҫласа вĕҫне ҫитиех пĕр-пĕр журналист хăй курса ҫӳренисем ҫинчен ҫырнă асаилӳсем пек лăпкăн ҫырса кайнă, калаври событисене ҫителĕклĕ типизацилемен.

Пирĕн писательсем, ҫав шутрах Л. Агаков та, тăван чĕлхен грамматикине, орфографине пăхăнманни вулакансене кӳрентерет. «Ырă кăмăллă ҫынсем» кĕнеке ку енчен питĕ кăтартуллă тĕслĕх. Автор та, Г. Петровпа Г. Филиппов корректорсем те чăваш чĕлхин орфографине, пунктуацине асăрхамаççĕ, чарăну паллисене тĕрĕс лартманни хушăран автор шухăшне пăсса урăхлатать е ăнланма йывăрлатать. Подлежащие сказуемăйран запятойпа уйăрни кĕнекере тулли. Ку та вырăнсăр.

Эпир ҫак статьяра Л. Агаковăн «Ырă кăмăллă ҫынсем» кĕнекине кĕскен пăхса тухрăмăр, ҫапах та кашни калав пирки чарăнса тăраймарăмăр. Хамăр каланине пĕтĕмлетсе, эпир ҫапла каласшăн: Л. Агаковăн Аслă Отечественнăй вăрҫă хыҫҫăнхи тапхăрта ҫырнă произведенийĕсем («Этем телейĕ», «Ырă кăмăл»...) литературăра малалла ярса пуснă пысăк утăм теейместпĕр-ха, вĕсем совет ҫыннисен вĕресе тăракан пурнăҫне вулакансем ĕмĕтленнĕ пек кăтартаймаççĕ-ха. Вăрҫă иртнĕ хыҫҫăн писатель совет ҫыннисен паттăрла ĕҫĕсене, Аслă Отечественнăй вăрҫă фронтĕнче ирсĕр тăшмана хирĕҫ арăслан пек кĕрешнĕ совет патриотĕсен паян, мирлĕ тапхăрта, пурнăҫа чечеклентерес, Тăван ҫĕршыва малтанхинчен те хăватлăрах тăвас тесе вăйĕсене шеллемесĕр ĕҫленине туллин, ĕнентермелле, пысăк ăсталăхпа сăнласа паракан произведени пичетлесе кăлармарĕ-ха.

Пирĕн вулакансем пĕр произведенисем темиҫе хут пичетленипе ҫырлахмаççĕ, ҫĕнĕ произведенисем ыйтаççĕ. Совет ҫыннисен коммунизм строительствинчи паттăрла ĕҫĕсем ҫинчен каласа паракан лайăх произведенисем кĕтеççĕ. Л. Агаков ҫавăн пек произведенисем ҫырма пултарать, ҫырмалла та!

**А. ГОРШКОВ.**




*Юмах*

Пулăç ХĚЛИПĚ

Çерем çинче кайăк-кěшěк уçăлса çӳрет. Шап-шурă чăхсем, нарт-нарт кăвакалсем, кукăр мăйлă та мăнаçлă хурсем. Вěсем хушшинчех хăлтăрти кăрккасем те пур. Питě йышлă кайăк-кěшěк, питě йышлă. Кавир пек ешěл çерем чечекпе витěннě, тейěн,—пěтěмпех шапшурă та чăпар. Кайăксем уçăлса çӳреççě тени тěрěсех те мар, вěсем пурте хěрсех ěçлеççě: чăхсем хурт-кăпшанкă пухаççě, хурсемпе кăвакалсем курăк татаççě. Халлěхе автанěсем те авăтмаççě, кăрккисем те хăлтăртатмаççě. Пурте ěçленě вăхăтра епле юрлăн, епле ятлаçса çӳрěн?

Колхоз кайăк-кěшěкне хураллама Кирле карчăкне хушнă. Анчах вăл ларнă çěртех тěлěрсе илме юрататъ. «Кăтăш пулса илем-ха»,—тет вара вăл кун пек чух. Кăтăш çеç мар, çывăрсах та каять. Вара ăна, пěр çывăрса кайсан, хăлхи тěлěнче параппан çапсан та вăратаймăн.

Паян та акă кунě ăшă. Çилě çурăмран ачашшăн киле-киле лăпкать. Питě ырă. Кирле карчăкě ватăлса тěссěрленнě куçěпе сенкер пěлěтелле пăхкаларě те:

— Хурчка тавраш курăнмасть, кăшт кăтăш пулса илем-ха,—терě.

Вара... çавăнтах сăмсипе шăхлич калама тытăнчě: «ши-ши-ши... хурчка килě-ши, килмě-ши?!»

Хурчка хайхи, карчăк çывăрса каясса кěтнě пекех, таçтан вěçсе килчě те кайăк-кěшěк тěлěнче явăна пуçларě. Ăна чи малтан Чăпар киккирик ятлă автан асăрхарě:

— Кирле карчăкě! Кирле карчăкě!— терě вăл, хăрушă самант çитсе килнине систерсе.—Кăт-кăтик! Кăтăшах пултăн-и? Кирле карчăкě!

Карчăк хăнк та тумарě. Сăмсипе хыттăнрах кăна шăхăрта пуçларě: «шиши, хурчка-ши, хурчка мар-ши?»

Çакна кура чăхсем те, Кирле карчăкě тавра пухăнса, хыттăнах кăтиклеме тытăнчěç:

— Кăт-кăтик! Кăт-кăтик! Кăткă, кăткă, кăткă кěтěр сăмсуна. Кирле карчăкě! Кирле карчăкě! Кăткă кěтěр сăмсуна! Кăткă! Кăткă! Кăткă!

Çук, карчăк хăнк та тумасть, шăхăртать кăна сăмсипе: «Хурчка-ши? Тытě-ши? Тытмě-ши? Ши-ши...»

Çакна кура Кăлтăркай ятлă кăркка аçи те тӳсеймерě. Питě тарăхнипе унăн пěсехи малтан юн тапса тухас пек хěрелсе кайрě, унтан аслатиллě çумăр пěлěчě пек кăвакарчě:

— Ха! Хăлтăркка карчăк! Капла ял култăр-и? Ара, култăр-култăр-култăр! Култăр-култăр-култăр!

Çук, Кирле карчăкě хăнк та тумасть, çаплипех шăхăртать сăмсипе: «Кулě-ши, кулмě-ши? Ши-ши-ши-ши...»

Ăçтан чăтан ку мăшкăла! Хурчка çаплах явăнать. Тутлăрах тупăш шырать пулас... Акă мăнтăр кăвакалсем те шуйханса кайрěç.

— Нарт-нарт,—терěç вěсем харăссăн,—вăран, карчăк, вăрт-варт! Сăмсу çине карт-карт. Пире хӳтте тарт, тарт! Ещěк айне ларт, ларт!

Çук, нимěн те илтмест Кирле карчăкě. «Тартăп-ши, тартмăп-ши? Лартăп-ши, лартмăп-ши?»—тесе çеç шăхăрать ун сăмси.

Çак вăхăтра хурчка тӳперен çěмрен пек вăркăнса анчě те пěр чăх чěппине çаклатса кайрě.

— Хурах! Хура-ах!—кăшкăрма тытăнчěç хурсем.—Ки-ка-ак! Çаратаççě ника-ак!

Халě ěнтě мěнпур кайăк-кěшěк çуйăхать. «Кăткă! Кăткă! Кăткă сăхтăр сăмсуна!» теççě чăхсемпе автансем. «Култăр! Култăр! Ял култăр!» теççě хайхи кăрккасем те. «Тарт! Ещěке ларт! Шар ан кăтарт!» теççě кăвакалсем. «Ки-ка-ак! Çаратаççě ника-ак!» теççě хурěсем.

Анчах Кирле карчăкě пурпěрех вăранмасть. Темле ырă тěлěк курать пулас: пěркеленнě пичě йăл кулса илет.

Кайăк-кěшěк хушшинче хайне пысăк ученăй тесе шутлакан Никон ятлă хур аçи çак шăв-шава аякран пăхса тăчě-тăчě те Кирле карчăкě патнелле мăнаçлăн утса пычě:

— Ка-ак? Эс çаплах çывăратăн никак?—тесе ыйтрě вăл хулăн сасăпа.— Как так?

Унтан карчăкăн шăхлич пек шăхăракан сăмсинчен пěрех сăхса илчě.

— Акă! Ак!—терě кăна вăл.

Карчăк çавăнтах сиксе тăрса ларчě. Маттур хур аçи! Ахальтен мар вăл хайне вěреннě кайăк тесе шутлать. «Ка-ак? Кěçех кандидат пулатăп ак!»—текелет вăл час-часах.

Паллах, хуртан нимěнле кандидат та пулаймě. Вăл кăлăхах каппайланать— ăсě çуккипе. Анчах Кирле карчăкě, çак юмаха вуласан, ăслăрах пулě, хуралта тăнă чухне текех çывăрса каймě.

---

## УРАМ Е КУПĂСТА ЙĂРАНĚ?

Г. Харлампьев ӳкерчěкě.

Шупашкар хула Совечě харпăр хăй валли çурт тăвакансене сахал пулăшать. Çавна пулах хула тулашěнчи улăхсенче пěр плансăрах çурт-йěр лартакансем нумай.

(Сыpусенчен).




— Мěн ку? Планпа пирěн кунта купăста йăранěсем пулмаллаччě.

— Ху куран, ара, пирěнсěрех çěнě урам ӳссе ларнă кунта.

# ЧĔЛĔМ КАВĔРЛИ КАЛАВĔСЕНЧЕН

## ПĔР КАШĂК ТИКĔТ

Пĕр кашăк тикĕт пĕр пичке пыла пăсать, тенĕ ваттисем. Эпĕ хам та çамрăк çын мар—кăçал утмăл тултартăм, пенси илетĕп. Хурапа шурра куркаланă пурнăçра, виçĕ вăрçăра пулнă, таçти çĕршывсене те çитсе курнă... Анчах хальхинче эпĕ хам Çĕмĕрлерен Шупашкара мĕнле килни çинчен çеç каласа кăтартас, тетĕп.

Тӳрех калас пулать, Çĕмĕрлерен эпĕ поезд çине ларса килтĕм. Вагонĕ вара акăш-макăш чаплă: кашни тăвата çынна пĕр купе, ăçта пăхнă унта куçкĕски йăлтăртатса тăрать. Проводникĕ те ырă çын — вăл кирлĕ мар-и, ку кирлĕ мар-и, тесе çеç пырать, вĕçĕмсĕр вĕри чей ĕçтерет. Ман хăраххăм, вăтă салтак иккен хăй.

Сăмах хыççăн сăмах — эпĕ те ăна хам Шупашкарти кĕçĕн ывăлпа кинĕм патне хăнана кайнине пĕлтертĕм. Ара, ывăлăм манăн техник вĕт — çĕнĕ çуртсем тунă çĕрте ĕçлет, кинĕ — бухгалтер, финанс пайĕнче аслă контролерта тăрать. Ачисем те пур—шкула çӳреççĕ. Мана тахçанах хăнана чĕнеççĕ.

Эпĕ çапла турăм: Çĕмĕрлерен хăçан тухассине пĕлтерсе, Шупашкарти ывăлăмпа кинĕм патне пĕр кун малтан телеграмма çаптартăм. Поезд Шупашкар станцине çитесре, пуринчен малтан тамбур çине тухса, проводникпа юнашар тăтăм, вокзал умне пухăннă халăх хушшинче хамăн ачамсене асăрхасшăн пултăм.

Поезд чарăнчĕ, пассажирсем кĕшĕлтетсе вокзал умĕнчи автобус патне васкарĕç, эпĕ перрон çинче пĕр-пĕччен тăрса юлтăм. Пĕлĕш проводник ман çине хĕрхенсе пăхрĕ те пуçне сулласа илчĕ:

— Ывăлу хирĕç те тухмарĕ-и?

— Тем амак пулнă,—тетĕп ăна.—Ывăл ĕçре пулсан, кинĕм килмеллеччĕ, çитменнине паян—вырсарникун...

— Е, ан кулян,—ман хута кĕчĕ проводник.—Кӳр чăматанна, такси çине лартса ярам. Вăл сана часах ывăлу патне илсе çитерĕ. Адрĕсне пĕлетĕн пулĕ вĕт?

Чăнах та, такси самантрах ывăл хваттерне илсе çитерчĕ. Эпĕ хамăн багажа йăтрăм та, пăравус пек хашлатса, виççĕмĕш хута хăпартăм. 19-мĕш хваттер. Алăк çине манăн ывăл ятне çырса çапнă. Звонок та пур. «Килте-ши, килте мар-ши?»—тетĕп хам ăшра. Кнопка çине пусатăп та шалта шăнкăртатнине илтетĕп. Акă, мана алăкне те уçаççĕ. Умра — кинĕм тăра парать. Вăл тĕлĕннипе икĕ аллине шарт çапрĕ. Кĕтмен иккен. Кинĕм сассине илтсе, коридора мăнуксем чупса тухрĕç. «Асатте килнĕ!»—тесе кăшкăрашма тытăнчĕç. Тепĕр пӳлĕмрен аллине хаçат тытнă ывăл та тухрĕ. Çемйипех килте иккен.

— Эсĕ мĕншĕн пĕлтермерĕн? Хирĕç тухнă пулăттăмăр. Пĕччен кансĕр пулчĕ пуль?—тесе ман куçран пăхаççĕ чĕппĕмсем.

Эпĕ телеграф айăпне туйса илтĕм те — чĕнместĕп-ха. Карчăк мĕн калама хушнине пĕлтертĕм, хам мĕнле лайăх вагонра ларса килнине каласа кăтартрăм. Ну, сывлăхсем çинчен ыйткаларăм, кун пек чух паллă ĕнтĕ—кинĕм кукăль туртса кăларчĕ, чей вĕретрĕ, ывăлăм магазина кайса килчĕ, мăнуксем хăйсен картинкăллă кĕнекисемпе теттисене кăтартма тытăнчĕç. Асли—Гера ятли, вунпĕр тултарнăскер, картинăсем тума ăста иккен. Унăн альбомĕ çинче вăрман та кашлать, самолет та кĕрлет, машинăсем те çӳреççĕ, çĕнĕ çуртсем те пур... Пурте мана тараватă, пурте савăннă, пурте мана хăналаççĕ. Ывăл хăй ĕçлекен комбинатри çĕнĕ цехсемпе çуртйĕрсем çинчен каласа кăтартрĕ, 1000 тенкĕ премие илни çинчен те пĕлтерчĕ, кине, тăрăшса ĕçленĕшĕн, медаль панă иккен. Мăнуксем те сывлăхлă... Тăванпа тăван тĕл пулнине мĕн çиттĕр, ĕнтĕ!.. Малтанах эпĕ хамăн телеграмма çухалнишĕн Шупашкарти çыхăну кантурĕнче ĕçлекенсене çиленнĕччĕ те, кинĕмпе ывăлăм çемйинчи савăнăçа курсан, кăмăлăм сар çу пек ирĕлсе кайрĕ...

Çĕмĕрлере çаптарнă телеграмма çинчен эпĕ, тен, аса та илес çукчĕ, тепĕр кунне кинпе ывăлăм ĕçе кайсан, пĕр 10 сехетре пулĕ, почтальон килсе кĕчĕ.

— Телеграмма!—терĕ вăл.—Алă пусăр...

Эпĕ хайхи: хамăн телеграммăна илтĕм, тесе алă пусрăм та сăран сумка çакнă хĕртен çапла ыйтрăм:

— Ку телеграммăна сирĕн виçĕмкунах çитермелле пулнă, мĕншĕн кӳрсе памарăр?

— Виçĕмкун эпĕ кунта каçхине 9 сехетре пултăм, килте никам та çукчĕ!

— Апла пулсан, ĕнер мĕншĕн килмерĕр?

— Ĕнер те питĕрсе кайнăччĕ!..

Сăран сумкăллă хĕр куçкĕретех суять: ĕнер эпир çемйипех килте лартăмăр.

Шупашкарти çыхăну кантурĕнче тӳре кăмăлпа ĕçлекен почтальонсем те, телеграфистсем те, монтерсем те, телефонисткăсем те нумай пулĕ, вĕсем хаçатсемпе журналсене те, çырусемпе телеграммăсене те вăхăтра çитереççĕ пулĕ, анчах ман телеграммăна çакă хĕр хăйĕн сумкинче талăк ытла çӳретни малтан каланă пĕр кашăк тикĕте аса илтерчĕ.

Революциччен Шупашкар мĕнле пулнине эпĕ пĕлетĕп. Çирĕм сул каярах, çумăр çусан, хула витĕр тухма çукчĕ—пылчăк ăшне путса ларма пулатчĕ. Паянхи Шупашкар—пĕтĕм чуна савăнтарать! Ăçта пăхнă — унта çĕнĕ çурт, çĕнĕ институт, çĕнĕ завод, çĕнĕ магазин, çĕнĕ гараж, çĕнĕ клуб тăваççĕ.

Савăнпа та тулли кăмăла кӳрентерекен тикĕтлĕ кашăк çинчен асăнас та килмест. Анчах ăна асăнтаракансем хулара тăтăшах тĕл пулаççĕ. Акă, ялхуçалăх институчĕн çуртне тунă çĕрте эпĕ пĕлтĕр хывнă стенана кăçал лумпа чышса шăтарнине куртăм.

— Мĕншĕн вататăр?—тесе ыйтрăм эпĕ рабочисенчен.

— Эсĕ, мучи, мĕнрен тĕлĕнетĕн? Е халиччен Шупашкарта пулман-и?—тесе ыйтрĕ манран пĕри.

— Шупашкарĕнче эпĕ ĕлĕкрех пулкаланă та, анчах çĕнĕ çурта сӳтнине курманчĕ.

— Ку мĕн! Кунта пĕр алăклăх çеç шăтармалла. Пир-авăр комбинатне тунă çĕрте вара хатĕр цехсенех тепĕр тĕрлĕ тăваттăмăр!..

Каçхине кун пирки ывăлран тĕплĕрех ыйтса пĕлес-ха. Вăл техник-строитель вĕт, тен, унăн та айăпĕ пур?..

---

Çĕмĕрле станцинче «Союзпечать» уполномоченнăйĕн хаçатсемпе кĕнекесем сутмалли киоскĕ пур. Анчах поздсем килнĕ вăхăтра киоск час-часах хупă пулать.

(Пассажир çырăвĕнчен)




— Çĕмĕрлере пултăр-и?
— Пултăмăр, пултăмăр!
— Хаçат киоскĕ куртăр-и?
— Пысăк çара куртăмăр...



— Час хĕлле пулать пулĕ?
— Мĕншĕн апла шутлатăн?
— Пирĕн çурта юсама тытăнчĕç...

ЯЛАВ № 9 (105)
СЕНТЯБРЬ — 1954

ЕЖЕМЕСЯЧНЫЙ ЛИТЕРАТУРНО-ХУДОЖЕСТВЕННЫЙ И ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКИЙ ЖУРНАЛ СОЮЗА СОВЕТСКИХ ПИСАТЕЛЕЙ ЧУВАШИИ
ИЗДАТЕЛЬ: ЧУВАШСКОЕ ГОСУДАРСТВЕННОЕ ИЗДАТЕЛЬСТВО.

Редколлегия: М. Романов (отв. редактор), В. Алагер, А. Артемьев, В. Долгов, И. Тукташ, Я. Ухсай, С. Шавлы.

*Рукописи не возвращаются.* Тех. оформление **И. Григорьева.**

НТ 00366. Подписано к печати 17/IX-54 г. Объем 5,165 п. л. Заказ 2255. Тираж 4700 экз. Цена 2 руб.

Адрес редакции и издательства: Чувашская АССР, г. Чебоксары, ул. Володарского 5, Дом печати. Телеф. № 8—36.

Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР.



«ЙЫВАР ЗАДАЧА»
В. Исаев фотоэтюче.



Каникул пĕтрĕ. Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланать. Тамбоври Суворов училищинче вĕренекен Николай Богомазов Шупашкарти тусĕсемпе сывпуллашать.

П. Матюхин фотоӳкерчĕкĕ.

Хакĕ
2 тенкĕ